К 65.63Ч
П80
Ч-44051

Валериан
ПРОКОПЬЕВ



# ВĂРĂМПУÇĔНЧИ ÇĔР ĂСТИСЕМ

Национальная библиотека ЧР
4-044051

К65.632
П80

Валериан
ПРОКОПЬЕВ

# ВĂРĂМПУÇĔНЧИ ÇĔР ĂСТИСЕМ

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

Шупашкар
2011

65.9(2Рос.Чув)321.81(5Кан)<Путь Ленина>
К65.632,180.92(5Кан)<Путь Ленина>

УДК 631.1
ББК 65.321.8
П 80

Кĕнекере Канаш районĕнчи «Путь Ленина» колхоз историйĕпе, председательте 20 çул ытла ĕçленĕ Чăваш АССР тава тивĕçлĕ агрономĕн В.Н.Платоновăн тата унăн мăшăрĕн 30 çул бригадирта вăй хунă Социализмла Ĕç Геройĕн М.З.Зиновьеван кунĕ-çулĕпе аса илӳсем, çуллен çырса пынисем, документсем, район тата республика хаçачĕсенче пичетленнĕ материалсем тăрăх тĕплĕн паллаштарнă.

И-44051

© В.П. Прокопьев, 2011
© ТМ «Ремис», 2011

...НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

I

Вăрăмпуç ялĕ питĕ хитре те илемлĕ вырăнта - Комсомольски, Йĕпреç тата Канаш районĕсем чикĕленнĕ çĕрте вырнаçнă: йĕри-тавра вăрман, улăх-çаран, уй-хир, ĕмĕрхи çăлкуçсем пиншер çул тапса тăнипе Вăрăм юханшывĕ малалла ыткăнать. Ялти шур сухалсем аса илнĕ тăрăх, тахçан авалах Апаш тăрăхĕнчи çынсем Кивĕ Шелттем ялне никĕсленĕ, кайрантарахпа хăшĕсем Хачăм таврашне çăлкуçсем тапса тăракан вырăна куçса тĕпленнĕ. Пĕрин лаççинчен шыв тапса тухсан кивĕ масар пулнă вырăналла куçса хăпарнă, кунта та килĕшменрен вăрман çумнех килсе ларнă. Çапла вара Вăрăмпуç ялĕ Хаяр Иван патша вăхăтĕнче Вăрăм юханшывăн сулахай енче пуçланса кайнă.

Вăрăмпуçăн малтанхи вырăсла ячĕсем: Новый Урюм при речке Уруме, Новая Урюмы, Верхний Урюм, Новый Урюм. Патшалăх службинче тăнă чăвашсем тĕпленнĕ çакăнта, 1724-1866 çулсенче вĕсем патшалăх хресченĕсем шутланнă. Çĕр ĕçĕпе пурăннă, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетнĕ, çăпата тунă, хурт-хăмăр йышлă тытнă. XIX ĕмĕрĕн 2-мĕш çурринче виçĕ шыв арманĕ кунĕн-çĕрĕн тырă авăртнă, çил арманне те тытнă. Тимĕрçĕ лаççи ĕçленĕ, эрех лавккипе хупах пулнă.

1671-1794 çулсенче Вăрăмпуç Ногай тата Сĕве уесĕсене кĕнĕ, 1794-1838 çулсенче Çĕрпӳ уесĕнчи Сиккасси вулăсне, 1839-1859 çулсенче – Тĕмер, 1859-1918 çулсенче Кивĕ Терпĕт вулăсĕнче, 1918-1927 çулсенче Сиккасси вулăсĕнче пулнă. 1927 çулта районсем йĕркелесен Канаш районне кĕнĕ. Çырав (перепись) докуменчĕсем çирĕплетнĕ тăрăх, 1646 çулта 3 хуçалăх пулнă, 1721 çулта 129 арçын пурăннă, 1795 çулта 43 хуçалăха çитнĕ, 106 арçынпа 76 хĕрарăм шутланнă, 1858 çулта 40 хуçалăх юлнă, вĕсенче 200 арçын тата 187 хĕрарăм пурăннă, 1897 çулта арçынсен шучĕ 395 çынна, хĕрарăмсен шучĕ 364 çынна çитнĕ, 1926 çулта 100 килте 500 арçынпа 506 хĕрарăм шутланнă, 1939 çулта арçынсем 575, хĕрарăмсем 671 çынна çитнĕ; 1979 çулта Вăрăмпуçĕнче 526 арçынпа 630 хĕрарăм пурăннă. 2002 çулта хуçалăхсен шучĕ 282 киле çитнĕ, вĕсенче мĕнпурĕ 818

çын пурăннă, çав шутра 403 арçынпа 415 хĕрарăм.

Чи малтанхи хутла пĕлнĕ çынсем хушшинче Степан Анисимович Анисимов, Роман Афанасьевич Афанасьев, Евстафий Емельянович Емельянов, Василий Александрович Александров, Леонтий Егорович Воронцов пулнă. Чи малтанхи шкул 1896 çулта Маркка Алексеев килĕнче уçăлнă, унта пилĕк ача 4 çул вĕренсе пĕтернĕ: Александр Степанов, Петр Степанов, Захар Васильев, Семен Герасимов, Семен Демьянов. Шкула тытса тăма земство çулталăкра 60 тенкĕ, община 15 тенкĕ уйăрнă. Учительте Захар Васильевич Васильев, Григорий Иванович Иванов, Иван Васильевич Зайцев, Иван Афанасьевич Рябчиков, Василий Алексеевич Алексеев ĕçленĕ. 1919 çулта 1-мĕш ступенлĕ шкул ĕçлеме пуçланă.

Чăваш Республики 10 çул тултарнă чух 1930 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче çĕнĕ шкулăн никĕсне хывнă. Çав çулхи сентябрĕн 21-мĕшĕнче Алексей Евлампьевич Евлапьев, Григорий тата Александр Васильевич Захаров, Сергей Кузьмич Кузьмин учительсем вĕрентме пуçланă.

Вăтăрмĕш çулсенче Вăрăмпуçĕнчи шкулта С.К.Кузьмин, Г.А.Алексеев, В.М.Изюмов, Я.И.Эрвуль учительсем уйрăмах лайăх ĕçленĕ. 7 класлă пĕлӳ илме кунта Вăтапуç, Кайăкъяль, Сив Çырма, Кивĕ Шелттем, Çĕнĕ Шелттем тата ытти ялсенчи ачасем çӳренĕ.

Григорий Антонович Смирнов директор чухне шкул çуртне тĕпрен юсанă, кунта вăл 10 çул вăй хунă. Пилĕк класлă кирпĕч çурта Илья Никитич Никитин директорта ĕçленĕ вăхăтра туса лартнă, шăп çав çулсенче вĕренекенсен йышĕ чылай ӳснĕ. Василий Павлович Колпаков 1969-1980 çулсенче кунта директорта вăй хунă, çав тапхăрта учительсем валли икĕ çурт хута янă, шкула шывпа ăшăтмалла тунă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине унтан вĕренсе тухнă 302 çын хутшăннă, нумайăшĕ çапăçу хирĕнчен таврăнайман.

Шкул кунта нумай çулсем хушши ырми-канми вăй хунă учительсене асра тытать, вĕсем – Григорий Алексеевич Алексеев, Сергей Кузьмич Кузьмин, Александр Иванович Гришин, Алексей Евлапьевич Евлампьев, Варсонофий

Семенович Семенов, Иван Иванович Иванов, Феодосия Никитична Гришина, Калерия Федоровна Антонова, Федор Кириллович Мокшин, Алексей Петрович Тихонов тата ыттисем те. Ĕмĕрĕпех шкулта Полина Абрамовна Евлампьева, Нина Герасимовна Куракова, Ольга Ивановна Семенова, Александра Марковна Степанова, Виталий Егорович Степанов, Зинаида Алексеевна Зайцева, Римма Филипповна Кудрявцева, Мария Александровна Никонова, Галина Васильевна Зайкова, Яков Алексеевич Моисеев, Нина Леонтьевна Осипова, Валентина Васильевна Нямукова, Мира Варсонофьевна Иванова тăрăшнă.

1930 çулхи апрелĕн 24-мĕшĕнче Вăрăмпуçĕнче ял çыннисен пухăвĕ пуçтарăннă та «Ясное поле» пĕрлешÿллĕ хуçалăх йĕркеленĕ. Колхоза чи малтан Илья Соловьев, Николай Русаков, Василий Алексеев, Лев Половиков, Иван Скворцов, Иван Евгеньев, Николай Шмакин, Алексей Степанов, Анна Арсентьева, Евстроней Емельянов, Сергей Сулипов, Митрофан Сулипов, Григорий Никонов çырăннă, 1932 çултанпа вăл «Новый путь», 1935 çултанпа «Коминтерн» ятпа тăнă. Çуркунне тырă акма тухас умĕн колхоз валли çĕр уйăрма чухăнсен ял масарĕ çумĕнчи анисене палăртнă. Мишавай килсен Николай Михайлов ертсе пынипе чухăнсен çакна хирĕç тухмалла пулнă. Анчах та ял Совет ĕçтăвкомĕн председателĕ Илья Соловьев икĕ çынна юланутпа Канаша чуптарнă. Унтан часах пулăшакан çынсем килсе çитнĕ: пуянсем те, чухăнсем те хирĕç тăрайман. Çапла вара колхоз валли 14 гектар çĕр касса илнĕ. Пĕрлешÿллĕ хуçалăхра 11 лаша пулнă, 1931 çулта лашапа ĕçлекен 11 ретлĕ «Коммунар» сеялка туяннă, кĕркунне ыраша çав сеялкăпа Осип Даниловпа Николай Мардарьев акса хăварнă. 1932 çулта колхоза кĕнисем 60 кил шутланнă. Малтанхи вăхăтра ĕçе тухнисене патак çине палăртса шутланă. Çавна шута илсе тырра пăтавккапа валеçнĕ. Ултă лаша вăйлă молотилкăпа авăн çапнă. Чи пирвайхи кладовщиксем: Федор Спиридонов, Константин Владимиров, Никита Сергеев, Иван Филиппов, Василий Капитонов. Малтанхи тимĕрçĕсем Гордей Плато-

нов, Николай Платонов, Алексей Павлов, Александр Кузьмин пулнă.

1933 çулта çынсенчен чăхсем пуçтарса чăх ферми йĕркеленĕ. Çурчĕ Василий Селин пуранна çĕрте ларнă. Заведующийĕнче Иван Евгеньев ĕçленĕ. Çав çулах Михаил Половиков арăмĕ пурăнакан вырăнта лаша вити туса лартнă. 1934 çулта 10 пăру тата пĕр вăкăр туяннă та ĕне ферми йĕркеленĕ, вĕсене чылай хушă Василий Давыдович Сулипов пăхнă. 1936 çулта масар ку енне (Серте Санькки хыçне) 58 лаша вырнаçтармалăх вите çĕкленĕ. 1938 çулта клуб çуртне тунă, заведующийĕнче Николай Русаков ĕçленĕ. Малтанхи конюхсем: Осип Данилов, Тихон Михайлов, Сергей Санкин, Иван Филимонов, Степан Нямуков, Петр Иванов; аслă конюхсем: Сергей Сулипов, Григорий Лисицын, Кузьма Владимиров, Александр Виссарионов. Малтанхи тракторпа Анастасия Захарова, Наталия Петрова, Ольга Захарова, Мария Внучкова вăй хунă.

1934 çулта сад лартса чĕртнĕ, 4 çул садоводра Захар Васильев тăрăшнă. Колхоз йĕркелесенех 750 тенкĕ пай укçи пухса магазин уçма шутланă, çынсенчен 36 тенкĕ парса кĕлет туяннă та магазин çуртне тунă, кĕркунне ăна уçнă, Захар Васильев продавецра 3 çул ĕçленĕ.

1935 çулхи сентябрĕн 29-мĕшĕнче çĕрпе ĕмĕрлĕх усă курма акт панă.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче мĕн тери йывăр килни каламасăрах паллă ĕнтĕ. 1941-1945 çулсенче ялти мĕнпур йывăр ĕç хĕрарăмсемпе вată-вĕтĕсем çине тиеннĕ. Çак çулсене Вăрăмпуçĕнче бригадирта Пелагея Семенова, Татьяна Афанасьева, Валентина Васильева, Степанида Федотова, Ольга Абрамова ырми-канми вăй хунă. Лашасем çителĕксĕр пирки вăкăрсемпе ĕçлеме тивнĕ. Уйрăмах Анна Ериванова, Мария Кириллова, Зинаида Никифорова, Елена Никандрова, Анастасия Мочалова, Феодосия Владимирова, Мавра Федорова, Алла Ильина, Евдокия Родионова тата ытти хăш-пĕр хĕрарăмсен вăкăрсене кӳлме тивнĕ. Ольга Фадеевăпа Вера Афанасьева фронтра çапăçнă. Вăрçă вăхăтĕ

нче те, ун хыççăн та хĕрарăмсен вăрман касса тинке тухнă. Марья Михайлова, Клавдия Александрова, Перасковья Абрамова, Мария Долгова аллинчен пуртă-пăчкă кайман тесен те йăнăш пулас çук.

Вăрăмпуçĕнчи колхоз председателĕнче ĕçленисем: Трупа Терентийĕ (1930), И. Соловьев (1931-1932, 1934-1935, 1941-1942), Н. Мардарьев (1933-1934, 1936-1938, 1943-1944), И. Ерицов (1935-1936, Çĕнĕ Шелттем çынни), Е. Михайлов (1938-1939), Д. Федотов (1939-1941), П. Фадеев (1942-1943), М. Трофимов (1944-1945), М. Половиков (1945-1951), В. Афанасьев (1951-1952, 1954-1959), И. Семенов (1952-1954), В. Платонов (1959-1980), В. Иванов (1980-1984), Н. Никонов (1984-1987), А. Гуркин (1987-1990), Н. Арсентьев (1990-1994), 1994 çулхи февральтен пуçласа Александр Николаевич Романов ĕçлет.

## II

Халапра каланă тăрăх, кирпĕч завочĕ пулнă вырăнта виçĕ пĕр тăван пурăннă: Этрав, Ентер, Ефим. Кайран Этрав Кивĕ Шелттеме, Ентер Пĕршенере, Ефим Вăрăмпуçне куçнă. Ентерĕ малтан Вăрăм шывĕ хĕринчи Хурăнсар текен вырăна çирĕпленнĕ, виçĕ хуçалăха çитсен хальхи Çĕнĕ Шелттеме каякан çул хĕрне тĕпленнĕ, кайрантарахпа вара Пĕршенер ялне куçса ларнă пулать. Архив хучĕсем çирĕплетнĕ тăрăх, 1794 çулта Пĕршенерте 20 хуçалăх шутланнă. Çĕрпӳ хулинчен çурçĕр хĕвел анăç еннелле вырнаçнă ялтан куçса килнĕ, ял ятне унти шыв ятне панă. 1859 çулта 44 хуçалăхра 132 арçын, 151 хĕрарăм пурăннă. 1910 çулта кунтан Кашкăр Çырми ялĕ уйрăлса тухнă.

Ялăн малтанхи ырăсла ячĕсем: Новый Бурженер, Ново-Буженеры. 1866 çулччен патшалăх хресченĕсем (государственные крестьяне) пурăннă. Çĕр ĕçĕпе, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе тăраннă, хурт-хăмăр йышлă тытнă, çăпата хуçса сутнă. XVIII-XIX ĕмĕрсенче лашапа ĕçлекен тата шыв арманĕ сем, кĕрпе арманĕсем пулнă. 55 арçын, 48 хĕрарăм пулнă, 1859 çулта арçынсен шучĕ 129, хĕрарăмсен 154 çитнĕ; 1897

çулта 214 арçын, 215 хĕрарăм пурăннă, 1926 çулта 111 кил шутланса тăнă, унта 246 арçын, 301 хĕрарăм пурăннă, 1939 çулта арçынсен шучĕ 289 çынна, хĕрарăмсен – 356 çынна çитнĕ. 1979 çулта 252 арçын, 292 хĕрарăм пурăннă, 2002 çулта 131 килте мĕнпурĕ 356 çын пурăннă : 176 арçын тата 180 хĕрарăм.

Хутла пĕлекенсем Михей Пантелеймоновпа Кузьма Федоров çеç пулнă, 1887 çулта Дмитрий Прокопьев килĕнче ачасене вĕрентме пуçланă. 1893 çултанпа хутла вĕрентме шкул ĕçленĕ. Пирвайхи вĕренекенсем: Андрей Архипов, Иван Кузьмин, Леонтий Степанов, Мария Гуркина, Фома Добров, Василий Тимофеев пулнă. Вĕсене Захарий Илларионов вĕрентнĕ. Унта 14 арçын ача, 9 хĕрача çӳренĕ.

1926 çулхи перепись тăрăх ялта 111 хуçалăх шутланнă, унта 547 çын пурăннă, сухалакан çĕр 500 гектар пулнă.

1931 çулта Пĕршенерте артель йĕркеленĕ. Ăна «Соревнование» ят панă. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхра 7 лаша, пĕр çил арманĕ, пĕр шыв арманĕ, пĕр кĕрпе арманĕ, пĕр лашапа çавăрттарса ĕçлеттерекен молотилка пулнă. Пирвай лашасене Петр Осипов хресчен патĕнче усранă, 1933 çулта лаша вити туса лартнă. Чи малтанах колхоза Петр Осипов, Спиридон Осипов, Ксенофонтий Архипов, Иван Гуркин, Василий Гуркин, Михаил Мельников, Георгий Осипов кĕнĕ. Пирвайхи коммунистсемпе комсомолецсем хушшинче Степан Лапин, Андрей Мельников, Михаил Мельников, Ольга Ксенофонтова, Фома Константинов ячĕсене асăнмалла.

1935 çулхи сентябрĕн 29-мĕшĕнче çĕрпе ĕмĕрлĕх усă курма акт панă.

Колхоз председателĕнче Иван Гуркин, Иван Дмитриев, Степан Лапин, Спиридон Осипов, Александр Гуркин, Иван Сынуков, Николай Леонтьев, Фома Константинов, Григорий Алексеев, Василий Иванов, Александр Гришин ĕçленĕ. Бригадирта Степан Лапин, Василий Швецов, Василий Медведев, Павел Краснов чылай çулсем вăй хунă, кладовщикра Петр Максимов, Терентий Иванов, Иван Кузьмин, Александр Леонтьев, Андрей Рыбкин, Кузьма Гаврилов тăрăшнă, фер-

мăсен заведующийĕсенче Михаил Мельников, Павел Краснов, Евдокий Ксенофонтов, Евлампий Семенов, Александр Леонтьев, Варвара Мельникова, Кондратий Демьянов, Иван Сергеев, Ольга Фомина, Василий Медведев, Василий Иванов ĕçленĕ, аслă конюхра Василий Швецов, Егор Кузьмин, Иван Демьянов, Иван Егоров, Александр Леонтьев, Иван Герасимов тимленĕ. Хуçалăх утар тытнă, малтан 50 вĕлле пулнă, кунта Екатерина Швецова хурт-хăмăрçă тăрăшнă. Пĕршенерти садра 1941 çулта йывăçсем лартма пуçланă, анчах вăрçă çулĕсенче вĕсем вăй илеймен, 1949 çулта тин икĕ гектар çинче улма-çырла йывăççисем лартса чĕртнĕ. Леонтий Степанов, Степан Добров, Григорий Алексеев унта ырми-канми ĕçленине аса илеççĕ ялти çынсем.

Ялта магазина уйрăм çын патĕнче уçнă, кайран ял варрине лавкка лартнă. Терентий Иванов, Николай Демьянов, Ольга Ксенофонтова, Екатерина Егорова, Анастасия Николаева сутăçсем тăрăшнă.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине икĕ хĕрарăм хутшăннă: Мария Рыбкина тата Ольга Фомина.

Малтанхи «хурçă ут» хуçисем шутĕнче Ульяна Петрова, Василий Александров, Александр Осипов, Василий Швецов трактористсене палăртмалла.

III

Вăрăм тăрăхĕнче ятлă-сумлă çĕр ĕçченĕсем сахал мар. Вĕсем хушшинче чи çутă çăлтăрсем вара Василий Николаевич Платоновпа Мария Зиновьевна Зиновьева, çак телейлĕ мăшăр çĕр çинче тарăн йĕр хăварнă, вĕсем – чăн-чăн çĕр хуçисем.

**В.Н. Платонов аса илĕвĕнчен:**

«Пирĕн йăхра тимĕрçĕсем ытларах пулнă. Платон асатте, ун ашшĕ Гордей, Микула атте – пурте тимĕрçĕсем. Атте, хут çинчи пек каласан, Николай Платонович, 1906 çулта Вăрăмпуçĕнче çуралнăскер, тăван колхозра тимĕрçĕре вăй хунă. Нимĕçсем пирĕн çĕршыв çине килсе тапăнсан ăна тӳрех фронта илмерĕç, бронь панă. 1942 çулхи февральти

шартлама сивёре вăрçа тухса кайрĕ. Май уйăхĕнче унран юлашки çыру килнĕччĕ, урăх нимĕнле сас-хура та пулмарĕ, йĕп пек çухалчĕ. Питех те шел, вил тăпри ăçта пулнине халĕ те пĕлместпĕр. Агреппина асанне Йĕпреç районĕнчи Кивĕ Пучике ялĕнчен качча килнĕ, вĕсене «Каляска йăхĕ» тенĕ. Анне, Мария Никифоровна Платонова (1903-1960), атте вăрçăна кайнă чухне 4 ачапа тăрса юлнă, виçĕ уйăхран пиллĕккĕмĕшĕ – Гаврил çут тĕнчене килнĕ, чи кĕçĕн шăллăм 1956 çулта çĕре кĕчĕ. Эпĕ çемьере чи асли – 1929 çулхи июлĕн 25-мĕшĕнче çуралнă. Çав хăрушă вăрçă çулĕсене аса илетĕп те тĕлĕнмеллипех тĕлĕнетĕп: мĕн тери йывăр килнĕ ун чухне 5 ачаллă аннене...»

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çулĕсенче Ваççа ялти шкулта 7 класс пĕтерет, унтан виçĕ çул фермăра кĕтӳ кĕтет. 1949-1952 çулсенче Совет çарĕнче хĕсметре тăрать. Киле таврăнсан ăна уй-хир бригадирне лартаççĕ. Тепĕр çултан «Коминтерн» ятлă колхоз правленийĕпе парти Канаш райкомĕ вăр-вар качча́на Шупашкара советпа парти шкулне вĕренме яраççĕ. Çапла вара В.Н.Платонов 1953-1956 çулсенче республикăн тĕп хулинче наукăна çине тăрса «кăшлать». 1954 çулхи апрелĕн 11-мĕшĕнче Вăрăмпуç каччи туй тăвать, хăйĕнчен пĕр çул маларах вĕренсе пыракан Çĕрпӳ районĕнчи Тĕнсĕр ялĕнче кун çути курнă хитре хĕре Мария Зиновьевна Зиновьевăна качча илет.

1956 çулта иккĕшĕ те кĕçĕн агроном дипломне алла илеççĕ, Вăрăмпуç ялне таврăнать çамрăк мăшăр. Василий Платонова агронома лартаççĕ. Мария Зиновьевна бригадăна ĕçлеме тухать. Йăрă та çивĕч чĕлхеллĕ кине ял-йыш часах асăрхать.

...Василий Николаевич Платонов кунĕн-çĕрĕн ĕçре: агрономăн кашни уйăн пахалăхне, çĕр структурине пĕлмелле, унăн пулăхлăхне ӳстермелли майсене шырамалла. Шăп та лăп 50-мĕш çулсен вĕçĕнче Чăваш ял хуçалăх институчĕн ăсчахĕсем ертсе пынипе республикăри кашни районтах мĕнпур хуçалăхсенчи çĕрсене сăнаса-тĕпчесе ятарлă карттăсем туса хатĕрленĕ. Ку çамрăк агронома ну-

май пулăшнă та ĕнтĕ. Тепĕр енчен агроном технолог çеç мар, унăн çынсемпе (механизаторсемпе, сеяльщиксемпе, вăрлăх им-çамлакансемпе тата ыттисемпе) çĕрне-кунне пăхмасăр пĕрле пулмалла, пĕлменнине вĕрентмелле, вĕсен ĕмĕр-ĕмĕр сăнаса пынисене ăша хывмалла. Агрономи наукине, малта пыракансен опытне вĕренме хĕллехи вăрăм каçсем «пулăшаççĕ», ял хуçалăх пĕлĕвĕсен кружокне çӳ ллĕ шайра ирттерет пултаруллă специалист. 1959 çулхи июль пуçламăшĕнче Пĕршенер ялĕнчи «Соревнование», Вăрăмпуçĕнчи Коминтерн ячĕллĕ колхозсене пĕрлештерес ыйту тухса тăрать. Клуб çурчĕ пулман пирки Вăрăмпуçĕнчи шкулта пуху икĕ кун, икĕ каç кĕрлет. Канаш район Совечĕн ĕçтăвкомĕн председателĕ Сергей Максимович Синицын сĕннипе пĕрлештернĕ колхоз председателĕ пулма Василий Николаевич Платонова суйлаççĕ, хуçалăха – «Путь Ленина» ят параççĕ, паянхи кунччenex çав ятлă ял хуçалăх кооперативĕ.

**В. Лапин журналист çырнă «Ĕçпе пиçĕхнĕ çын хăйне шанать» интервьюран («Канаш ен» хаçат, 2009, ноябрĕн 20-мĕшĕ):**

**– Василий Николаевич, мĕн пирки пухура икĕ талăк хушши тавлашрĕç-ха?**

- Председателе лартма çын тупайманнипе. Мана, 30 çулти çынна, суйларĕç. Ун чухне, колхозсем пĕрлешнĕ хыççăн, тырпул вырма тухмалла – колхозăн пĕр трактор та, пĕр комбайн та çук. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси икĕ ялĕнче те юхăннă, ишĕлме пуçланă витесенче тăнă. Тырра халăхпа алă вĕççĕн вырса пухса кĕртрĕмĕр, колхозра выльăхсене пĕрлештерсе çĕнĕрен витесем турăмăр. Тыр-пул упрама складсем пулман пирки (ĕлĕк пуянрах пурăнакансенчен туртса илнĕ хуралтăсенчен тунă пĕчĕк кĕлетсем çеçчĕ) складсем турăмăр.

Тырă тухăçĕ икĕ колхозĕн те 2-3 центнер çеç тухнă. Пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн тăрăшса ĕçлесе тухăçа 35-38 центнера çитертĕмĕр.

**– Тыр-пул тухăçĕ эсир председателе ларсан миçе**

**çултан ӳсме пуçларĕ?**

- Тухăçа ӳстерме çăмăл мар. Малтанхи вăхăтра 7-8 центнер илеттĕмĕр, унтан 10-12 центнера çитрĕ. Ĕлĕк кладовщикре ĕçленĕ Гаврилов Кузьмапа калаçнине аса илетĕп: «Вăт эпир те гектартан 16 центнер илме пуçласан пурăнакан пулаттăмăр-ха», – тетчĕ вăл. Председательте 20 çул ĕçленĕ тĕлелле 37-38 центнер илме пуçларăмăр. Ун чухне тырă акса ӳстермелли лаптăксем 700-750 гектар пулнă. Пысăк тухăç илнипе 1976 çулта Мария Зиновьевна Зиновьевăна Социализмла Ĕç Геройĕ ятне пачĕç.

Халăх валли ĕç вырăнĕ пултăр тесе выльăх-чĕрлĕх йышне те самаях пысăклатрăмăр. Ун чухне пирĕн пысăк мар колхозра сухаламалли çĕр 1200 гектар пулнă. Ĕне-выльăха 900 пуçа çитертĕмĕр, сăвакан ĕне 250-300 пуç пулнă. Кашни ĕнерен çулталăкра 4 пин килограмм сĕт суса илнĕ. Сысна пин пуç ытла тытнă, çулталăкне патшалăха 700-шер пуç сысна самăртса сутнă.

**– Пĕршенерте сурăх ферми те пулнă вĕт...**

- Сурăх фермисем, чăх фермисем малтан икĕ ялĕнче те пулнă. Сурăхсене Пĕршенер ялне куçартăмăр. Чăхсене Вăрăмпуçне илсе килтĕмĕр. 100 автан, çăмарта тăвакан 1500 чăх усранă. Кашни кун 1200 çăмарта илеттĕмĕр.

Пĕршенер ялĕнче 3 бригада пулнă, бригадирĕсем Василий Егоров, Александр Демьянов тата Петр Краснов.

Мария Зиновьевна 30 çул хушши хăй курни-илтнисене, сăнанисене тĕплĕн çырса пынă.

**М.З. Зиновьева çырса пынă кун кĕнекинчен (дневникран):**

«1959 çулхи ноябрьте Вăрăмпуçĕнче виçĕ бригада йĕркелерĕç: 1-мĕш бригадăна ертсе пыма мана шанса пачĕç, 2-мĕшĕнче Валентина Павлова ĕçлерĕ, 3-мĕш бригадăра Силидор Васильев вăй хучĕ. 1964 çулта икĕ бригада турĕç, 1-мĕшĕнче Мария Зиновьева, 2-мĕшĕнче Валентина Павлова бригадирсем ĕçленĕ.

1959 çулхи ноябрьте Пĕршенер ялĕнче икĕ бригада хăварчĕç, пĕрне Александр Демьянов ертсе пынă, теприн-

не – Василий Иванов. 1964 ҫулта кунта пӗр бригада ҫеҫ йӗркеленӗ, колхозри 3-мӗш бригадăна ертсе пыма Александр Демьяновах шаннăччӗ.

1959-1968 ҫулсенче бригадирта вăй хунисем: Петр Алексеев, Варвара Краснова, Александр Николаев, Константин Кузьмин. Вӗсенчен Алексеев, Краснова, Николаев заявленисем ҫырса ӗҫрен тухрӗҫ. Константин Кузьмина вара колхоз правленийӗн ларăвӗ йышăннă тăрăх, 1967 ҫулхи ҫур акинче ӗҫсе 4 кун ӗҫе тухманшăн хăтарнă. Ун вырăнне Силидор Васильев тракториста бригадира суйласа лартнă. 1964 ҫулхи ҫуркунне Пӗршенерти бригадăна ертсе пыма Анатолий Иванович Гуркина суйланă. Вăл унта 1967 ҫулхи февральччен ӗҫлерӗ, ун хыҫҫăн ăна Ҫӗнӗ Шелттемри «За коммунизм» колхоз председательне суйларӗҫ. 1967 ҫулхи февраль уйăхӗнчен пуҫласа Пӗршенер ялӗнчи комплекслă бригадăна каллех Александр Демьянов ертсе пырать, унăн помощникӗ ферма заведующийӗ - Николай Захаров.

Колхозсем пӗрлешнӗ вăхăтра (1959 ҫул) Вăрăмпуҫӗнче ферма заведующийӗнче Николай Евдокимович Аницов вăй хунă. Фермăра Анастасия Вакова силос айне пулса вилсен ăна ҫак ӗҫрен хăтарнă. Ун вырăнне Василий Александрова (ялта ăна Тямуҫ тесе чӗннӗ) лартрӗҫ. 1965 ҫулхи октябрьтен пуҫласа 1967 ҫулхи апрелӗн 1-мӗшӗччен Василий Егорович Степанов, хыҫҫăн Мария Степанова ферма заведующийӗнче ӗҫлерӗҫ. 1968 ҫулхи январьтенпе Иван Осипович Осипов фермăна ертсе пырать. Манефа Степанова зоотехник пулса ӗҫлеме тытăнать (унччен вăл ҫак ӗҫре 1966 ҫулхи август-1967 ҫулхи апрель уйăхӗччен вăй хунă).

Колхозсем пӗрлешнӗ чух Вăрăмпуҫ ялӗнче кладовщикра Вера Аристархова ӗҫленӗ, ун хыҫҫăн – Ефим Сергеев, 1965 ҫултанпа - Алексей Игнатьев. Аслă конюхра «Путь Ленина» колхоз йӗркеленӗ вăхăтра Иван Афанасьев тăрăшнă, ун хыҫҫăн - Осип Данилов. 1961 ҫулхи март уйăхӗнче «Валя» лаша ҫавăрса ҫапса хăварнă хыҫҫăн вăл вилсе кайрӗ, ҫавăнпа та Петр Нямуков ӗҫлеме пуҫларӗ, 1963 ҫултанпа Иван Афанасьев ӗҫлет.

1959 çулта трактористсен бригадирӗнче Анастасия Захарова ӗçлетчӗ, 1961 çултанпа - Василий Дмитриев механик, 1964-1966 çулсенче (кӗркуннеччен) Николай Яковлев тăрăшрӗ, 1966 çулхи хура кӗркуннерен пуçласа каллех Василий Дмитриев механикра ӗçлет. Учетчик-заправщикра Василий Степанов, Иван Александров, Алексей Петров, Егор Сахтеров, Алексей Иванов ӗçленӗ. 1966 çултанпа мастерской заведующийӗнче Егор Степанович Степанов тăрăшать.

Колхозсем пӗрлешнӗ чух Пӗршенер ялӗнче аслă конюхра Иван Порфирьевич Герасимов ӗçленӗ, ун хыççăн Александр Леонтьев, Алексей Терентьев, Алексей Елизаров тăрăшнă».

**М.З. Зиновьева аса илнинчен («Çӗре юратсан» кӗнеке, Чăваш кӗнеке издательстви, Шупашкар, 1978, 8-10 стр):**

«...Мӗн пӗчӗкрен ӗçе хăнăхнă. Манăн çамрăклăх Çавал хӗрринчи Тӗнсерте, Çӗрпӳ районӗнчи ялта, иртнӗ. Çакăнта вăй-хал пухса, çунат хушма хатӗрленнӗ. Çăмăлах килмерӗ çав вăхăтра. Хаяр вăрçă тӗтӗмӗ сирӗлме тытăнчӗ. Аманса юлнă çӗршыв-анне ура çине çӗкленнӗ. Хаяр вăрçă суранӗ кашни çемье алăкӗнчен тенӗ пекех пырса шакканă. Атте, нимӗç вăрă-хурахӗсене хирӗç çапăçса сывлăхне хавшатнăскер, нумаях пурăнаймарӗ, вăхăтсăр çӗре кӗчӗ. Çемьере тăхăр ача. Пӗри тепринчен пӗчӗкрех. Ирӗн-каçăн ура çинче, бригадир пырса чӗнмесӗр ӗçе тухса чупаттăм та, пуринчен каярах таврăнаттăм, киле çитсен те аннене мӗн май килнӗ таран пулăшма тăрăшаттăм. Тепӗр ирхине каллех хӗвелпе пӗрлех хирте. Асăрхарӗç çакна аслисем. Звеньевой пулма уйăрса лартрӗç. Ку пушшех хавхалантарса ячӗ вара.

Хӗрарăмсене пӗр чăмăра пӗрлештертӗм. Уйрăлма пӗлмерӗм вӗсенчен. Хăçан мӗн ӗç тумалли çинчен каласа ăнлантараттăм. Пуринпе те пӗр чӗлхе тупма тăрăшаттăм. Хиртех, ӗçленӗ хушăрах, стена хаçачӗ кăлараттăм. Лайăххине ырлаттăм, япăххине питлеттӗм. Ӗç ăнăçнăшăн хӗпӗртеттӗм. Çавăн чухне пурнăçăма ӗмӗрлӗхех тăван пар-



*М.З.Зиновьева амăшĕ Евдокия Ивановна Крылова 1980-мĕш çул*



*1966 çул*



*1975 çул*

*1975 çул*





*1968 çул*

*Районти ĕçпе юрă уявĕнче*



1980 çул





1954 çул, апрель



М.З. Зиновьева, В.Н. Платонов тăванĕсемпе, 1965 çул

И-44051



НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ



*М.З. Зиновьева кăшман уйĕнче*



*В.Н.Платоновпа мăшăрĕ М.З.Зиновьева, 1954 çул*

типе çыхăнтарма шутларăм. Коммунистсем хăйсен ретне йышăнчĕç.

Çак шанăçа çуллен вăйлă тырпул çитĕнтернипе тӳрре кăларса пытăм. Пĕр кунхине правление чĕнтерчĕç те çакăн пек хыпар пĕлтерчĕç: «Хĕрĕм, вĕренмелле санăн. Лаша пуласси тихаран паллă, теççĕ, чĕрере вут-хĕм тапса тăнине туятпăр. Шупашкара партипе совет кадрĕсем хатĕрлекен шкула яма шутларăмăр».

Кунта та лайăх паллăсемпе кăна вĕрентĕм. Кунĕн-çĕрĕн кĕнекепе пурнăçа тишкертĕм, çĕннине тĕпчерĕм. Специальнăй вăтам пĕлӳ илнĕ агроном пулса тăтăм».

**В.Н. Платонов аса илĕвĕнчен:**

«1959 çулта, Вăрăмпуçпе Пĕршенер колхозĕсем пĕрлешнĕ хыççăн, çакăн пек кăтартусем пулчĕç: хамăр ялта тĕш-тырă гектар пуçне 8,4 центнер, Пĕршенерте 7,3 центнер тухрĕ. Чи лайăх тухăç Пĕршенер зоничи сĕлĕ пачĕ, 9,8 центнер пулчĕ. Çав çул 78 гектар çинчен çĕр улми гектар пуçне 84 центнер панăччĕ. Патшалăха планпа палăртнă 850 центнер вырăнне 906 центнер тырă, 216 центнер пахча çимĕç сутрăмăр, 1702 центнер çĕрулми (план 1564 центнер). Кашни 100 гектар çĕр пуçне 60, 8 центнер сĕт, 25,8 центнер аш-какай туса илтĕмĕр, кашни ĕнерен 1331 килограмм сĕт сунă, кашни сурăхран 2,3 килограмм çăм каснă. Çапла вара колхоз председателĕнче ĕçлеме пуçланă çул аш-какай сутмалли плана 162,9 процент, сĕт-91,6 процент, çăм сутмалли плана 109, 5 процент, çăмарта сутассипе икĕ хут ирттерсе пурнăçларăмăр.

Çав çулах рядовой колхозниксенчен çаксем палăрнăччĕ: Вăрăмпуçĕнче Василий Федоров, Анна Федорова, Иван Мочалов, Ульяна Нямукова, Мария Захарова, Нина Митрофанова, Дмитрий Харисанов, Анисия Харисанова, Николай Мардарьев, Кузьма Владимиров, Василий Игнатьев, Евдокия Краснова, Мария Терентьева, Пелагея Моисеева, Анастасия Яковлева, Пĕршенерте Анна Алексеева, Анна Георгиева, Перасковья Иванова, Иван Швецов, Петр Иванов, Ольга Павлова, Иван Федоров, Евлампия Павлова, Фекла

Степанова, Василий Петров, Серафима Филиппова, Фекла Ксенофонтова, Нина Иванова тата ыттисем те».

...Майӗпен-майӗпен «Путь Ленина» колхозра уй-хир культурисен тухӑҫӗ те, выльӑх-чӗрлӗхрен илекен тупӑш та ӳссех пырать. Ҫавна май хуҫалӑхра строительство ӗҫӗсем те анлӑн сарӑлаҫҫӗ, техника паркӗ ҫултан ҫул пуянланать.

**Л. Решетников журналист ҫырнӑ «Продожение пути» тӗрленчӗкрен («Советская Чувашия» хаҫат, 1992 ҫул):**

«В Новом Урюмове Мария Зиновьева появилась пять лет назад: приехала вместе с мужем после окончания сельхозшколы. Василия Платонова односельчане избрали председателем, а ей работы не нашлось. Что же, так и быть женой-домохозяйкой с дипломом при руководящем муже?

Нет, это не устраивало Марию Зиновьевну. Она пошла в бригаду - рядовой колхозницей. М.Зиновьева с детства к крестьянскому труду была привычна. Привыкла она и к строгому порядку, какой был в ее родном колхозе. А здесь Мария увидела беспорядок, расхлябанную дисциплину. И не раз между нею и мужем-председателем вспыхивали крупные разговоры:

- Что же ты не можешь нашего бригадира приструнить?

- Замаялся! – говорил Василий Николаевич. - Ты вот сама попробуй-ка...

Марию Зиновьевну назначили бригадиром. Руководила она бригадой больше двух лет. Как ей было трудно наводить порядки - легко понять. Но молодой агроном не струсила: смело наступала на отъявленных лодырей, помогала подняться оступившимся. Не скоро, не сразу, но дела в бригаде выпрямились, она вышла в передовые. Радуясь первым успехам, Мария Зиновьевна строила планы на будущее.

Но не суждено было исполниться. Хорошего организатора-женщину заметили и решили выдвинуть. Так она стала сначала секретарем исполкома сельсовета, а потом - инструктором райкома КПСС. В первое время дела в бригаде шли неплохо - отрегулированная машина продолжала действовать. Однако скоро все пошло наперекос: возобно-

вились выпивки и прогулы, бригадир неделями не начислял трудодней, у людей пропал интерес к труду.

Инструктор райкома Мария Зиновьева видела эти недостатки, пыталась исправить их, но безуспешно. В других колхозах, закрепленных за нею, дела тоже не очень ладились. Мария чувствовала, что она не в силах что-либо изменить. С каждым днем убеждалась, что инструкторство – не ее сани.

Трудно сказать, как сложилась бы судьба молодой женщины, если бы не ноябрьский Пленум ЦК КПСС. Его решения взволновали Марию Зиновьеву. А тут в газетах появились сообщения о том, что партийные работники и специалисты едут на работу в колхозы. Мария Зиновьева без колебаний попросилась из парткома:

- Отпустите меня обратно в бригаду – хочу быть ближе к земле…

Так она вернулась в колхоз, снова стала бригадиром. Будто вчера это было, помнит Марья Зиновьева тот морозный январский день- первый день своего возвращения. Она давала наряд на вывозку навоза. Мужчин на работу вышло раз-два и обчелся, да и женщины явились не все. Но Мария Зиновьевна не отпустила рук. Работая вместе с женщинами, грузившими навоз, она говорила:

- Пристыдили бы вы своих соседей за прогул. Поймите, бабоньки, пока всем миром за таких людей не возьмемся, порядку в бригаде не будет, мне одной его не навести…

На другой день бригадир побывала в домах у всех, кто накануне не выходил на работу. По утрам и в сумерках, встречаясь у колодцев, соседки заводили разговоры о колхозных делах. На летучих собраниях в перерывах между работой на конном дворе, у зерноскладов Мария Зиновьева вела беседы о задачах развития колхоза, о житейских делах.

С каждым днем все меньше становилось в бригаде людей,увиливающих от колхозных работ. За короткое время на бригадные поля было доставлено три тысячи возов навоза. Вторично очищены семена, с наступлением те-

плых дней бригада Марии Зиновьевой перебрала семенной картофель,заложила клубней на яровизацию. Заранее протравила она семена. В деталях спланировала весенний сев. Незадолго до выезда в поле Марии Зиновьевне сказали в правлении:

- Думаем сделать твою бригаду семеноводческой,ты агроном, так что сумеешь лучше других агротехнику соблюсти,урожай вырастить. Не возражаешь?..

Могла ли она, беспокойная, возражать!.. Действительно, в дни посевной не было в колхозе человека, который бы так ревностно следил за качеством полевых работ. Вот бригадир на втором поле, где пашет тракторист Василий Николаев. За плугом – две бороны, но почва разделывается плохо: закреплены они неверно, поднимаются. Мария Зиновьевна останавливает агрегат, горячо выговаривает трактористу:

- Что, у тебя глаз нет? Или на дядю работаешь – не на себя?

- Не заметил, внимания не обратил, Мария Зиновьевна…

Тракторист поспешно исправляет оплошность, за тронувшимся агрегатом остается другая пашня. Ни одной мелочи не упускала в агротехнике бригадир Зиновьева. Труд организовала так, что ни один час не стояли зря машины и лошади, все средства были пущены в ход. Рядом с тракторами озимь боронили на лошадях. Молодые мужики («не в пример другим – не бегут из колхоза») Иван Александров и Петр Мардарьев всю посевную работали сеяльщиками. Постоянные люди были и на подвозке семян – Василий Александров, Алексей Белов, Василий Васильев. А на посадку картофеля в поле вышли все, даже старушки. Быстро посеяли кукурузу трактористы Василий Николаев и Александр Григорьев.

- Бригада Зиновьевой, - говорит колхозный агроном, - отсеялась первой. Качество работ – что надо. Да вот она и сама… Загорелая. Мария Зиновьевна на велосипеде

возвращается с поля. Бывший инструктор райкома нехотя рассказывает о себе, все старается перевести разговор на людей своей бригады. Вот Евдокия Васильева и Мария Михайлова, хотя и обременены детьми, но на колхозных работах непременные участницы. Молодые колхозницы О.Нямукова, Е.Ильина, В.Степанова никакой черной работы не гнушаются, легких да больших трудодней не ищут. Да всех-то не перечтешь, большинство теперь работает на совесть.

- Конечно, - говорит Мария Зиновьева, - не все еще ладно в бригаде. Но главное – произошел перелом: поверил народ в свои силы, в возможность лучше вести хозяйство»...

**М.З. Зиновьева çырса пынă кун кĕнеки патне таврăнарха:**

«1967 çул - юбилейлă çул. Совет влаçне туса хунăранпа 50 çул çитрĕ. Ăна пирĕн колхоз пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илчĕ. Патшалăха тырă, çĕр улми, пахча çимĕç, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем сутмалли плансене ирттерсе пурнăçларĕ, çапла вара районти колхозсем хушшинче малти вырăна тухрĕ, çакăншăн район пирĕн хуçалăха яланлăхах упрама Хĕрлĕ Ялав пачĕ. Колхоз ятне Чăваш Республикин тата районăн хисеп кĕнеки çине çырса хучĕç.

Кашни гектартан 1-мĕш бригадăра (бригадирĕ М.З.Зиновьева) 15,2 центнер тĕштырă, 2-мĕш бригадăра (бригадирĕ - С.Е.Васильева) 14,8 центнер , 3-мĕш бригадăра 13,0 центнер, колхозĕпе 14,2 центнер туса илнĕ, çĕр улми тухăçĕ хуçалăхра 124 центнер, кăшман тухăçĕ 185 центнер пулчĕ. Патшалăха тырă 860 центнер вырăнне 1761 центнер (205:), пахча çимĕç 360 центнер вырăнне 356 центнер (99:), çĕр улми планпа 1850 центнер сутмалла пулсан, 3855 центнер (208:) ăсатнă.

1967 çулта кашни 100 гектар çĕр пуçне 183 центнер сĕт, 46,7 центнер аш-какай (çав шутра 23,4 центнер сысна ашĕ), 50 килограмм çăм, кашни сухалакан 100 гектар пуçне 10700 штук çăмарта туса илтĕмĕр. Кашни ĕнерен 2231 килограмм

сӗт сунӑ, сурӑхран 3,2 килограмм ҫӑм каснӑ. Государствӑна аш-какай сутмалли плана 154 процент, сӗт сутмалли плана 152 процент, ҫӑмарта – 140, ҫӑм сутмалли плана 183 процент пурнӑҫланӑ. Кашни ӗнерен сӗт суса илессипе Раиса Александрова доярка мала тухрӗ – 2363 килограмм, 2-мӗш вырӑна 2301 килограмм суса Раиса Владимирова йышӑнчӗ.

Чӑваш АССР юбилей кӗнеки ҫине 1-мӗш уй-хир бригадин бригадирне М.З. Зиновьевана кӗртнӗ. Канаш районӗн юбилей кӗнеки ҫине колхоз председательне В.Н. Платонова, М.З. Зиновьева бригадира, Р.С. Владимирова дояркӑна, М.П.Трофимов чӑх пӑхакана кӗртнӗ.

КПСС райкомӗн бюровӗ, ӗҫ ҫынни депутачӗсен район Совет ӗҫтӑвкомӗ тата ял хуҫалӑхпе хатӗрлев ӗҫӗнчи рабочисемпе служащисен профсоюз райкомӗн президиумӗ йышӑннӑ тӑрӑх хисеплӗ ятсем панӑ:

**«Районти пысӑк тухӑҫлӑ тырпул ӑсти»** – М.З. Зиновьева бригадира, бригада 258 гектар ҫинчен 15,2 центнер тӗш тырӑ туса илнӗ;

**«Районти кайӑк-кӗшӗк пӑхакансенчен чи лайӑххи»** - М.П.Трофимова. Вӑл кашни чӑхран 176 ҫӑмарта илнӗ;

**«Районти чи лайӑх механизатор»** – Г.П.Порфирьев тракториста. Вӑл «МТЗ-50» тракторпа 867 гектар чухлӗ ӗҫ тунӑ, ӗҫе лайӑх пахалӑхпа пурнӑҫланӑ, ҫунтармалли-сӗрмелли материалсем, техникӑна юсамалли пайсем перекетленӗ.

Юбилей ҫулӗнче колхозра лайӑх ӗҫленӗшӗн ҫак ҫынсене Хисеп хӑми ҫине кӗртнӗ: М.З.Зиновьева, А.Д.Демьянов уй-хир бригадирӗсене, В.И.Кудрявцев тракториста, Н.И.Иванов шофера, К.А.Афанасьев сурӑх пӑхакана, Р.И.Александрова дояркӑна, И.Н.Никитин колхозника, Р.Владимирова, П.Николаева колхозницӑсене, О.Краснова пӑру пӑхакана, А.И.Иванова сысна пӑхакана, С.П.Павлова колхозницӑна, Ф.Е.Аницов комбайнера.

1967 ҫулхи ноябрӗн 7-мӗшӗнче колхозра лайӑх ӗҫлекенсен пысӑк ушкӑнне тӗрлӗрен япаласем парнеленӗ.

1968 ҫулхи апрелӗн 11-мӗшӗнче Вӑрӑмпуҫ ялӗнчи икӗ

бригадăран пĕрре турĕç, ăна ертсе пыма М.З.Зиновьевăна çирĕплетрĕç, помощникĕ - Силидор Егорович Васильев. 2-мĕш бригадăн бригадирĕ - Александр Демьянович Демьянов, унăн помощникĕ - Николай Захаров»...

... «Путь Ленина» колхозăн касси пуянланса пынă май хуçалăхра строительство ĕçĕсем анлăрах та анлăрах сарăлма тытăнаççĕ. Производство объекчĕсем ӳсе-ӳсе лараççĕ, обществăлла çуртсем пĕрин хыççăн тепри çĕкленеççĕ,çулйĕр тĕпрен лайăхланать.

**«Культура çурчĕ уçăлчĕ» информацирен («Коммунизмшăн» хаçат (Канаш хули), 1968 çул, сентябрĕн 11-мĕшĕ):**

«Путь Ленина» колхозра Культура çуртне туса пĕтерни çинчен пирĕн хаçатра пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ. Сентябрĕн 8-мĕшĕнче ăна чаплă лару-тăрура уçма колхозниксем тата кӳршĕллĕ колхозсенчен хăнасем пухăнчĕç. Культура çуртне уяв чухнехи пек илемлетнĕ. Пухăннисем умĕнче колхоз председателĕ, Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ В.Н.Платонов кĕске сăмах тухса каларĕ.

– Паян пирĕн савăнăçлă кун, – терĕ вăл. – Эпир колхозри Культура çуртне уçатпăр, вăл кирек хăш район центрне те илемлетме пултарнă пулĕччĕ. Унта 300 вырăнлăх курмалли зал, библиотека валли тата художествăлла пултарулăх кружокĕсен занятийĕсене ирттерме пӳлĕмсем пур. Артель экономики ӳсни, тăван государство пулăшни пире ăна тума 105 пин тенкĕ уйăрса пама май пачĕ. Ял халăхĕн культурăпа йăла ыйтăвĕсене тивĕçтересси пирĕн куç умĕнчех хулари пек пулса пырать. Пирĕн задача – колхозниксене коммунизмла воспитани парас, вĕсен канăвне пĕлсе йĕркелес тĕллевпе Культура çурчĕпе анлăн усă курасси.

В.Н. Платонов хĕрлĕ лентăна касать. Культура çурчĕ уçăлчĕ. Артельти партбюро секретарĕ С.К.Кузьмин экономика, ял ĕçченĕсен культури ӳсни çинчен каласа пачĕ. Пухăннисене пирĕн районти «Канаш», «За комунизм» колхозсем тата кӳршĕллĕ Йĕпреç районĕнчи Калинин ячĕпе хисепленекен колхоз председателĕсем В.И.Дмитриев, А.И.Гуркин,

В.К.Керимов юлташсем, çавăн пекех КПСС райкомĕн иккĕмĕш секретарĕ Ф.И.Ильин тата райсовет ĕçтăвкомĕн председателĕн заместителĕ М.М.Ложкина саламларĕç. Строительсен ячĕпе колхозри строительство бригадин бригадирĕ В.А.Афанасьев сăмах тухса каларĕ. Унтан чи лайăх строительсене премисем пачĕç...»

**М.З. Зиновьева çырса пынă кун кĕнекинчен:**

«1968 çул аван вĕçленчĕ. Ноябрĕн 7-мĕшĕнче тăрăшса ĕçленĕ колхозницăсене, шкул ачисене лайăх парнесем парса чысларĕç.

1-мĕш бригада кашни гектартан 16,3 центнер тĕш тырă туса илчĕ, вăл шутра ыраш 14,7, кĕрхи тулă 21,7, çурхи тулă 21,2, сĕлĕ 17, пăрçа 14,5 центнер. Çĕр улми гектар пуçне 122 центнер, выльăх кăшманĕ - 360.

2-мĕш бригадăри тухăç та 16,3 центнер, вăл шутра ыраш 13,9, çурхи тулă 19,5, сĕлĕ 12,1, пăрçа 14,3, урпа 27,0 центнер, выльăх кăшманĕ 247 центнер кăларса илнĕ.

1968 çулта патшалăха тырă сутмалли плана 214:, çĕр улми 153:, пахча çимĕç 78: пурнăçланă. Кашни 100 гектар çĕр пуçне 186 центнер сĕт, 49,3 центнер аш-какай, 59 килограмм çăм туса илнĕ, сухалакан 100 га çĕр пуçне 21381 штук çăмарта. Ĕне пуçне сĕт суса илесси 2345 килограма çитнĕ, кашни чăхран 177 çăмарта илнĕ, пĕр сурăхран 3,8 килограмм çăм каснă. Патшалăха сутмалли плансене пурнăçланă (процентпа): аш-какай - 156, сĕт - 152, çăмарта - 124, çăм - 220. Çак дояркăсем мала тухрĕç: кашни ĕне пуçне сĕт суса илчĕç (килогрампа): Р.Владимирова - 2368, Г.Алексеева - 2296, Ю.Ильина - 2256, Р.Аристархова - 2237.

Районти производство управленийĕ тата ял хуçалăхĕпе хатĕрлев ĕçĕнчи работниксен профсоюз комитечĕ тăратнă тăрăх, тырпул пухса кĕртес ĕçе ăнăçлă вĕçленĕ, хăйсем валли паха вăрлăх çителĕклĕ хывса хăварнă, государствăна тырă тата çĕр улми сутмалли плансене, социализмла обязательствăсене срокчен пурнăçланă 9 хуçалăха Хисеп хăми çине кĕртнĕ, вăл шутра «Путь Ленина» колхоз та пур. 1968 çулта ĕне витинче кормоцех тата 300 вырăнлăх Культура

çуртне хута янă.

1968 çулхи декабрĕн 11-мĕшĕнче 1-мĕш уй-хир бригадин бригадир помощникĕ С.Е.Васильев ĕçе пăрахнă пирки 1969 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче ун вырăнне Василий Павлович Павлов ĕçлеме тытăнать. Колхозри Василий Дмитриевич Дмитриев механика ĕç дисциплинине пăхăнманшăн ĕçрен хăтарнă, ун вырăнне Н.А.Яковлева лартнă. Экспедитор пулса ĕçлеме Лазарь Семенова çирĕплетнĕ...»

**М. Зиновьева çырнă «Тухăç хамăртан килет» корреспонденцирен («Коммунизмшăн» хаçат, 1968 çул, август):**

«Путь Ленина» колхоз ĕçченĕсем В.И.Ленин çуралнăранпа 100 çул, Чăваш Республикине тунăранпа 50 çул çитнĕ пысăк юбилее кĕтсе илме ял хуçалăх продукчĕсем туса илмелли тата хатĕрлемелли пилĕк çуллăх плана срокчен пурнăçлассишĕн кĕрешеççĕ.

Кăçал тырпул ăнса пулчĕ... Тырпул тухăçĕ хамăртан килет. Чи малтан агротехникăна çирĕп пурнăçласа пыни кирлĕ. Эпир пысăк продукциллĕ сортлă вăрлăх акасси çине тимлĕн пăхатпăр. Иртнĕ çул «Вятка» тата «Казанская» сортлă ыраш вăрлăхĕсене çĕнетрĕмĕр, кăçал пăрçа вăрлăхне çĕнететпĕр. Ку таранччен «Ульяновка» сортлă кĕрхи тулă акнă, кăçал «Мироновская- 808» сортлă вăрлăх туянтăмăр.

Иртнĕ çул кĕр тыррисене лайăх кăпкалатнă, удобренисем хывнă çĕр çине августăн 23-мĕшĕччен акса хăварнă. Çакă кĕр калчисене лайăх аталанса хĕле кĕме май пачĕ. Калчасене çуркунне азотлă удобренисем парса апатлантарнă, сÿреленĕ.

Çур тыррисем акмалли кĕрхи çĕртмене август уйăхĕ нчех сухаласа хăварнă. Кĕрхи çĕртме сухине çуркунне сÿ реленĕ, вăхăтра культиваци туса акнă. Культиваци тăвас умĕн гектар пуçне центнер аммиак селитри хывнă, 25-шер килограмм пĕрчĕлетнĕ суперфосфата вăрлăхпа хутăштарса янă. Калчасене лайăх пăхса çитĕнтернĕ...

...Колхоз государствăна икĕ план чухлĕ тырă сутма йышăннинине чыслăн пурнăçларĕ, халĕ тата виççĕмĕш план

шучĕпе сортлă вăрлăх сутатпăр...»

**В.Цыпленковăн «Ĕçченсен бригадирĕ» тĕрленчĕкĕнчен («Коммунизмшăн» хаçат, 1968 çул, февралĕн 6-мĕшĕ):**

«Мария Зиновьевна Зиновьевăна пирĕн Канаш районĕнче нумайăшĕ пĕлеççĕ. Ĕçчен çын вăл. Унăн пурнăçра темĕнле ĕçпе те çыхăнма тивнĕ. Çамрăк чухнех плугпа суха та тунă, çурлапа тырă та вырнă, тăпачăпа авăн та çапнă. Мария Зиновьевна техникăлла культурăсене акса тăвакансен звеньевойĕ те пулнă, сысна ферминче те ĕçленĕ.

Совпартшкултан вĕренсе тухсан, вăл пĕр хушă КПСС Канаш райкомĕн инструкторĕ, Вăрăмпуç ял Совет ĕçтăвкомĕн секретарĕ пулчĕ, каярахпа ăна çав ялтах «Путь Ленина» колхозра уй-хир бригадин бригадирĕ пулма уйăрса лартрĕç.

Унтанпа ĕнтĕ чылай çулсем иртрĕç. Маларах кая юлса пынă бригада М.Зиновьева ертсе пыма тытăннă хыççăн вăйлă тырпул туса илекен пулчĕ. Çавăншăн ĕнтĕ бригадира СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ «Ĕçри хастарлăхшăн» медальпе наградăларĕ.

Мария Зиновьевна ертсе пыракан бригада иртнĕ çулта уйрăмах ӳсĕм турĕ, вăтам шутпа кашни гектартан 15-шер центнер тĕш тырă туса илчĕ, ытти енĕпе те çитĕнӳсем турĕ...

Мария Зиновьева производствăра ырми-канми тăрăшнипе пĕрлех обществăлла ĕçе те активлăн хутшăнть. Вăл - ял Совечĕн депутачĕ.

Районти парторганизаци конференцийĕнче М.З. Зиновьевăна облаçри XXXIII партконференцие кайма делегата суйларĕç».

**М.Зиновьева çырнă «Тытăнсан – пултаратпăрах» статьяран («Коммунизм ялавĕ» хаçатран, 1969 çул, январĕн 10-мĕшĕ):**

«Кăçалхи мартăн 5-мĕшĕнче эпĕ хĕрĕх тултаратăп. Иртсе кайнă çулсем çине çаврăнса пăхсан, аса илмелли пайтах.

«Ӳрĕк-сӳрĕк ĕçлесе, çынна култарас марччĕ», – текен шухăш алла çурла тытма пуçланăранпах пуçран тухман. Ку

*1974 çул*





*«Канаш» колхоз председателĕ В.И.Дмитриев, Социализмла Ĕç Геройĕ В.Д.Димитриева, В.Н.Платонов, Сиккасси больницин тĕп врачĕ З.Н.Волков*



Руслан амăшĕпе, 1979 çул





КПСС Чăваш обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ И.П. Прокопьев М.З. Зиновьевăна Социализмла Ĕç Геройĕн наградине парать, 1977 çул





*Социализмла Ĕç Геройĕсем: М.З.Зиновьева тата С.Л.Лукин, 1977 çул*



*А.Д.Демьянов бригадир çуралнăранпа 50 çул çитнине паллă тăваççĕ, 1979 çул, сентябрĕн 2-мĕшĕ*



*Облаçри партконференци делегачĕсем 1971 çул, февралĕн 18-19-мĕшĕсем, М.З.Зиновьева малти ретре ларать*

тарана çитсе колхозри пĕр ĕçе те «Аларан кайса пултăр» тесе туман, çакăншăн халăх умĕнче хĕрелсе курман. Ялти мĕнпур вăйпитти арçынсем нимĕç фашисчĕсене хирĕç çапăçнă çулсенче эпир, çитĕнсе çитмен хĕрачасем, хĕвел тухиччен вырма каяс тесе, автан ларакан кашта çывăхĕнчи лупас çинче çывăраттăмăр. Ун пек чухне шанчăклăрах: автан çывăрса юлма памасть.

Хĕлле колхоз ферминчи выльăхсем валли çырма тĕпĕнчен кĕвентепе 30-40 çĕклем шыв йăтаттăмăр. Çавăнпа эпĕ паянхи хăш-пĕр çамрăксене фермăсенчи механизацисене упрама пĕлменнишĕн асăрхаттармасăр тăма пултараймастăп.

1950 çулта эпĕ кок-сагыз ӳстерекен звенона ертсе пытăм. Халиччен вăл чăваш çĕрĕ çинче пулман: çĕр улми мар, купăста та мар. Малтанах ятне калама та чĕлхе çаврăнмастчĕ. Кок-сагыз çинчен çырнă кĕнекене звенипех пухăнса вулаттăмăр. Звено районта чи мала тухрĕ. Каярахпа мана Шупашкара вĕренме ячĕç, ун хыççăн ялта бригадир пулса ĕçлерĕм, качча тухсан упăшкапа пĕрле Канаш районĕнче пурăнма тытăнтăмăр. Эпир иксĕмĕр те агроном. Çавăнпа та упăшкана колхоз агрономĕ туса хучĕç, мана вара ниепле те ĕç памаççĕ. «Бригадирсем юрăхсăр сирĕн. Ялта эпĕ чиперех ĕçленĕ», – тетĕп колхоз правленийĕнче. Анчах мана ниепле те итлемеççĕ. «Хĕрарăм пирĕн ялта халиччен бригадирта ĕçлемен тата пултарас та çук». Миçе хутчен çапла каламарĕç пулĕ мана хирĕç! Çав вăхăтрах арçын бригадирсене ĕçкĕпе иртĕхнĕшĕн виçшер уйăхранах кăларса пăрахатчĕç. Юлашкинчен ялти хĕрарăмсем колхоз правленине кая-кая йăлăнма пуçларĕç: «Зиновьевана лартăр!»

«Парăнчĕç» вара колхоз правленийĕнче. Бригадир ĕçне эпĕ 1958 çултан туса пыратăп. Арçын бригадирсем гектартан ултшар центнер тырă туса илнĕ хирсем халĕ пире 17-шер центнер тырă параççĕ. Колхозниксем хушшинче ĕç дисциплини çирĕпленсе çитрĕ. Мана ĕçре пулăшса пыракан активистсем çулсерен нумайланаççĕ. Çавăнпа вăйлă та пирĕн бригада.

Колхоз производствине ертсе пыма ача-пӑчасӑр хӗрарӑмсем ҫеҫ пултараҫҫӗ тенине сахал мар илтнӗ эпӗ. Анчах манӑн виҫӗ ача. Ку ҫырӑва эпӗ мухтавлӑ сӑмах илтесшӗн ҫырмастӑп. Урӑххи хумхантарать мана. Сахал-и ялсенче пултаруллӑ хӗрарӑмсем! Бригадирсемпе ферма заведующийӗ-сене вара вӗсем хушшинче шыраса тупма та кансӗр. Сӑлтавӗ– колхоз правленийӗнче «хӗрарӑм ӗҫлей-мест пулӗ» тенинче ҫеҫ.

«Колхоз производствинчи ертсе пымалли вырӑнсенчен ан хӑрӑр, хӑвӑрӑн вӑй-хала тӗрӗс хаклама пӗлӗр! Тытӑнсан, эсир те пултаратӑр!» – тесшӗн эпӗ тантӑшсене.

**В. Чернов журналист ҫырнӑ «Колхоз бригадирӗ» тӗрленчӗкрен («Коммунизмшӑн» хаҫат, 1969 ҫул, мартӑн 12-мӗшӗ):**

«Путь Ленина» колхозри уй-хир бригадирӗ Мария Зиновьевна Зиновьева ҫӗр ӗҫченӗ ӗҫӗ мӗнле иккенне ачаранах пӗлнӗ. Ашшӗ гитлерла вӑрӑ-хурахсене хирӗҫ ҫапӑҫма фронта тухса кайсан, амӑшӗ тӑхӑр ачапа тӑрса юлнӑ хыҫҫӑн, унӑн Ҫӗрпӳри педучилищӗрен вӗренме пӑрахма тивнӗ, вӑл вара тӑван колхозра сыснасем пӑхма тытӑннӑ. Тепӗр икӗ ҫултан вӑл звенона, кайран уй-хир бригадине ертсе пынӑ. Бригада начаррисен шутӗнче пулман, анчах та хӗрӗн вӗренес кӑмӑлӗ чакман, вӑл вара Чӑваш ял хуҫалӑх шкулне ҫул тытнӑ. Виҫӗ ҫул тӑрӑшса вӗреннӗ хыҫҫӑн агроном дипломне илсе таврӑннӑ.

Юлашки вунӑ ҫул хушши Зиновьева бригадӑна ертсе пырать, ку бригада районта ҫӗр ӗҫченӗсен ӑмӑртӑвӗнче малта пырать. Пилӗкҫуллӑхӑн виҫҫӗмӗш ҫулӗнче, сӑмахран, унӑн бригади пӗтӗм лаптӑк ҫнчен гектартан 16,3 ц тӗш тырӑ, 360 ц выльӑх кӑшманӗ пухса кӗртнӗ. Ҫак ҫул валли тата пысӑкрах чикӗсем палӑртнӑ. Бригадӑри ӗҫченсем ҫитес ҫур акине лайӑх хатӗрленсе кӗтсе илеҫҫӗ, вӑрлӑх I-II класлӑ. Вырӑнти тата минераллӑ удобренисем сахал мар хатӗрленӗ тата турттарса кӑларнӑ, кадрсене ӗҫе вырнаҫтарса тухнӑ. Вӑрӑмпуҫсем иртнӗ суйлавра М.Зиновьевӑна вырӑнти Совета депутата суйламса ун ҫине пысӑк шанӑҫ хунӑ. Халӗ

те унӑн кандидатурине икӗ Совета – ял тата район Советне депутата суйлама регистрациленӗ.

Виҫӗ ача амӑшӗ Мария Зиновьевна колхозлӑ ялӑн обществӑлла пурнӑҫне активлӑ хутшӑнать. Вӑл ял Совет ӗҫтӑвкомӗн членӗ, хӗрарӑмсен совечӗн председателӗ. Ҫапла пур ҫӗре те ӗлкӗрет, ҫынсен шанӑҫне тӳрре кӑларать.

Чӑнах та, Мария Зиновьевна пур ӗҫе те пӗтӗм чун хавалӗпе туса пырать. Калӑпӑр, нумай ҫӗрте хӗрарӑмсен совечӗсем ячӗшӗн кӑна шутланса тӑраҫҫӗ, хӑш-хӑш вырӑнта вара унта камсене суйланине те никам та пӗлмест».

**«Путь Ленина» колхозри хӗрарӑмсен совечӗн председателӗ М.Зиновьева ҫырнӑ «Колхозри хӗрарӑмсен совечӗ» заметкӑран («Коммунизмшӑн» хаҫат, 1969 ҫул, апрелӗн 23-мӗшӗ):**

«Ҫак ҫул пуҫламӑшӗнче «Путь Ленина» колхозри хӗрарӑмсен совечӗн ҫӗнӗ составне 11 ҫынтан суйласа хӑварчӗҫ. Совет шкулти учительницӑсенчен, дояркӑсенчен, культура работникӗсенчен тата рядовой колхозницӑсенчен тӑрать.

Совет планпа ӗҫлет. Унӑн ларӑвӗсене колхозлӑ ял пурнӑҫӗнчи тӗрлӗ ыйтусене пӑхса тухатпӑр, тивӗҫлӗ решенисем йышӑнатпӑр. Нумаях пулмасть ирттернӗ хӗрарӑмсен пухӑвӗнче колхозницӑсем кӑҫал та пысӑк тухӑҫлӑ тӗш тырӑ, ҫӗр улми туса илес енӗпе обязательствӑсем йышӑнчӗҫ. П.Владимирова, О.Сергеева, Е.Соловьева, А.Петрова, Р.Владимирова колхозницӑсем нихҫанхинчен хастар ӗҫлеҫҫӗ.

Бригадӑсенчи хӗрарӑмсен пухӑвӗсене кашни уйӑхрах ирттересси пирӗн йӑлана кӗнӗ ӗнтӗ. Ҫав пухусем хыҫҫӑн спектакль е концерт лартса паратпӑр. Эпир ятарласа хор тата драма кружокӗсем йӗркелерӗмӗр. Вӗсен ӗҫне Р.Аристархова, Е.Павлова, Л.Васильева, В.Николаева активлӑ хутшӑнаҫҫӗ.

Совет кӑларса тӑракан «Колхозница» стена хаҫачӗ хӗрарӑмсен ырӑ ӗҫне анлӑн ҫутатать тата пире малалла кайма чӑрмантаракан ҫитменлӗхсене тупса критиклет».

**М.З.Зиновьева çырса пынă кун кĕнекинчен:**

«1969 çул та иртсе кайрĕ. Эпĕ 40 урлă каçрăм ĕнтĕ. Пирĕн хуçалăх самай пысăк çитĕнӳсем турĕ. Çакăнта эпĕ ертсе пыракан бригадăн тӳпи пĕчĕк мар пулнăшăн пĕтĕм чунтан, кăмăлтан савăнатăп... Кунĕн-çĕрĕн тăрăшни, вăй хуни, тар тăкни, пилĕке авни, тимлени ахаль пулмарĕ. Пирĕн алран кайми ĕçе-хĕле çӳлти органсем те асăрхарĕç, тавах вĕсене...

...1969 çулхи февраль уйăхĕнче Н.А.Яковлев заявлени парса механикрен тухрĕ, механик пулма А.В.Капитонова çирĕплетнĕ. В.П.Абрамов ĕçе тухмасăр пурăннă пирки ăна хăтарнă, ун вырăнне Анна Дмитриевна Демьяновăна лартрĕç. Экспедитор пулса ĕçленĕ Лазарь Семенов пĕр уйăх ĕçлесенех ывăнчĕ те ĕçлеме пăрахрĕ, ун вырăнне вара Егор Сахтерова хушрĕç. Вăл 1969 çулхи январĕн 30-мĕшĕччен ĕçлерĕ, унтан 8 кун ĕçе тухманшăн ăна хăтарчĕç, ун вырăнне Василий Дмитриева лартрĕç..»

**«Ĕçри çитĕнӳсемшĕн – Хĕрлĕ ялав» статьяран («Коммунизмшăн» хаçат, 1969 çул, декабрĕн 19-мĕшĕ):**

«Çак кунсенче «Путь Ленина» ял хуçалăх ертелĕнчи уполномоченнăйсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта артель председателĕ В.Платонов социализмла обязательствăсене пурнăçлас енĕпе çĕр ĕçченĕсемпе выльăх-чĕрлĕх пăхакансем мĕнле ĕçлени çинчен доклад туса пачĕ.

– Пирĕн колхоз членĕсем В.И.Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнине тата Чăваш республики 50 çул тултарнине ĕçри пысăк ӳсĕмсемпе кĕтсе илессишĕн çине тăрса ĕçлеççĕ, – терĕ докладчик. – Кăна эпир РСФСР Министрĕсен Совечĕпе ВЦСПСăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илни те лайăх çирĕплетсе парать. Артель юлашки çулсенче тырпул тухăçне ӳстерес енĕпе çирĕп утăмсемпе малалла каять. Кăçал кашни гектартан 25,8 центнер, е пĕлтĕрхинчен 9,5 центнер нумайрах тырпул пухса кĕртрĕмĕр. Государствăна 3 план чухлĕ ытларах тырă сутрăмăр, кирлĕ таран вăрлăх, фураж тата ытти фондсем хывса хăварнă.

Тыр пул тухăçне ӳстерес енĕпе Мария Зиновьева ерт-

се пыракан пĕрремĕш бригада ĕçченĕсем лайăх ĕçленине палăртмалла. Кунта нумай культурăсен тухăçĕ 30 центнера çитнĕ. Сăмахран, 59 гектар çинчен кашни гектартан 39 центнер сĕлĕ пухса кĕртнĕ.

Вăйлă тырпулшăн пыракан кĕрешӳре механизаторсем ырми-канми ĕçлерĕç. Сăмахран, А.Гаврилов комбайнер 7 пин центнер ытла тырă çапрĕ, республикăри Хисеп хăми çине кĕме тивĕçлĕ пулчĕ. Н.Иванов, А.Николаев шоферсем, В.Швецов тракторист тата ыттисем ĕçре пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх пăхакансем те хăйсем çине илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Уйрăмах Р.Владимирова, О.Никифирова, Р.Аристархова дояркăсем, М.Федотова сысна пăхакан, М.Владимирова, А.Русакова чăх-чĕп пăхакансем, В.Степанова, Е.Петрова сурăх пăхакансем ĕçре пысăк пултарулăх кăтартнине палăртмалла. Артель выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем сутмалли пилĕк çуллăх плана виçĕ çул та 11 уйăхра пур енĕпе те ирттерсе тултарчĕ...

...Пухура колхоз механикĕ А.Константинов, Н.Яковлев механизатор, М.Степанова зоотехник, Вăрăмпуç ял Совечĕн депутачĕ А.Павлова тата ыттисем тухса каларĕç.

Чăваш АССР ял хуçалăх министрĕн заместителĕ Н.Андреев юлташ тырпула ăнăçлă пухса кĕртессишĕн тата государствăна планран ирттерсе тырă сутассишĕн пынă Пĕтĕм Российăри социализмла ăмăртура мала тухнăшăн колхоза РСФСР Министрĕн Совечĕпе ВЦСПСăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне пачĕ.

Колхоз ĕçченĕсем В.И.Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнине тата Чăваш АССР 50 çул тултарнине тивĕçлипе кĕтсе илессишĕн ăмăртса хăйсем çине социализмла çĕнĕ обязательствăсем йышăнчĕç».

**М.З.Зиновьева 1969 çулта çырса пынă кун кĕнеки патне таврăнар-ха:**

«Куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавпа колхоза 1500 тенкĕ укçан премилерĕç. Патшалăха планпа палăртнă 860 центнер тырă вырăнне 2660 центнер ăсатнă, çĕр улми 1850 центнер вы-

рăнне 3164 центнер, 410 центнер пахча çимĕç (100 процент).

Кашни 100 гектар çĕр пуçне 188 центнер сĕт туса илнĕ, кашни ĕнерен 2208 килограмм сĕт сунă, 100 гектар çĕр пуçне 52,5 центнер аш-какай туса илнĕ, 64 килограмм çăм каснă, е кашни сурăхран 4-шар килограмм. Çавăн пекех сухалакан 100 гектар çĕр пуçне 20,3 пин çăмарта е кашни чăхран 189 штук çăмарта илме пултартăмăр.

...Октябрĕн 13-мĕшĕнче мана «Отличник социалистического соревнования сельскохозяйственного производства» знакпа наградăларĕç. Район «Мастер высоких урожаев зерновых культур» ята пачĕ. Çак ята А.Д.Демьянов бригадир та тивĕçрĕ. В.Степанова сурăх пăхакан парне илме тивĕç пулчĕ.

Вăрăмпуç ялĕнче 1969 çулта кладовщикра Алексей Игнатьев ĕçлерĕ, ўрĕк-сўрĕк ĕçленĕшĕн ăна ĕçрен кăларчĕç, ун вырăнне Иван Дмитриева лартрĕç.

Кадрсене вĕрентес енĕпе Вăрнарти бригадирсене вĕрентмелли курса Мария Васильевна Александровăна янă, пахча çимĕç, сад ĕрчетекенсен курсне – Николай Михайлович Яскова, Чăваш ял хуçалăх институтĕнчи 6 уйăхлăх курса мана вĕренме ячĕç, Етĕрнери профтехучилищĕрен мастер-наладчик пулма Алексей Захаров вĕренсе килчĕ...

1969 çулта колхозри строительсен бригадирĕ В.А.Афанасьев ертсе пынипе 500 тонна тырă кĕмелĕх склад, 40 пуç сысна ами валли вите, Пĕршенер ферминче кормоцех хута кайнă, кирпĕч кăларакан заводăн çавракана кăмака тăрне витсе лупас туса лартнă. Кĕркунне вара ял Совет ĕçтăвкомĕн çуртне туса пĕтерсе хута янă.

Пушар сўнтермелли машина, ГАЗ-52 автомашина (шоферĕ Н.И.Иванов), ДТ-75 трактор (тракторист Василий Швецов), МТЗ-50 трактор (унпа Силодор Васильев ĕçлет) туяннă...»

***

М.З.Зиновьева, вулакансем асăрхарĕç пулĕ, хăйĕн пуян опытне нихçан та ыттисенчен пытарман, ăçта май килнĕ - çавăнта каласа пама тăрăшать; вĕрентсе «тăн» парса

тăмасть вăл, е сăмах май калать, е шӳтлесе, кулса илет, е тата ытти майсемпе, меслетсемпе усă курать. Хăйĕн шухăшĕмĕчĕсене, тĕллевĕсене халăх патне çитерес тесен вара - пуян арсенала хута ярать: ăçта халăх пухăнать - çавăнта сăмах-юмах тапратать Мария Зиновьевна. Ку çеç те мар, колхозри стена хаçатĕнчен пуçласа Канашри пĕрлештернĕ «Коммунизмшăн» хаçат, республикăри «Коммунизм ялавĕ» хаçат таранах унăн пĕчĕк заметкисемпе корреспонденцийĕсем, статйисем, «Страница-плакатсем», отчетсем, интервьюсем тухсах пыраççĕ. Чăваш кĕнеке издательстви унăн «Çĕре юратсан» брошюрине те пичетлет (Шупашкар, 1978).

Çакна та палăртмалла: хăйĕн пуян ĕç опытне ыттисене памалли тепĕр майпа та Мария Зиновьевна калама çук туллин усă курнă: колхозри, районти радиопа, Чăваш радиора та унăн сасси вуншар хут янăраса тăнă, телепередачăсене те хутшăннă.

**М.З.Зиновьевăн «Тĕллев - çĕнĕ çитĕнӳсем патне» корреспонденцийĕнчен («Коммунизмшăн» хаçат, 1969, октябрĕн 17-мĕшĕ):**

«Пысăк çитĕнӳсемпе вĕçлерĕç кăçалхи ĕç çие пирĕн бригада членĕсем. Колхоз историйĕнче пĕрремĕш хут нихçан пулман вăйлă тыр-пул çитĕнчĕ. 2-3 çул хушшинче тыр-пул тухăçĕ шăпах икĕ хута яхăн ӳсрĕ. Бригада кăçал кашни гектартан 13,7 центнер тырă туса илме палăртнăччĕ. Пĕтĕм тыр-пула кĕлетсене кĕртсе пĕтерсен çакă палăрчĕ: кашни гектартан - 25-шер центнер тырă! Хăш-пĕр уйсем вара тата ытларах савăнтарчĕç. Сĕлĕ уйрăм лаптăксенче кашни гектартан 42-шер центнер тухрĕ. Ырашпа урпа тухăçĕсем 30 центнера яхăн.

Мĕнле турăмăр-ха эпир ку çитĕнӳсене? Вăхăтра сухаласа хăварнă кĕрхи çĕртме – вăйлă тыр-пул никĕсĕ, теççĕ. Эпир çакна çирĕп асра тытрăмăр. Иртнĕ çул çĕрсене вăхăтра та кĕске сроксенче сухаласа хăвартăмăр. Хĕлле те вăйлă тыр-пул туса илес ĕмĕтпе çеç пурăнтăмăр. Бригадăра агрокружок ĕçлерĕ. Унта механизаторсем те, колхозниксем те пысăк кăмăлпа çӳрерĕç. Уй-хир ĕçĕсем пуçлансан вара

вĕсем агрокружок занятийĕсенче илнĕ пĕлӳсемпе анлăн усă курчĕç. Çур акине вăхăтра ирттернĕ. 1-мĕшпе 2-мĕш класлă вăрлăхсем çеç акăнса юлчĕç. Ыраш уйĕсене çĕр типсенех сӳрелесе çемçетнĕ. Калчасене шăтса тухсан, уйхирсене çум курăкран тасатнă. Акса хăварнă пур лаптăксене те удобренисемпе апатлантарнă. Çаксем пулаççĕ те ĕнтĕ кăçалхи вăйлă тыр-пулăн «вăрттăнлăхĕсем». Пирĕн бригада ĕçченĕсем тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармаççĕ. Çитес çул тата вăйлăрах тыр-пул туса илесси, çапла вара В.И.Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнине тата Чăваш республики çур ĕмĕр тултарнине тивĕçлипе кĕтсе илесси – пирĕн паянхи тĕп тĕллев».

В.И.Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май ял çыннисен пысăк ушкăнне (59 çынна) «Ĕçри хастарлăхшăн» медальпе наградăлаççĕ, вĕсем хушшинче колхоз председателĕ В.Н.Платоновпа 1-мĕш уй-хир бригадирĕ М.З.Зиновьева та пур. «Коммунизмшăн» хаçатра ун пирки Указ пичетленет (1970 çул, апрелĕн 14-мĕшĕ):

Ăмăртура çитĕнӳсем тунăшăн КПСС райком бюровĕпе ĕç çынни депутачĕсен район Совет ĕçтăвкомĕн постановленийĕ тăрăх 30 çынна районти Хисеп хăми çине кĕртеççĕ, вăл шутра М.З.Зиновьева та пур.

**М.З.Зиновьева çырса пынă кун кĕнекинчен:**

«1970 çулта колхоз кашни гектартан 23,1 центнер тĕш-тырă туса илчĕ, вăл шутра кĕрхи тулă 24,1, ыраш 16,8, çурхи тулă 24,7, урпа 31,8, сĕлĕ 29,9, пăрçа 22,7. Çĕр улми тухăçĕ 190 центнер пулчĕ, пахча çимĕç 269, тымар çимĕç 394, кукуруза 326. 1-мĕш бригадăра тĕш тырă тухăçĕ 25,5 центнер, 2-мĕшĕнче - 20,0, çĕр улми 1-мĕш бригадăра гектар пуçне 210 центнер тухрĕ, 2-мĕшĕнче - 165, кăшман 1-мĕш бригадăра 522 центнер, 2-мĕшĕнче - 200. Уйрăм культурăсемпе илес пулсан çакăн пек: пирĕн бригадăра кĕрхи тулла 35 гектартан 35-шер центнер çапса тĕшĕлерĕмĕр, 60 гектар урпа 33-шер центнер пачĕ, 60 гектар çинчи çурхи тулă тухăçĕ - 29,5 центнер, 70 гектар йышăннă ыраш тухăçĕ 20-шер центнерпа танлашать.

Раиса Владимирова доярка ĕне пуçне 2561 килограмм сĕт суса илчĕ, Ольга Никифорова 2512, Раиса Александрова 2463, Зинаида Рыбкина 2461 килограмм сурĕ. Анна Андреева кашни сысна аминчен 19-шар çура илсе колхозра мала тухрĕ...

Учетпа отчет ĕçне япăхлатнăшăн Иван Осипова ферма заведующийĕнчен кăларнă, ун вырăнне Мария Васильевна Александровăна çирĕплетнĕ.

1970 çулта строительсен бригадин бригадирĕ В.А. Афанасьев ертсе пынипе Вăрăмпуçĕнче 80 пуç ĕне валли вите, механизациленĕ йĕтем туса хута янă, кирпĕч заводĕнче Константин Кузьмин ертсе пынипе пĕр миллион кирпĕч кăлармалла тунă, кăмакине купаланă, виçĕ сарай çĕкленĕ. Цех начальникĕ Николай Аницов, Иван Трофимов механик (Тракка Ваньки) кирпĕч кăларнă çĕрте нумай вăй хунă.

Пĕршенерте 500 тонна тырăлăх склад тунă, Валентин Беловпа Герман Сергеев трактористсем 900 метр тăршшĕ тăпра хăпартса автомашинăсене хĕлле çӳремелли çул тунă. Икĕ çĕрте кĕпер тунă. Дт-75, Д-25, МТЗ-52 тракторсем, СК-4 комбайн, сĕт турттармалли автомашина туяннă...»

**М.З.Зиновьевăн «Уй-хир ĕçĕсене вĕçленĕ» статйинчен («Коммунизмшăн» хаçат, 1970 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕ):**

«Бригада çитĕнĕвĕсем пуринчен ытларах колхозниксем вăй хурса ĕçленинчен килеççĕ. Анчах ертсе пыраканăн тӳпи те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Эсĕ коллектива епле йĕркелесе ĕçе явăçтаратăн, уй-хирти агромероприятисене мĕнлерех пурнăçласа пыратăн – шăпах çакăнтан килеççĕ ĕнтĕ бригада ӳсĕмĕсем.

Эпир пилĕк çуллăхăн юлашки çулĕнче пĕчĕк мар обязательствăсем йышăнтăмăр... Кăçал çуртрисене пĕтĕмпех пĕрремĕш класлă вăрлăхсемпе тата агротехникăлла лайăх срокра акнă. Ку тĕлĕшпе Герман Сергеев тракторист пысăк тăрăшулăх кăтартса ĕçлерĕ. Унăн ĕçне комисси 4,8 балл парса хакларĕ. Акмалли лаптăксем çине кашни гектар пуçне 3 центнер аммиак шывĕ тата 25 килограмм пĕрчĕлетнĕ

суперфосфат сапнă. Çĕр улми уйĕсене те 3-шер центнер нитрофоспа апатлантарнă. Лартас умĕн çĕр улмине тепĕр хут сортланă...

...Ял хуçалăх работникĕсен кунне уй-хирти пĕтĕм ĕçсене вĕçленипе кĕтсе илтĕмĕр. Тыр-пулпа тымар çимĕç тухăçĕ сем обязательствăпа пăхнинчен чылай пысăкрах... Ăнса пулнă тырпула вырса пухнă çĕрте Алексей Родионов, Валерий Внучков, Федор Аницов комбайнерсем пысăк хастарлăхпа ĕçлерĕç, ĕç çире пулăшма кӳршĕ колхозсене те кайрĕç.

Çĕр улми кăçал кашни гектартан 200 центнер кăларса пухнă. Ăна хатĕрлемелли çулталăкри плана бригада 4 хут ирттерсе пурнăçларĕ. Выльăх кăшманĕ вара уйрăмах тухăçлă çитĕнчĕ. Чылай çулсем хушши ĕçлетĕп ĕнтĕ эпĕ бригадир пулса, анчах вăл кăçалхи пек пысăк тухăç панине ас тумастăп: кашни гектартан - 520 центнер! Çакăншăн пирĕн колхозниксем – Пелагея Владимирова, Ольга Сергеева, Таисия Терентьева, Ольга Константинова т.ыт.те. чăннипех мухтава тивĕçлĕ...»

«Путь Ленина» колхозри колхозниксен пысăк ушкăнне В.И.Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май «Ĕçри хастарлăхшăн» медальпе наградăлаççĕ.

**«Коммунизмшăн» хаçатри «Бригадир» ум статьяран (1971 çул, январĕн 6-мĕшĕ):**

«Путь Ленина» колхозри пĕрремĕш бригадăра колхозниксен пухăвĕ пырать. М.Зиновьева бригадир ял хуçалăх çулĕн итогĕсемпе паллаштарать. Юбилейлă çулта çĕр ĕçченĕсем пысăк вăй хурса ĕçленĕ, кашни гектартан 15,5 центнер тыр-пул, 210 центнер çĕр улми пухса кĕртнĕ.

Доклад хыççăн колхозниксем пĕрин хыççăн тепри сăмах тухса калаççĕ. Вĕсем çитĕнӳсем пирки чарăнса тăнипе пĕрлех çитменлĕхсене тупса палăртаççĕ, вĕсене пĕтермелли майсене кăтартаççĕ, çĕнĕ рубежсем йышăнаççĕ. 1971 çулта кашни гектартан 26 центнер, пилĕкçуллăх вĕçленнĕ тĕле вара 30 центнер тĕш тырă, 250 центнер çĕр улми туса илме сăмах параççĕ.

Бригадăн çакăн пек çитĕнĕвĕ М.Зиновьева бригадир



1969 çул



1974 çул



М.З.Зиновьева района ертсе пыракансем хушшинче

*«Путь Ленина» колхозри колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче. Малти ретре КПСС Канаш райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Е.В.Роштов тата М.З.Зиновьева, 1977 çул*





*Малти ретре В.Н.Платонов, Артур, М.З.Зиновьева, тăраççĕ: Ираида, Михаил, Володя, 1975 çул, июнь*

Татьянăпа Михаил Платоновсем, 1989 çул, май





1970 çул



А.Д.Демьянов бригадир

Районти радиоорганизатор Р.И.Крутских М.З.Зиновьевăран интервью илет, 1975 çул, сентябрĕн 16-мĕшĕ





*М.З.Зиновьева (малти ретре сылтăмран тăваттăмĕшĕ), 1987 çул.*

хайӗн ӗҫне пӗлсе тунинчен килет. Вӑл ялти актив ҫине таянса ӗҫлет. Кашни уйӑхра колхозниксен пухӑвне ирттерессӗ. Унта ӗҫ планне пӑхса тухса ҫирӗплетессӗ. 11 ҫынран тӑракан бригада совечӗн членӗсем хуҫалӑхри ӗҫсене активлӑ хутшӑнаҫҫӗ...»

**И. Кузьмин журналистӑн «Бригадир» тӗрленчӗкӗнчен («Коммунизмшӑн» хаҫат, 1971 ҫул, мартӑн 30-мӗшӗ):**

«Путь Ленина» колхоз председателӗпе Василий Платоновпа правлени ҫуртӗнче калаҫса ларатпӑр.

- Кашни гектартан 10-12 центнер тӗш тырӑ пухса илни пире нимӗнле те ҫырлахтараймасть, пирӗн ҫӗршывра малта пыракан хуҫалӑхсем пек 20-30 центнер илме вӗренмелле, – пысӑк ӗмӗтпе калаҫать председатель.

Ҫав вӑхӑтра пӳлӗме вӑтам ҫулхи хӗрарӑм вӑркӑнса кӗчӗ.

- Мӗншӗн механизаторсем патне апат илсе тухман? - председатель ҫине тинкерсе пӑхрӗ хӗрарӑм.

- Ӑна санӑн пӗлмелле.

- Яла килме вӑхӑт ҫук вӗт, кунӗпе уйра ҫӳретӗп. Йывӑр ӗнтӗ сана механизаторсем валли апат илсе тухма калама, – хӗрарӑм урӑх каласа тӑмарӗ, хӑвӑрт тухса кайрӗ.

- Кам пулчӗ вӑл? – ыйтрӑм эпӗ.

- Бригадир, Мария Зиновьева. Харсӑр хӗрарӑм, кирек мӗнле ҫитменлӗхе те чӑтма пултараймасть.

Бригадира эпӗ тепӗр хут тулӑ акнӑ ҫӗрте тӗл пултӑм. Хам мӗншӗн килнине пӗлтерсен Мария Зиновьева ҫапла каларӗ:

- Кӗркунне килӗр, ун чухне ларсах пуплешӗпӗр. Тырри ӑнса пулсан калаҫма та лайӑх.

Бригадирпа малтанхи хут тӗл пулнӑранпа чылай ҫулсем иртрӗҫ ӗнтӗ. Унӑн ятне халӗ колхозра кӑна мар, районта та ырӑпа асӑнаҫҫӗ. Бригада ӗҫченӗсем ҫулсеренех пысӑк тухӑҫлӑ ял хуҫалӑх культурисем ҫитӗнтерессӗ. Пӗлтӗр,сӑмахран, кашни гектартан 25,5 центнер тӗш тырӑ, 200 центнер ҫӗр улми пухса кӗртнӗ.

- Кӑҫал кашни гектартан 26 центнеран кая мар тӗш тырӑ,

250 центнер çĕр улми пухса кĕртме задача лартрăмăр, – тет Мария Зиновьевна.

Бригадир яланах çĕннине шырать, малта пыракан опыта ĕçе кĕртме тăрăшать. Кунта пусă çаврăнăшне тĕрĕс йĕркеленĕ, вырăнти тата органикăллă удобренисемпе пĕлсе усă курaççĕ. Тислĕке фосфорит çăнăхĕпе хутăштарса компост тунă хыççăн кăна ана çине тăкаççĕ. Пĕтĕм лаптăк çине пĕрремĕш класлă вăрлăх кăна акаççĕ. Кăçал Мария Зиновьева ертсе пыракан бригада Тăвай районĕнчи «Советская Россия» колхозри Татьяна Смельцова бригадипе ăмăрту пуçарчĕ. Çĕр ĕçченĕсемпе выльăх-чĕрлĕх пăхакансем пĕр-пĕрин патĕнче темиçе хутчен те пулчĕç, хăйсен опычĕсемпе паллаштарчĕç.

Ĕçчен хĕрарăм ял хуçалăх культурисен тухăçне ўстерес енĕпе кăна мар чапа тухнă, вăл обществăлла ĕçре те ыттисене ырă тĕслĕх кăтартать. Бригадăри стена хаçачĕн редколлеги членĕ, хĕрарăмсен совечĕн председателĕ, художествăлла пултарулăх кружокне активлă хутшăнать.

Çапла пурăнать, ĕçлет ĕçчен хĕрарăм Мария Зиновьева коммунистка».

**«Хисеп – ĕçри хастарлăхшăн» заметкăран («Коммунизм ялавĕ» хаçат, 1971 çул, январĕн 26-мĕшĕ):**

«Канаш. Ял хуçалăхĕпе хатĕрлев ĕçĕнчи рабочисемпе служащисем профсоюзăн районти комитечĕ нумай пулмасть Хисеп кĕнеки йĕркелерĕ. Унта пилĕк çуллăх заданийĕсене ăнăçлă пурнăçланă, тўрĕ кăмăлпа вăй-хал хурса ĕçленĕ тата коллективсенче уйрăмах палăртнă çынсен ячĕсене çырса хураççĕ. Кĕнекене уçсан унта нумай-нумай çынсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллашма пулать. Вĕсенчен пĕри - «Путь Ленина» колхозри уй-хир бригадин бригадирĕ М.Зиновьева. Вăрăмпуçĕнче тивĕçлипех хисеплеççĕ ăна. Агроном специальноçĕ илнĕскер, вăл вун икĕ çул хушши ĕнтĕ бригадăна ăнăçлă ертсе пырать...

...Кăçал бригада тырă тухăçне 26-27 центнера çитерме ĕмĕтленет. Хастар коммунисткăна район тата ял Совечĕсен депутатне суйланă, вăл колхозри хĕрарăмсен советне ертсе

пырать. Районти партконференци М.Зиновьевăна облаçри XXXIV партконференцине кайма делегата суйларĕ...»

**«Халăхăн пысăк шанăçĕ» информацирен («Коммунизм ялавĕ» хаçат, 1971 çул, майăн 12-мĕшĕ):**

«Путь Ленина» колхоз членĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче партбюро секретарĕ В.Афанасьев 84-мĕш Вăрăмпуç суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама колхозри пĕрремĕш уй-хир бригадин бригадирне Мария Зиновьевна Зиновьевăна сĕннĕ, унăн биографиййе пе паллаштарнă. М.Зиновьева 20 çул бригадирта ĕçлет. Пĕлтĕр бригада кашни гектартан 26 центнер тĕш тырă, 200 центнер çĕр улми, 520 центнер выльăх кăшманĕ туса илнĕ.

Колхоз бухгалтерĕ И.Осиповăпа 2-мĕш уй-хир бригадин бригадирĕ А.Д.Демьянов «Путь Ленина» колхоз ĕçченĕсен ячĕпе М.З.Зиновьева кандидатурине ырласа каланă. Пухăва хутшăннисем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Мария Зиновьевна Зиновьевăна кандидата тăратма йышăннă".

**М.З.Зиновьева çырса пынă кун кĕнекинчен:**

«1971 çул. Çĕнĕ пилĕк çуллăх пуçланчĕ. Колхоз кашни гектартан 21 центнер тĕш тырă туса илчĕ. 1-мĕш бригадăра 22 центнер, 2-мĕшĕнче - 20. 50 гектар çинчен 110-шар центнер çĕр улми пуçтартăмăр, выльăх кăшманĕ 554-шар центнер тухрĕ. 2-мĕш бригадăра (бригадирĕ А.Д.Демьянов) çĕр улми гектар пуçне 98 центнер пуçтарнă, выльăх кăшманĕ- 240 центнер. Пирĕн бригадăра чи пысăк тухăç кĕрхи тулă пачĕ: 54 гектартан 35-шер центнер çапса тĕшĕлерĕмĕр.

Патшалăха 1660 центнер вырăнне 2277 центнер тырă сутса плана 137 процент тултарнă, çĕр улми 3266 центнер ăсатнă (113), пахча çимĕç сутмалли плана 20 процент çеç пурнăçланă. Аш-какай сутмалли плана 210 процент, сĕт - 114 процент, çăмарта - 126 процент, çăм сутассипе 172 процент тултарнă.

Кăçал В.Н.Платонова Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орден парса наградăларĕç.

1971 çулта силос вырмалли комбайн, автомашина,

«Москвич» çăмăл автомашина, МТЗ-50 трактор, экскаватор, тырă сортировки туяннă.

Механизациленĕ йĕтеме хута янă, пăру витине пысăклатнă, учительсем валли 4 хваттерлĕ çурт тума тытăннă, кирпĕч заводĕнче 3 сарай тунă, механизациленĕ заправка ĕçе янă, урапа-çуна лартмалли сарай çĕкленĕ.

Н.Никитин сварщик, В.Абрамов экономист, Л.Краснова осеменатор, Д.Демьянов, П.Антонов, В.Павлов, Н.Романов, Н.Иванов, А.Николаев водительсем тĕрлĕрен курссенчен вĕренсе килчĕç».

**В. Чернов журналистăн «Ăмăрту вăй хушать» статйинчен («Коммунизм ялавĕ» хаçат, 1972 çул, февраль):**

«Канаш районĕнчи «Путь Ленина» колхозри Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ М.Зиновьева ертсе пыракан тата Тăвай районĕнчи «Советская Россия» колхозри Т.Смельцова ертсе пыракан уй-хир бригадисем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Икĕ бригади те уй-хир ĕçĕсене агротехникăна пăхăнса туса ирттерме тăрăшаççĕ. Пĕлтĕр канашсем мала тухрĕç. Кашни гектартан 23,4 центнер тырă пухса кĕртрĕç вĕсем, çĕр улми тухăçĕ те аван.

Кăçал кунта гектартан 25 центнертан кая мар тĕш тырă, 130 центнер çĕр улми, 560 центнер выльăх кăшманĕ туса илме обязательство йышăнчĕç.

Мария Зиновьева коммунист бригади халĕ çур акине тухма пур енчен те тĕплĕн хатĕрленет. Вăрлăх пĕрремĕш класлă. Хире тислĕк кăлараççĕ, минераллă удобренисемпе аммиак шывĕ кӳрсе килнĕ. Юр тытаççĕ.

Тăвай районĕнчи «Советская Россия» колхозри Смельцова бригадинче те хĕрӳ ĕç пырать. Техникăна çур акине хатĕрлеççĕ. Колхозниксем агрокружока çӳреççĕ.

Бригадирсем пĕр-пĕринпе тĕл пулса калаçаççĕ, пĕр-пĕрин опычĕпе паллашаççĕ».

**М.З. Зиновьева çырса пынă кун кĕнекинчен:**

«1972 çулта колхоз кашни гектартан 24,9 центнер тĕш тырă туса илнĕ, 1-мĕш бригадăра гектар пуçне 26,3 центнер

тухăç пулнă, çĕр улми - 55 центнер, выльăх кăшманĕ - 314 центнер.

Патшалăха сутмалли плансене пурнăçланă: тĕш тырă - 109,6 процент, çĕр улми - 105, пахча çимĕç - 49,7 процент.

Сĕт сутмалли çулталăкри плана 103 процент тултарнă, аш-какай - 102, çăмарта - 120, çăм сутмалли плана - 101 процент.

Колхоз вăйлă тырпул туса илнĕшĕн РСФСР ялавне тата 1500 тенкĕ укçан преми илме тивĕç пулнă, тĕш тырă тухăçĕпе колхоз районта виççĕмĕш вырăна тухнă. Иван Павлович Павлова «Ĕçре палăрнăшăн» медальпе наградăларĕç. Василий Нямуков, Николай Яковлев, Николай Иванов, Иван Павлов, Селидор Васильев «Чи лайăх механизатор» ята илме тивĕç пулчĕç.

Екатерина Степанова, Роза Аристархова, Ольга Никифирова, Зинаида Рыбкина тата Валентина Лукина дояркăсем хăйсен обязательствисене чылай ирттерсе пурнăçларĕç.

Хуçалăх гусеницăллă трактор, тырă сортировки туяннă. Учительсем валли икĕ хутлă тăвата хваттерлĕ çурт туса пĕтернĕ, автогараж хута янă, пăру витине çырма енчен пăсса çĕнĕрен 36 метр тунă, газ баллонĕ лартмалли чул çурт лартнă, парк йĕри-тавра 420 метр карта тытнă, кĕлет пуçне çĕнĕрен 18 метр асфальт урай сарса кĕлет тунă. Пĕршенерте 7х5 м тырă хумалли склад купаланă. Сенаж хумалли хранилище тума пуçланă, кирпĕч заводĕнче сарай, мунча, пусă çĕнĕрен тунă...

Василий Абрамов экономист, Александр Капитонов инженер Шупашкарта уйăхлăх курссенчен вĕренсе килнĕ, Николай Алексеев электрик 1,5 уйăх газ ĕçĕпе вĕреннĕ...»

**Л. Решетников журналистăн «Человек славен трудом» очеркĕнчен («Советская Чувашия» хаçат, 1971 çул):**

«... Вот уже восемь лет, как коммунистка-агроном Мария Зиновьевна Зиновьева стала бригадиром колхоза в Новом Урюмове...

... Сколачивался коллектив, объединенный одной целью, – заботой об укреплении общественного хозяйства.

Этому способствовали также точный учет и четкая организация труда в бригаде.

Одновременно Мария Зиновьева вела целенаправленную линию на улучшение культуры земледелия. Начинала с элементарного, но исключительно важного – повышения ответственности механизаторов за качество полевых работ.Нелегко было приучить многих к такому спросу. Сколько раз разгорались страсти из-за непринятых бригадиром засеянных или обработанных участков! Но переделка брака без оплаты многих привела в чувство. А главное – люди видели результат требовательности – растущие урожаи. Ныне взыскательность бригадира стала той нормой, которая уже не кажется обременительной.

Механизаторы стали проводниками высокой агрономической культуры, которую двинула на поля бригады М.З.Зиновьева. Они освоили глубокую вспашку, разбросной сев, внесение аммиачной воды под давлением и другие передовые приемы. А разве без них возможно было бы увеличить внесение органических и минеральных удобрений в четыре раза? Мария Зиновьевна сумела увлечь их перспективой роста урожайности, и трактористы охотно ехали за туками по осеннему и весеннему бездорожью, компостировали и штабелировали навоз в любую стужу, осваивали новую технику для внесения минеральных удобрений, старательно мастерили приспособления для внесения аммиачной воды, прилежно учились на агрокурсах. Не на глазок, а по точным расчетам удобряют они теперь поля, сообразуясь с данными почвенной карты.

Вот и нынче внесены точно рассчитанные дозы аммиачной воды, суперфосфата, калийных и азотных туков, навоза и нитрофоски под свеклу, картофель, кукурузу, пшеницу, ячмень. Механизаторы заботливо выхаживали посевы, убрали в короткие сроки. Земля по-матерински щедро одарила своих сеятелей за труд: в первом году девятой пятилетки в бригаде намолочено по 27-30

центнеров зерна с гектара, это – больше прошлогоднего. А озимая пшеница «мироновская-808» дала невиданный для здешних подзолов и суглинков урожай – по 34 центнера с гектара. Нынче посевы ее расширены вдвое.

- Урожай в бригаде, - сообщили в бухгалтерии, - за годы минувшей пятилетки почти удвоился.

Давно и последовательно проводит Мария Зиновьевна работу по сортообновлению. Высокоурожайные районированные сорта – одно из слагаемых высоких и устойчивых урожаев. И снова бригадир говорит спасибо механизаторам, которые одними из первых в районе перешли от простой очистки к калибровке семян. Уже несколько лет бригада М.Зиновьевой является семеноводческой, снабжает первоклассными семенами весь колхоз и немало сортового зерна продает государству, принося хозяйству дополнительный доход.

… С весны, как начинаются полевые работы, и до осени,пока позволяют дороги, Мария Зиновьева колесит по полям на велосипеде. Загорелая, стремительная в движениях,она успевает бывать всюду, встречается с множеством людей. Вот и в этот раз, в разгар жатвы, я разыскал ее на зерноочистительном току. Машиновед Петр Мардарьев говорил:

- Улучили свободную минуту и толкуем о колхозных делах. Мария Зиновьевна рассказывает, как в других колхозах района уборка идет. Послушать ее всегда интересно…

У бригадира хорошее настроение, улыбчивое лицо. Ее радует, что урожай по сравнению с первым годом минувшей пятилетки почти удвоился, что люди работают с небывалым подъемом. Мария Зиновьевна называет творцов высокого урожая – трактористов Алексея Яковлева и Селидора Васильева, Семена Аристархова и Германа Сергеева,комбайнеров Николая Родионова и Валерия Внучкова, колхозниц Марию Прокопьеву, Евдокию Васильеву. Могла бы назвать и многих других.

В связи с массой, в умении поднять ее на ударный труд – сила коммунистки М.З.Зиновьевой. А еще неотразимо действует личный пример трудолюбия и принципиальности. Именно то качество ее характера подчеркивали в своих выступлениях колхозники на собрании, когда выдвигали М.З.Зиновьеву в Верховный Совет Чувашской АССР. Высокая честность, непримиримость к недостаткам – вот что создает ей авторитет у сельчан. И очень многие стараются следовать примеру бригадира. Как-то пришла к ней Ольга Сергеева и говорит:

- Мария Зиновьевна, мой-то Костя совсем изолодырничался. Хочу я завтра на собрании его в оборот взять – домашние уговоры без пользы. Может, при народе лучше, как ты думаешь? И подсоби своим словом…

Вот так советуются с бригадиром и помогают ему десятки колхозников. Это и механизатор Николай Романов, и колхозница Пелагея Владимирова, и секретарь исполкома сельсовета Валентина Павлова. Люди идут к Марии Зиновьевне и как председателю женсовета, депутату и просто как и душевной соседке. И разве не поучительно потолковать с женщиной, у которой, несмотря на постоянную занятость общественными делами, растут трудолюбивые дети и в семье хорошая, завидная дружба. А что иной раз поспорят они с мужем-председательем из-за несогласия по какому-нибудь колхозному делу, это не в счет. Их роднит главное – забота об общественном хозяйстве. Не потому ли, что общие у нее с односельчанами горести и радости – так сердечно поздравили они Марию Зиновьевну с получением нынче ордена Ленина? Приехав из Канаша, где ей вручали награду, она сняла праздничный наряд и пошла в контору колхоза – оформить наряды. Думала: время вечернее, поработает без помех. Но у входа в клуб ее встретила группа колхозниц. Они наперебой заговорили:

- Давно тебя ждем, Маруся, от души поздравляем. Ну-ка, расскажи, как и что там было, кого еще наградили,

кроме нас?

Женщины дружески подтрунивали по поводу ее сияющего радостного лица, слышалось полусерьезное «С тебя причитается», смех, шутки. И в этом внимании и в этом будто мимоходом спрошенном о награде «Кроме нас» - во всем Мария Зиновьевна ощущала умом и сердцем свою причастность к коллективу людей, своим трудом любовно преобразующих землю. И счастлив человек, чувствующий плечо друга в этом общем строю, в большой работе, которой сильна его страна».

**М.З. Зиновьева çырса пынă кун кĕнеки патне таврăнарха:**

«1973 çул вĕçленчĕ. Пирĕншĕн питĕ лайăх çул пулчĕ. Колхоз кашни гектартан 33 центнер тĕш тырă çапса кĕртме пултарчĕ, çĕр улми 300 центнер, выльăх кăшманĕ 900 центнер илнĕ. Ку кăтартусем районта чи лайăххи. 1973 çулхи çитĕнӳсемшĕн колхоза СССР ял хуçалăх министерствин куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тата автобус парне панă. Пĕрремĕш бригада СССРта мала тухнăшăн Грамота тата укçан 1000 тенкĕ преми илме тивĕç пулнă... Герман Сергеева Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденпа наградăларĕç, Александр Демьянов, Анна Козлова, Дмитрий Демьянов «Ĕçре палăрнăшăн» медальсем илме тивĕçрĕç. Василий Платонов, Василий Степанов «Ударник пятилетки» знаксем илчĕç...»

**«Орденсем панă» информацирен («Коммунизм ялавĕ» хаçат, 1973 çул, декабрĕн 27-мĕшĕ):**

«1973 çулхи декабрĕн 25-мĕшĕнче Советсен çурчĕн Пысăк залĕнче СССР орденĕсемпе медалĕсене панă.

СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ хушнипе тата унăн ячĕпе Чăваш АССР Верховной Совет Президиумĕн Председателĕ С.М.Ислюков СССР орденĕсемпе медалĕсене илме тивĕçлĕ пулнисен пĕр пысăк ушкăнне çав наградăсене панă. Вĕсене Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртура тунă çитĕнӳсемшĕн тата 1973 çулта тырăпа ытти ял хуçалăх продукчĕсем туса илессине, вĕсене государствăна сутассине ӳстерес тĕлĕшпе йышăннă обязательствăсене пурнăçлас

ĕçре пысăк хастарлăх кăтартнăшăн наградăланă. 6 çынна Ленин орденĕ пана: вăл шутра - «Путь Ленина» колхоз бригадирĕ М.З.Зиновьева...

....Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ С.М.Ислюков награда илнĕ юлташсене ăшшăн саламланă, вĕсене ыра сывлăхла пулма тата ĕç çыннисен ырлăхĕшĕн ĕçре çĕнĕ çитĕнўсем тума чĕререн ыра суннă...»

**М.З.Зиновьева çырнă кун кĕнекинчен:**

«...1973 çулта «МТЗ-50» трактор туяннă, Анатолий Матвеев механизатора çирĕплетнĕ, ДТ-75М трактор илнĕ, унпа Николай Яковлев ĕçлет.

Штатлă работниксем çавсемех ĕçленĕ. 1973 çулхи октябрĕн 29-мĕшĕччен экономистра В.Игнатьев ĕçлерĕ, унтан В.Афанасьев ĕçлеме пуçларĕ. Марфа Кузьмина кассира ĕç дисциплинине пăснăшăн çак ĕçрен кăларчĕç, мартăн 15-мĕшĕнчен Пĕршенер хĕрĕ Мария Николаева ĕçлеме тытăнчĕ....

1973 çулта Пĕршенерте ĕнесем валли вите, ферма работникĕсен çуртне туса хута янă. Вăрăмпуçĕнче кивĕрех кĕлет çумне кирпĕчрен купаласа кĕлете тăснă. Ял Совет ĕçтăвкомĕн çурчĕпе магазин хушшине тепĕр магазин çуртне тума пуçланă...»

**М.З.Зиновьева çырнă «Намеченное выполним» статьяран («Советская Чувашия» хаçат, 1974 çул, январĕн 10-мĕшĕ):**

«... Для нашей бригады, как и для всего колхоза, минувший год был годом самого большого успеха. Мы намолотили с каждого гектара более 33 центнеров зерна, собрали по 300 центнеров картофеля, по 1060 центнеров кормовых корнеплодов. Мой труд отмечен орденом Ленина, ряд колхозников также награждены орденами и медалями.

Сейчас у нас уже дума – обеспечить такой же высокий урожай в 1974 году. Мы вывозим на свекловичные поля навоз и компостируем его с фосмукой, запасли и продолжаем запасать минеральные туки и аммиачную воду. Готовы первоклассные семена. При этом ячмень

33-мӗшӗ партконференци делегачӗсем, М.З.Зиновьева варринче тӑрать, 1968 ҫул, февраль.



*Партконференци делегачӗсем, 1968 ҫул, Шупашкар.*





*Республикăри колхозниксен конференцийĕн Канаш районĕнчи делегатсем, 1964 çул, октябрĕн 31-мĕшĕ.*



*КПСС Канаш райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Е.В.Роштов М.З.Зиновьевăна «Ылтăн пучах» кăшăл тата парне парать, 1975 çул.*



*М.З.Зиновьева 70 çул тултарнине уявлани, ачисем: Михаил, Руслан, Ираида, Владимир. 1999 çул, март.*

*Октябрь революцийĕ 70 çул тултарнине районта уявлани, Канаш, 1987, ноябрĕн 5-мĕшĕ*





*Малти ретре ларaççĕ М.З.Зиновьева, Мария Прокопьева, тăраççĕ Селидор Васильев тракторист, колхозăн тĕп зоотехникĕ Владимир Зайков, 1977 çул*

посеем на всей площади высокоурожайным сортом «Московский-121», а большую часть пшеницы – сортом «Арин», которые в прошлом году дали более 50 центнеров зерна с гектара. Механизаторы ремонтируют машины и прицепной инвентарь.

...Наши колхозники решили взять встречный план, т.е.достигнуть уровня урожайности, запланированного на 1975 год. Уверены, что в этом нам поможет соревнование с бригадой Т.И.Смельцовой из колхоза «Советская Россия» Янтиковского района. Оно стало традиционным и уже принесло свои плоды, взаимная помощь и обмен опытом помогли нам вырастить высокий урожай. По итогам прошлого года бригада Т.И.Смельцовой отмечена Красным знаменем Министерства сельского хозяйства РСФСР и ЦК профсоюза работников сельского хозяйства и заготовок. А наша бригада завоевала Красное знамя Министерства сельского хозяйства СССР.

Недавно я получила от Тани Смельцовой письмо, в котором она сообщает, что колхозники ее бригады решили продолжить соревнование с нами и в этом году...»

**М.З. Зиновьева çуллен çырса пынă дневник патне таврăнарха:**

**«1974 çулта** штатри работниксем çавсемех ĕçленĕ. Учет енĕпе ĕçлекен Капитонов бухгалтер сывалма кайсан сентябрь уйăхĕнчен Николай Яковлев ĕçленĕ. А.Демьянов май уйăхĕнчен ферма заведующийĕнче тăрăшать, майăн 20-мĕшĕнчен 2-мĕш бригадăна А.И.Гуркин ертсе пырать. 1974 çулхи июньтенпе учетчик-заправщикра Иван Александров ĕçлет.

1974 çулта кашни гектартан колхозĕпе 28,7 центнер тĕш тырă, 160 центнер çĕр улми, 627 центнер выльăх кăшманĕ туса илнĕ. 1-мĕш бригадăра тырă тухнă 30 центнер, çĕрулми - 172,5 центнер, выльăх кăшманĕ 708 центнер пулнă. Уйрăм культурăсенчен «Харьковская» ыраш уйрăмах пирĕн бригадăра ăнса пулчĕ – 39 центнер гектар пуçне! Государствăна тырă планпа палăртнă 2360 центнер вырăнне 3175 центнер

ăсатнă, çĕр улми - 5828 центнер (план 3080 центнер).

Кашни 100 гектар çĕр пуçне 290 центнер сĕт, 100 центнер аш-какай туса илнĕ, 73 килограмм çăм каснă, сухалакан 100 гектар çĕр пуçне 17,1 пин штук çăмарта пуçтарнă е кашни чăхран 186 çăмарта.

Государствăна сутмалли плана пурнăçланă: аш-какайпа 127процент, сĕтпе 125 процент, çăмартапа 167процент тата çăмпа 158 процент.

1-мĕш бригадăна тĕш тырă, çĕр улми, выльăх кăшманĕ туса илессипе мала тухнăшăн районтан «Ылтăн пучах» кăшăлĕ панă, мана - «Ударник пятилетки» знака, сĕтел çине лартмалли сехет. Çавăн пекех «Ударник пятилетки» знака В.Платонов, А.Сынукова, А.Демьянов, П.Владимирова, В.Зайков, Е.Сергеев, М.Тихонова, Петрова, Г.Семенова, С.Васильев тивĕçнĕ.

Мана КПСС обком членне суйларĕç, 1974 çулхи октябрĕн 11-мĕшĕнче пĕлтĕрхи итогсемпе ВДНХ кĕмĕл медальне пачĕç.

1974 çулта колхоз бензин турттармалли автомашина туяннă, унпа А.Николаев шофер ĕçленĕ, ДТ-74 трактор илнĕ, ăна А.Зайцев механизатора çирĕплетсе панă.

Пĕршенерте 200 тонна тырăлăх кĕлет тунă, Вăрăмпуçĕнче магазин çуртне хута янă, фермăра çăнăх хума икĕ кĕлет лартнă, çĕр улми упрама подвал тума тытăннă». В.Н.Платонова 1974 çулхи апрелĕн 25-мĕшĕнчи указпа «Чăваш АССР тава тивĕçлĕ агрономĕ» хисеплĕ ята пачĕç.

Маларах палăртнăччĕ: Мария Зиновьевна, калама çук ырă кăмăллă çын, хăйĕн опычĕпе ыттисене ним пытармасăр паллаштаратчĕ. Ан тив, ыттисем те вĕренччĕр, пирĕн пекех тухăç ытларах илме пултарччăр тенĕ пуль.

**М.З. Зиновьева çырнă «Çĕр улмипе тымар çимĕç – тухăçлă культурăсем» плакат-страницăран («Коммунизмшăн» хаçат, 1974 çул, ноябрĕн 22-мĕшĕ):**

«Тымар çимĕçсем лартма çĕр хатĕрлеме кĕркуннех тытăнатпăр. Çĕр улми лартмалли тăпра кăпăшка пулмалла. Вăл хытă пулсан, çĕр улми час шăтса тухаймасть, ӳсен-тăранăн

тымар системине аталанмалли условисем начарланаççĕ, аври имшер пулать.

Кĕрхи çĕртмене эпир агротехникăлла чи лайăх сроксенче – августра, сухалакан сие тарăнлатса туса хăвараттпăр. Çакă тăпрара нӳрĕк тата тутлăхлă япаласем ытларах тытса хăварма май парать. Пирĕн хуçалăхра, тĕпрен илсен, кĕллĕ тăпра, çавăнпа та эпир удобренисем ытларах хывма тăрăшатпăр. Кĕрхи çĕртме тунă чухне хывса хăварма июнь-июль уйăхĕсенчен тислĕке фосфорит çăнăхĕпе хутăштарса купаласа хуратпăр. Кашни гектар çине удобрени хывмалли норма 20 тонна тесе шутлатпăр (15 тонна тислĕк тата 0,5 тонна фосфор çăнăхĕ).

Практика çакна кăтартса парать: кашни гектар çинче 250 центнер çĕр улми çитĕнтерме 2200-2600 тонна нӳрĕк кирлĕ. Çавăнпа та хĕл вĕçленнĕ тĕле уй-хирте юр сийĕ 60 сантиметртан кая мар пулмалла. Юр сийĕ 15 сантиметра çитсенех эпир юр тытма пуçлатпăр.

Кĕркунне сухаласа хăварнă лаптăксене çуркунне, юр ирĕлнĕ хыççăнах, тăпрана сӳрелесе çиелтен çемçететпĕр. Çакă, чи малтан, нӳрĕке упраса хăварма май парать, иккĕмĕшĕнчен сухалакан сий час пиçсе çитет.

Пирĕн çĕрсене микроэлементсем, уйрăмах кали, питĕ кирлĕ. Çавăнпа та çуркунне çĕр хатĕрленĕ чухне - культиваци тăвас умĕн - кашни гектар пуçне 2 центнер хлорлă кали хыватпăр. Çĕр улмие апатлантарма аммиак шывĕпе те ăнăçлăн усă куратпăр, ăна культиваци тунă чухне тăпрана гектар пуçне 4 центнер сапатпăр. Çĕр улми лартнă чухне гектар пуçне касăсене 1 центнер нитроаммофоска хыватпăр.

Çĕр улми тухăçĕ мĕнле сорт пулнинчен чылай килет. «Лорх» тĕп сорт шутланать, ăна пирĕн патра вăрçăчченех лартса тунă. Çак сорт тутлă. 1970 çулта «лорх» тухăçĕ гектартан 210 центнер пулнă пулсан, пĕлтĕр 300 центнера çитрĕ.

Юлашки 2-3 çулта эпир «гатчинский» сортпа ĕçлетпĕр. Ăна илме ятарласа Ленинград облаçне кайса килнĕ, халĕ ăна хамăр патăрта та ăнăçлă лартса тăватпăр. Ку - пысăк

тухăçлă, крахмал нумай шутланакан сорт. Вăл тĕрлĕрен чирсене те парăнмасть, лайăх упранать.

Кăçал эпир бригадăра «лорх» сорта 30 гектар, «гатчинский» сорта 20 гектар çинче туса илнĕ. Çанталăк типĕ тăчĕ пулин те «гатчинский» тухăçĕ гектартан 250 центнер пулчĕ, «лорх» вара çакăн çурри кăна тухрĕ. Çавăнпа та çитес çул эпир колхозра çак çĕнĕ сорта кăна лартма палăртатпăр.

Паллах, вăрлăх хатĕрлес ĕç çине тимлĕн пăхатпăр. Вăрлăхлăх çĕр улми тракторсемпе тата сажалкăсемпе сиенленесрен алăпа кăларатпăр. Çĕр улмие лартас умĕн 10-12 кун яровизацилетпĕр. Çакăн чухне унăн симĕс те патвар калчисем тухаççĕ. Вĕсем лартнă чухне те сиенленмеççĕ. Ăна иртерех, тăпра температури 7 градуса яхăн ăшăнсан лартатпăр. 60-мĕш çулсенче çак ĕçе майăн 20-мĕшĕнче кăна пуçăнаттăмăр. Çавăнпа унăн тухăçĕ те пĕчĕкчĕ. Çĕр улми лартма кая юлнă кашни кун унăн тухăçне 1 процент чакарать.

Çĕр улмине мĕн тарăнăшне лартнинчен унăн тымарĕ патĕнчи тăпра температури, нӳрĕклĕхĕ мĕнле пуласси килет. Ăна ăшăх лартсан, типĕ çанталăкра ӳсентăран нӳрĕк сахалтарах илсе тăрать, ытлашши тарăн лартсан – вăл час шăтса тухмасть е çĕрме пултарать, çавăнпа та 10-12 сантиметр тарăнăшне лартатпăр. Шăтса тухиччен вăхăтрах çум курăксем тапса тухаççĕ. Çумăр çунипе тăпра сийĕ хытать, çакă вара çĕр улми патне кислорода кĕме чăрмантарать, ку вара шăтса тухма чарса тăрать. Çавăнпа та эпир лартнă хыççăн эрне иртсен пĕрремĕш хут сӳрелетпĕр, çĕр улми шăтса тикĕсленсен культивацилемелле, ку ĕçе ретсем урлă кăнтăрла иртсен тăватпăр. Çак вăхăтра ӳсентăрансем сахалтарах сиенленеççĕ. Калча 12-14 сантиметра çитсен пĕрремĕш хут купалатпăр. Иккĕмĕш хут рет хушшисем палăрми пуличчен туса ирттеретпĕр. Сайра-хутра – типĕ çулсенче – виççĕмĕш хут та купалатпăр. Кăпкалатнă сий тарăнăшĕ 12-14 сантиметр пулмалла. Çак ĕçе çумăр çăвиччен туса ирттерсен лайăхрах.

Çĕр улми пухса кĕртесси – хуçалăхри чи йывăр ĕçсенчен пĕри. Ăна аври сарăхса типме тытăннă вăхăтра пухса

кёртмелле. Эпир çанталăк сивĕтиччен пĕтĕм çĕр улмине кăларса пуçтаратпăр. Йĕпе-сапаллă çанталăкра кăларнă çĕр улми каярахпа çĕрме тытăнать, çавăнпа ăна çуркуннеччен усрама йывăр. Хăш-пĕр сортсен аври час типет, çакăн пек çĕр улмине вăрахчен çĕр айĕнче хăварсан, сиенлĕ хурт-кăпшанкăсем тата чир-чĕр тухăçăн чылай пайне пĕтерме е сиенлеме пултараççĕ. Унсăр пуçне çумăрпа йĕпенсе крахмал тата ытти тутлăхлă япаласем сахалланаççĕ.

Малтан эпир аври типнĕ çĕр улмине кăларса пухатпăр, унтан симĕс çĕрулмине кăларма тытăнатпăр. Кăларнă чухне ăна касассинчен, ватассинчен, шăйăрассинчен сыхланмалла, аманнă çĕр улми вăрахчен упранаймасть.

Тата акă мĕн çинчен асăрхаттарас килет: хуçалăхра çĕр улмие кăларнă хыççăн тепĕр хут сӳрелесси е культиваци тăвасси йăлана кĕнĕ. Çакă гектар пуçне тата 8-шар центнер çĕр улми тухăçне ӳстерет...

Государствăна планпа 15880 центнер çĕр улми сутмалла пулсан, 18374 центнер ăсатнă, е, урăхла каласан, тăххăрмĕш пилĕкçуллăх плана 115 процент тултарнă.

Пирĕн бригада темиçе çул ĕнтĕ пысăк тухăçлă выльăх кăшманĕ туса илет. Пĕлтĕр унăн тухăçĕ 18 гектар çинче 1064-шар центнер пулнă. Ку пирĕн республикăн хăйне евĕрлĕ рекорчĕ, çакăн чухлĕ кăшман никам та туса илеймен...

Çĕре кĕркуннех хатĕрлеме тытăнатпăр. Август уйăхĕнче кĕрхи çĕртме тăватпăр, кашни гектар çине 30 тонна тислĕкпе фосфорит çăнăхĕн компостне хыватпăр. Кĕркунне юр тытса хăваратпăр, çак тĕллевпе техникăпа анлăн усă куратпăр...

Кăшман вăрлăхне хамăрах хатĕрлетпĕр... Хамăр туса илнĕ вăрлăхăн шăтаслăхĕ 84 процентран кая мар. Кĕркунне, çумăрлă çанталăк пуçланиччен тата тăм ӳкме тытăниччен, вăрлăха йĕтем çинчех сортлатпăр. Ăна хĕвел çинче типĕ тетпĕр. Тыр๎ă типĕтмелли сушилкăпа усă курсан, унăн шăтаслăхĕ 15-20 процента çити чакать. Вăрлăха тырă склачĕ сенче усратпăр. Шăшисенчен сыхланса, вăрлăх тултарнă михĕсене мачча каштинчен çакса яратпăр. Вĕсем мĕнле упраннине тĕрĕслесех тăратпăр. Ăна акма çуркунне çĕр хатĕ-

рлесси ҫине тимлĕн пăхатпăр. Юр кайса пĕтсе ҫĕр типсенех участоксене сӳрелеме тытăнатпăр. Удобрение виҫĕ срокра хыватпăр: культиваци умĕн кашни гектар пуҫне 3 центнер мочевина, 4 центнер кали тăварĕ, 4 центнер суперфосфат ҫăнăхĕ; пĕрремĕш культивацие аммиак шывĕ сапса (гектар пуҫне 4 центнер) тăватпăр, акас умĕн вара кашни гектар ҫине 2 центнер нитроаммофоска хывса хĕреслĕ майпа тепре культиваци тăватпăр.

Чылай хуҫалăхсем кăшмана кая юлса акаҫҫĕ, эпир май пуҫламăшĕнчех ҫак ĕҫе тума ĕлкĕретпĕр. Эпĕ «эккендорфская желтая» сорта акса тăвакансене уйрăмах ҫакна каласшăн: ăна кая юлмасăр акăр, унсăрăн тухăҫăн ҫуррине яхăн ҫухататăр. 3-4 ҫулҫă тухсан калчасене сайралататпăр. Ҫирĕп те сывă ӳсентăрансене хăваратпăр, ыттисене нимĕн хĕрхенмесĕр ҫумласа тăкатпăр. Калчапа калча хушшине 17-20 сантиметр хăваратпăр. Ҫакăн хыҫҫăн ҫийĕнчех культиваторсемпе рет хушшисене 10-12 сантиметр тарăнăш кăпкалататпăр. Тепĕр икĕ эрнерен иккĕмĕш хут сайралататпăр. Татах кăпкалататпăр. Хальхинче вара 15-18 сантиметр тарăнăш.

Пирĕн районта чылайăшĕ рет хушшисене 60-70 сантиметр хăвараҫҫĕ. 45 сантиметр та ҫителĕклĕ пулнине хамăр опыт ҫинче курса ĕнентĕмĕр. Ҫакă тухăҫа ӳстерме пулăшать. Ҫак культура тухăҫĕ кăҫал та аван пулчĕ...»

60-мĕшпе 70-мĕш ҫулсенче «Путь Ленина» колхозра сахал мар хăнасем пулнă: тĕрлĕ ҫĕртен килнĕ делегатсем, уй-хир ĕҫченĕсем, выльăх-чĕрлĕх пăхакансем, партипе Совет работникĕсем, писательсемпе журналистсем, специалистсемпе колхоз-совхоз руководителĕсем... Вĕсене пурне те пĕр ыйту канăҫ паман: районта юлса пынă хуҫалăх мĕнле майсемпе, меслетсемпе республикăра малта пыракан хуҫалăхсемпе пĕр шая ҫитнĕ. Тĕрлĕ культурăсене туса илес тĕлĕшпе те, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе те.

**Василий Алентей писателĕн «Зиновьева бригадир» очеркĕнчен («Коммунизм ялавĕ» хаҫат, 1974 ҫул, ноябрĕн 5-мĕшĕ):**

«Çанталăк çумăрлă тăрать. Канашран Вăрăмпуçне çитме вун ултă çухрăм. Пылчăклă йывăр çулпа «Путь Ленина» колхоза васкатпăр. Йěпреç çулěнчен пăрăнсанах, вăрман пуçланчě. Пирěн машина малаллах ыткăнать. Хăш-пěр вырăнсенче канава шуса анма та хăтланать вăл. Çапах та колхоз шоферě машинăна лайăх тытса пырать. Çакăн пек çулсем тăрăх яланах çӳреме тивет-çке унăн. Хăнăхнă вăл. Акă, тинех вăрмантан тухрăмăр. Вăрман хěрринче таçта инçене тăсăлакан çап-çутă Упа кӳлли. Çак кӳлле Вăрăмпуç çыннисем хăйсем тунă. Кунтан «Путь Ленина» колхозăн тěп хуçалăхě инçе мар.

Тěрěссипе, манăн çул урăх еннеллеччě. Анчах КПСС Канаш райкомне кěрсен, унти юлташсем хистесех çапла каларěç: «Вăрăмпуçěнчи уй-хир бригадирěпе Мария Зиновьевна Зиновьевăпа паллашăр-ха эсир. Тěлěнмелле ěçчен, ырă хěрарăм. Хаçатра çырасчě ун çинчен». Çапла ырланăран пулě, тěл пулса калаçас килчě. Вара пěр тăхтаса тăмасăрах Вăрăмпуçне çул тытрăмăр.

Акă, эпир Вăрăмпуçěнче. Колхоз ěçченěсемпе калаçатпăр, хуçалăхпа паллашатпăр. Паян кун çумăрлă. Çавăнпа Зиновьева ниçта та мар, ялтах пулмалла. Чăннипе, ăна шыраса çӳреме тивмерě. Вăрăмпуç çыннисем унăн кашни утăмнех курса тăраççě темелле. «Часах правление килет вăл», – терěç вěсем. Нумай та лармарăмăр, алăк яр уçăлчě те, пӳлěме кăвак куртка, резина атă тăхăннă, сенкер тутăр çыхнă вăтам пӳллě патвар хěрарăм кěрсе тăчě.

– Эсир Зиновьева мар-и? – ыйтрăм тӳрех.

– Эпě-ха, – ал пачě вăл пире.

Тӳрех калаçса кайрăмăр. Тепěртакран вăл ертсе пыракан бригада çинчен тěппипех ыйтса пěлтěм.

Мария Зиновьева пурнăçě - чăннипех патăрла пурнăç. Унăн хастарлăхне, ěçре илнě чыс-хисепне палăртас тесен, чи малтанах çакна асăнмалла: ăна 1966 çулта «Ěçри хастарлăхшăн» медальпе, 1970 çулта юбилей медалěпе, 1971 çулта Ленин орденěпе, 1973 çулта каллех чи пысăк наградăпа - Ленин орденěпе наградăланă. Мария Зиновьевна

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ, Верховнăй Совет Президиумĕн членĕ, КПСС Чăваш обкомĕн членĕ. Мĕнле майпа çакăн пек пысăк чыс-хисепе тивĕç пулнă-ха вăл? Чăннипе, ялти ытти хĕрарăмсенчен нимĕнпех те уйрăлса тăмасть пек. Вĕсем пекех ача-пăча ӳстерет, кил-çуртра ĕçлет. Çапах та уйрăмлăхĕ пур. Мария Зиновьева колхоз ĕçне чи малти выранă хурать. Колхоз вăй-хăватне ӳстересси - унăн чи ырă тĕллевĕ. Колхозшăн пĕтĕм вăй-халне парать вăл.

Мария Зиновьева Çĕрпӳ районĕнчи «Коммунар» колхозра çуралса ӳснĕ. Ашшĕ, Зиновий Андреевич Крылов, Балти флочĕн морякĕ пулнă. Революци вут-çулăмĕпе туптаннă. Питĕрте, Финлянди вокзалĕ патĕнче Ленин сăмахне итленĕ. Тăхăр ача ӳснĕ вĕсен çемьере. Пурте тĕреклĕ çитĕннĕ. Пурте вĕренме тăрăшнă. Халĕ пĕр тăвансем хушшинче ял Совет ĕçтăвкомĕн председателĕ те, предприяти директорĕ те, прокуратура работникĕ те, колхоз бригадирĕ те, дипломати сотрудникĕ те пур.

«Коммунар» колхозра Марьене çамрăклах бригадира лартнă. Халĕ те аса илеççĕ-ха ял çыннисем. Ял варринче Шăкăмăç шывĕ юхса выртать. Çак шыва пĕвеленĕ Марье бригади. Çак колхозрах Марье парти ретне кĕнĕ.

- Паянхи пекех ас тăватăп, – каласа парать Мария Зиновьева. - Райкомра мана парти билечĕ пачĕç. Эпĕ ăна яла çитиччченех алăра тытса пытăм. Миçе кăна уçса пăхмарăм-ши? Хам ята миçе хутчен вуламарăм-ши? Коммунист ятне тивĕçлĕ тытма сăмах патăм çавăн чухне...

Нумаях та вăхăт иртмен, Мария Зиновьевăна Шупашкара вĕренме янă. Колхоз руководителĕсене хатĕрлекен шкулта вĕреннĕ вăл. Унта качча тухнă, упăшкипе Вăрăмпуçне килнĕ. 1959 çулта Мария Зиновьевăна кунта та бригадира лартнă. Колхоза пысăклатсан бригадăсене те пысăклатма пуçланă. Юлашкинчен пĕр бригада çеç тунă çак ялта. Ял çыннисем никама та мар, хăйсен бригадирĕ пулма ăнах суйланă. Вун пилĕк çул ĕçлет вăл кунта.

Унччен колхоз тĕш тырă туса илес енĕпе çав тери юлса пынă. Кашни гектартан вăтам шутпа 6 центнер кăна пухса

илнӗ. Колхозра дисциплина пулман. Ӗҫкӗпе айланакан бригадирсем учет ӗҫне япăхтарса янă. Мария Зиновьева, паллах, ҫакăнпа ҫырлахма пултарайман. «Тыр-пул - пурнăҫ тӗрекӗ. Унăн тухăҫне епле те пулин ӳстермеллех», – шухăшланă бригадир. Ҫӗрпе усă курма вӗрентнӗ вăл вӗсене, ăшă сăмахпа лайăхрах ӗҫлеме хавхалантарнă, ӳрӗк-сӳрӗксене ятланă та. Хăй ялан халăхпа пӗрле пулнă. Трактористсем ҫӗре лайăхрах кăпкалатма йышăннă, паха вăрлăх акнă, имҫамсем сапнă, калчана пăхсах тăнă, тыр-пула пӗр тăккаламасăр пухса кӗртнӗ. Пӗтӗм ял халăхӗ ҫӗкленнӗ вăйлă тыр-пулшăн пыракан кӗрешӗве. Ҫапла вара тыр-пул тухăҫлăхӗ ҫултан-ҫул ӳссе пынă. 1971 ҫулта гектартан вăтам шутпа 22 центнера ҫитнӗ. Виҫӗм ҫул гектартан 26,3 центнер, пӗлтӗр 33 центнер пухса кӗртнӗ. Кăҫал та тырă ăнса пулнă.

Чăнах, Зиновьева бригади Вăрăмпуҫ ҫӗрӗ ҫинче нихҫан пулманнине туса кăтартрӗ. Кашни гектартан 30 центнер ытла тырă илесси ҫинчен ӗмӗтленмен те кунта. «Пирӗн ҫӗр ҫинче тырă пулмасть. Хӗсӗр кунти тăпра», – тенӗ вăрăмпуҫсем. Юлашки ҫулсем ҫак шухăша йăлтах сирсе ывăтрӗҫ. Ку ҫеҫ-и-ха! Зиновьева бригади пӗлтӗр кашни гектартан 300 центнер ҫӗр улми, 1060 центнер выльăх кăшманӗ туса илнӗ.

Кăҫал бригада тыр-пула тăккаламасăр, тирпейлӗ пухса кӗртрӗ. Вăхăт-вăхăтпа ҫанталăк ҫумăрлă пулчӗ пулин те, ял ҫыннисем уй-хир ӗҫӗсене вăхăтра туса пычӗҫ.

Ҫакă савăнтарчӗ: Зиновьева бригадир учет ӗҫне питех те тӗплӗн туса пырать... «Эсӗ ҫавăн чухлӗ ӗҫлесе илтӗн, сана ҫавăн чухлӗ укҫа тивет» - тесе ҫав кунхинех, ӗҫ пăрахнă хыҫҫăнах пӗлтерет. Ҫакă колхозниксене хавхалантарать, вӗсен ӗҫри ăмăртăвне вăйлатма пулăшать. Ара, нихăшин те пӗр-пӗринчен юлас килмест-ҫке. Бригадир ӗҫе паха тунипе туманнине тӗплӗ тишкерет.

- Бригада ăнăҫлă ӗҫлесси - чи малтанах ҫынсемпе, халăхпа пӗрле пулнинчен, унпа пурăнма пӗлнинчен килет, – тет Мария Зиновьева.

Вăрăмпуҫ бригадинче чăннипех паттăр, хастар ҫынсем сахал мар. Ҫавăн пек ҫынсен шутне чи малтанах Герман

Сергеев тракториста кĕртес килет. Малтан, ыраш акмалли лаптăка тислĕк тăкнă чухне, вăл погрузчикпа ĕçлерĕ. Ун хыççăн ыраш акмалли лаптăка кăпкалатрĕ, кĕрхи çĕртме турĕ. Кашни кунах ĕç тупăнать ун валли. Çулла кăна мар, хĕлле те ахаль лармасть Герман Сергеев. Юр тытма тухать, минераллă им-çамсем турттарать. Уй-хир ĕçĕнче паттăрлăх кăтартнăшăн Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă.

Кăçал бригадăра виçĕ комбайн ĕçлерĕ. Чăннипе, бригадăн икĕ комбайн çеç пулнă. Теприне бригадăри механизаторсем хăйсем шыраса тупнă. Çапла «шыраса тупрăмăр» тесех каларĕ Мария Зиновьева. Эпĕ тĕлĕнтĕм.

– Мĕнле апла?

- Юрăхсăра тухнă, «списать» тунă комбайна чун кĕртрĕмĕр. Аванах ĕçлерĕ, нумай пулăшрĕ...

Иван Александров, Алексей Родионов комбайнерсене ял çыннисем пурте хисеплеççĕ. Леонид Нямуков, Дмитрий Демьянов шоферсем те ятлă-сумлă çынсем.

Мария Зиновьевна Зиновьева ялти обществăлла ĕçе те хастар хутшăнать. Вăл - колхозра хĕрарăмсен совечĕн председателĕ. Çав совет Вăрăмпуçпа Пĕршенер ялĕсенчи хĕрарăмсем хушшинче пысăк ĕç тăвать: совет сĕннипе «Колхозница» стена хаçачĕ кăлараççĕ. Ун редакторĕ Римма Кудрявцева учительница.

- Хĕрарăмсен советĕнче ĕçлени бригада ĕçне ертсе пыма чăрмантармасть-и сире? – ыйтрăм эп Мария Зиновьевнăран.

- Нимĕн те чăрмантармасть. Йăлтах урăхла, бригада ĕçне вăйлатма пулăшать. Хĕрарăмсем колхоз ĕçне хастарлăрах ĕçлеме пуçларĕç... Колхозниксен çемье пурнăçĕ те чылай çирĕпленчĕ.

Колхозра пĕтĕм чун хавалĕпе ĕçленĕ вăхăтрах тăвата ача пăхса ӳстерет Мария Зиновьевна. Мишша çитĕнчĕ ĕнтĕ, Совет Çарĕнче, пограничник. Ирăпа Володя вĕренеççĕ-ха. Чи кĕçĕнни Руслан иккĕре кăна.

Вăрăмпуçĕнче пулни чун-чĕрере ырă, хаваслă туйăм çуратрĕ. Мария Зиновьева хастарлăхĕ чăннипех хавхалан-



М.З.Зиновьева шкул ачисем хушшинче тӑрать, 1978 ҫул

М.З.Зиновьева, В.Н.Платонов, А.З,Крылова, 1969 ҫул





*М.З.Зиновьева колхозри уполномоченнăйсен пĕрлехи пухăвĕнче, президиумра Канашри ял хуçалăх управленийĕн начальникĕ П.Е. Романов*



*Района ертсе пыракансемпе колхоз председателĕсем*



*М.З.Зиновьева хӑй вӗреннӗ шкулӑн 90 ҫулхи юбилейӗнче, 1979 ҫул, ноябрь*



*1973 ҫул*



*Герман Семенович Внучков трактористпа Василий Николаевич Платонов, 1960 ҫул*



М.З.Зиновьева, 1980 çул.

М.З.Зиновьева Зинаида йăмăкĕпе



Республикăри хĕрарăмсен съездĕнче



тарчĕ мана. Маттур пирĕн хĕрарăмсем!»

**КПСС Канаш райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Е.В.Роштов çырнă «Коммунистсем» статьяран («Коммунизм ялавĕ» хаçат, 1974 çул, майăн 1-мĕшĕ):**

«...Коммунистсенчен ытларах пайĕ ял хуçалăхĕнче ĕçлет. Ялан малта, ăçта йывăртарах, çавăнта пулма тăрăшаççĕ вĕсем, партире тăманнисене ĕçре те, общество пурнăçĕнче те, йăлара та ырă тĕслĕх кăтартаççĕ...

...Районта 114 коммунист выльăх-чĕрлĕх фермисенче, 161 механизатор пулса ĕçлеççĕ, 64 коммунист бригадăсемпе уйрăмсене, 21 коммунист выльăх-чĕрлĕх фермисене ертсе пыраççĕ. Халăхпа ĕçлеме пĕлеççĕ вĕсем, общество ĕçне те активлă хутшăнаççĕ. Пĕррехинче «Путь Ленина» колхоз клубĕнче концерт курма тӳр килчĕ. Сцена çинче çав кун Мария Зиновьевна Зиновьева та юрларĕ. Тăвату ача амăшĕ халăх хушшинче пулма та вăхăт тупать. Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн тата ял Совечĕн депутачĕ вăл, КПСС обкомĕн членĕ. Колхозри хĕрарăмсен советне ертсе пырать. Совет правительстви ăна икĕ хутчен Ленин орденĕ пе тата медальсемпе наградăланă. Ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тăвать ун бригади. Кашни гектартан пĕлтĕр 33 центнер тĕш тырă, 300 центнер çĕр улми, 1067 центнер выльăх кăшманĕ пухса кĕртнĕ. Бригадăра çурхи ĕçсем те ăнăçлă пыраççĕ...»

**В. Лапин журналистăн «Бригадир» тĕрленчĕкĕнчен («Коммунизмшăн», 1974 çул, сентябрĕн 27-мĕшĕ):**

«Районта «Путь Ленина» колхозри Мария Зиновьевна Зиновьева бригадин ĕçри çитĕнĕвĕсем çинчен илтмен çын çук та пулĕ. Эпĕ те ăна лайăх пĕлетĕп.

...Тулăн симĕс кавирĕ тăрăх колхозницăсем умлăнхыçлăн васкамасăр утса пыраççĕ. Июнь уйăхĕнчи çак ăшă кун мĕн тунă-ха вĕсем?

«Сортлă тырра çумлатпăр, – ăнлантарса пачĕ мана тăрантас çинче ларса пыракан Мария Зиновьевна. - Куратăр-и вăрлăхлăх участокра хăшпĕр çĕрте ыраш тĕмĕсем курăнаççĕ, вĕсене халĕ çумламасан, кайран уйăрма йывăр.

Мария Зиновьева районти темле канашлуран колхоза

тавранать. Кӳршӗри хуҫалӑх уйӗсем ҫум куракӗ айне пулнине асӑрхасан, вӑл шофера чарӑнма ыйтрӗ. «Ҫук, ҫӗре юратса пӑхмаҫҫӗ, уншӑн тӑрӑшмаҫҫӗ. Калчасене шел, мӗнле ӳссе ҫитӗнӗҫ...»

Ӗнер эпӗ ӑна Канашра куртӑм. Вӑл райсовет сессине килнӗ иккен... Уй-хир ӗҫӗсене вӗҫлерӗмӗр, - пӗлтерчӗ М.Зиновьева, - кашни гектартан 170 центнер ҫӗр улми, 703 центнер выльӑх кӑшманӗ туса илтӗмӗр...» Унӑн пичӗ кӑмӑллӑ кулӑпа ҫиҫрӗ. Ку хӑйӗн сӑмахӗсенчен каялла чакман, палӑртнӑ тӗллеве ҫине тӑрса ҫӗнсе илекен ҫын кулли пулчӗ. Ахальтен мар ӗнтӗ унӑн хастарлӑ ӗҫне икӗ хутчен Ленин орденӗ парса паллӑ тунӑ...»

М.З.Зиновьева бригадир пӗтӗм вӑй-халне парса ӗҫленине, обществӑлла хуҫалӑхшӑн хӑйӗн килтинчен те ытларах тимленине ял халӑхӗ куллен сӑнаса тӑрать. Ҫаплах ҫав, ялти пурнӑҫ кашни самант, кашни кун куҫ умӗнчех. Ял ҫыннисенчен нимӗн те пытараймӑн: вӑл тул ҫутӑличченех ура ҫине тӑрать те ларнӑ-ларман тӗлӗрсе кайиччченех ҫӗмӗрттерсе, кӑштӑртатса ҫӳрет. Марье аппана 1975 ҫулхи шыв-шур типнӗ вӑхӑтра каллех, иккӗмӗш хут Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн депутачӗ пулма кандидата тӑрататать ял-йыш.

**«Народ выдвигает достойных» информацирен («Советская Чувашия» хаҫат, 1975 ҫул, майӑн 7-мӗшӗ):**

«В торжественной обстановке прошло предвыборное собрание тружеников колхоза «Путь Ленина» Канашского района. На нем единодушно была выдвинута кандидатом в депутаты Верховного Совета Чувашской АССР по Новоурюмовскому избирательному округу №96 бригадир колхоза кавалер двух орденов Ленина Мария Зиновьевна Зиновьева».

1975 ҫулхи кӗркунне республикӑри чи чаплӑ ҫӗр ӗҫченӗсен пӗр ушкӑнне «Чӑваш АССР ял хуҫалӑхӗн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ» хисеплӗ ята параҫҫӗ. Вӗсем хушшинче М.З.Зиновьева та пур. 1975 ҫулхи октябрӗн 12-мӗшӗнче «Коммунизм ялавӗ» хаҫатра унӑн сӑн ӳкерчӗкӗ ҫапӑннӑ, портрет айӗнче ҫакӑн пек йӗркесем: «Ӳкерчӗк ҫинче: Канаш районӗнчи «Путь Ленина» колхоз бригадирӗ М.З.Зиновьева.

Çуллен тухăçлă тырпул, выльăх апачлĕх культурăсем çитĕнтерсе ырă ят çĕнсе илнĕ Мария Зиновьевна. Ĕçри пысăк çитĕнӳсемшĕн Зиновьевăна правительство икĕ хутчен Ленин орденĕ парса наградăланă. Вĕсемпе юнашар медальсем те çиçеççĕ. Пултаруллă бригадира кăçал та Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ пулма суйланă».

**М.З. Зиновьева çырса пынă кун кĕнекинчен:**

«1975 çулхи февралĕн 7-мĕшĕ. Колхозри уполномоченнăйсен отчет пухăвĕ пулса иртрĕ. «Тава тивĕçлĕ колхозник» ятсене çак çынсене пачĕç: Вăрăмпуç ялĕнчен - Мария Зиновьева, Петр Нямуков, Пĕршенертен - Александр Демьянов, Кузьма Гаврилов, Анна Гуркина, Матрена Егорова, Анна Козлова, Ольга Николаева.

1974 çулхи ĕçсемшĕн 1975 çулхи мартра Василий Степанов Ĕç мухтавĕн III-мĕш степеньлĕ орденне илме тивĕç пулчĕ, Ефим Сергеев - «Ĕçри хастарлăхшăн» медале.

1975 çулта гектар пуçне колхоз тĕш тырă 21,4 центнер, çĕр улми 198 центнер, выльăх кăшманĕ 743 центнер туса илчĕ. 1-мĕш бригадăра тырă 24,4 центнер, çĕр улми 183 центнер, выльăх кăшманĕ 861 центнер туса илтĕмĕр.Уйрăм культурăсенчен чи тухăçли ыраш: 52 гектартан 34-шар центнер, 110 гектар çинчи урпан тухăçĕ - 30,4 центнер (гектар пуçне). Патшалăха тырă сутмалли плана колхоз 127 процент, çĕр улми сутмалли плана 185 процент пурнăçларĕ.

Хуçалăх государствăна аш-какай сутмалли плана 127 процент, сĕт сутмалли плана - 104 процент, çăмарта сутассине 201 процент, çăм сутмалли плана 106 процент пурнăçларĕ.

Кашни ĕнерен колхозĕпе 2809 килограмм сĕт сунă, пĕр surăхран 4,5 килограмм çăм каснă, кашни чăхран 212-шер штук çăмарта илнĕ. Галина Краснова дояркăн чи пысăк кăтарту - ĕне пуçне 3056-шар килограмм сĕт тивет, Валентина Лукина 3042-шер килограмм суса илме пултарчĕ.

Тырă сутмалли пилĕкçуллăх плана 135 процент, çĕр улми - 127, сĕт - 137, аш-какай - 113, çăмарта - 130, çăм сутмалли плана 107 процент пурнăçланă.

1975 çулхи июнь уйăхĕнче «Мотор» колхозри Культура çуртĕнче С.Е.Васильев тракториста тата мана, М.З.Зиновьева бригадира, «Ударник 9-ой пятилетки» знаксем пачĕç. Çавăн пекех çак знака В.Н.Платонов, Н.И.Николаев, А.П.Матвеева, Е.Е.Егорова, Н.Романов тивĕçрĕç, вĕсене Канашри Культура çуртĕнче 1976 çулхи январĕн 17-мĕшĕнче пачĕç.

Ялти Культура çуртĕнче КПСС Канаш райкомĕн пĕрремĕш секретарĕн Е.В.Роштов аллинчен «Ударник 9-ой пятилетки» знака çак юлташсем илчĕç: Г.Я.Аристархов, Д.П.Демьянов, Н.В.Николаева, В.И.Кудрявцев, П.Н.Николаева, Л.П.Нямуков, О.С.Сергеева, Е.П.Степанова, А.Т.Трофимов, В.Д.Зайцев, А.Д.Демьянов, А.П.Гуркина, М.Егорова, П.И.Иванов, И.А;Исаев, Е.П.Петрова, М.Д.Тихонова.

1975 çулта Вăрăмпуç ялĕнче 300 тонна çĕр улми хума хранилище туса пĕтерсе вăрлăх хывнă. 100 ĕне вырнаçмалăх вите тума пуçланă, ача сачĕ çывăхĕнчи фермăра шыв пăрăхĕ сем хунă, Пĕршенерте 150 вырăнлăх клуб тума тытăннă, Вăрăмпуç уйĕнче 500 тонна хумалăх удобрени склачĕ тунă.

ДТ-75 трактор (бульдозер), ДТ-75 трактор, тырă тасатмалли сортировка туяннă...»

**«Ĕç ăнăçлăхне çынсем татса параççĕ» интервьюран («Коммунизмшăн» хаçат, 1975 çул, сентябрĕн 26-мĕшĕ):**

«Путь Ленина» колхозри Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ, КПСС обкомĕн членĕ Мария Зиновьевна Зиновьева ертсе пыракан пĕрремĕш бригада çуллен çулах пысăк тухăçлă тĕш тырă тата выльăх апачлĕх культурăсем туса илет. Паян пирĕн корреспондент унпа калаçать.

**– Мария Зиновьевна, çанталăк условийĕсем начар пулчĕç пулин те сирĕн бригада кăçал пысăк кăтартусем турĕ. Çакăн пек типĕ çанталăкра гектартан 26 центнер ытла тĕш тырă туса илесси çăмăл мар...**

- Бригадăри ӳсĕмсем, паллах, пĕчĕк мар... Техника тата ĕç вăйĕн майĕсене тĕрĕс шута илсе çур аки планне хатĕрлетпĕр. Ăна кашни механизатор патне çитеретпĕр, расценкăсемпе паллаштаратпăр - çакă ӳсĕмсен çăл куçĕсем.

тăпрари нÿрĕке вăхăтра тытса хăварнă, культиваци тунă. Удобренисем те хăйсен ĕçне тунă. Çурхи тырăсен кашни гектарĕ çине пĕрер центнер кали тăварĕ, çавăн чухлех аммиак селитри хывнă. Вăрлăха суперфосфатпа пĕрле акнă.

Калчасем лайăх шăтса тухрĕç. Малтан тухăç тата пысăкрах пулмалла пек туйăнатчĕ, анчах çумăр çуманнипе нÿрĕк çителĕклĕ пулмарĕ. Пирĕн уйсенче, чăнах та, кĕллĕ вăрман тăпри кăна.

**– Апла çакăн пек тăпра çинче те пысăк тухăç илме пулать?**

- Паллах, 1973 çула аса илĕр. Ун чухне тĕш тырăсен тухăçĕ гектартан 33 центнер, выльăх кăшманĕ 1063 центнер пулчĕ. Ĕлĕкрех эпир çакăн пек тухăç пирки ĕмĕтленме те пултарайман. Халĕ вара 100 пăтлă мар, 200 пăтлă тухăç çинчен калаçатпăр.

**– Мария Зиновьевна, калаçура выльăх кăшманĕ пирки сăмах хускатрăмăр пулсан, ăна туса илмелли «вăрттăнлăх» çинчен каласа памăр-ши?**

- Темиçе çул каялла эпир, районти бригадирсем, «Знамя» колхозра пултăмăр. Иван Степанович Степанов бригадинче кăшман туса илес ĕç опычĕпе паллашрăмăр. Вĕсен тухăçĕ ун чухнехи вăхăтшăн пысăк пулнă - гектартан 500 центнер. Иван Степанович калчасене вăхăтра сайралатни тухăçа ÿстермелли тĕп услови тесе шутланă. Ку чăнах та çапла пулнине хамăр курса ĕнентĕмĕр. Кăшманăн виççĕмĕш е тăваттăмĕш çулçи тухсан, ăна пĕрремĕш хут сайралататпăр. Рет хушшисене вăхăтра кăпкалататпăр, çавăнпа пирĕн уйсенче çумкурăк çук...

**– Сирĕн «Путь Ленина» колхоз çĕрĕсем «За коммунизм» совхоз çĕрĕсемпе чикĕленеççĕ. Тĕш тырăсен пысăк тухăçĕпе кăна мар, выльăх апачлĕх культурăсен тухăçĕпе те мухтанма пултараймаççĕ шелттемсем...**

- Депутат ĕçĕсемпе эпĕ çак хуçалăхра час-часах пулатăп. Акă мĕн тĕлĕнтерет: эпир калчасене иккĕмĕш хут сайралатнă тĕле шелттемсем пĕрремĕш хут сайралатма та тытăнман. Çак ĕçе пĕр эрне кая юлса туни те тухăçа чылай

чакарать...

**– Кăçал «иккĕмĕш çăкăр» тухăçĕ епле?**

- Кăçалхи çанталăк условийĕсенче çĕр улми тухăçĕ пĕчĕк мар: кашни гектартан 180 центнер. Паллах, сахал мар ĕçлеме тиврĕ. Вăрлăхлăх çĕр улмине икĕ эрне яровизациленĕ, ăна лайăх хатĕрленĕ çĕр çине лартнă, удобрени çителĕклĕ хывнă. Çĕр улмие апрелĕн 25-мĕшĕнче лартса пĕтернĕ. Çулла, паллах, ретсем хушшине темиçе хутчен кăпкалатнă. Августăн 25-мĕшĕнче пухса кĕртме тытăннă.

**– Ĕç ăнăçлăхне çынсем татса параççĕ. Сирĕн камсем лайăхрах ĕçленине палăртас килет?**

- Чи малтан Валентин Белов механизатора асăнмалла. Геннадий Аристархов, Юрий Максимов, Валерий Внучков трактористсем те тăрăшса ĕçлеççĕ. Тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте Иван Александров, Алексей Родионов, Василий Николаев комбайнерсем лайăх ĕçлерĕç. Колхозницăсенчен Мария Зайцевана, Александра Матвеевăна, Пелагея Владимировна, Ольга Сергеевана тата ыттисене те мухтамалла...»

**1976 çулхи октябрĕн 9-мĕшĕнче «Коммунизм ялавĕ» хаçатра колхоза ертсе пыракансем çырнă рапорт пичетленнĕ:** «Путь Ленина» колхозри ĕçченсем вуннăмĕш пилĕкçуллăхăн пĕрремĕш çулĕнче пысăк тухăçлă ял хуçалăх культурисем пăхса ӳстерчĕç, уй-хирти мĕнпур ĕçсене ăнăçлă вĕçлерĕç. Пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсем кашни гектартан вăтамран - 35,8 центнер, çĕр улми 215 центнер, выльăх кăшманĕ 970 центнер туса илнĕ. Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ М.Зиновьева ертсе пыракан бригада кашни гектартан 36,8 центнер тĕш тырă, 251 цетнер çĕр улми, 1032 центнер выльăх кăшманĕ туса илнĕ. Государствăна тырă сутмалли социализмла обязательствăсене 105 процент, çĕр улми - 100 процент, утă сутмалли обязательствăсене 120 процент тултарнă. Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне сĕт сутмалли çулталăкри плана - 109 процент, çăм сутмалли плана 114 процент тултарнă. Çулталăк вĕçлениччен «Путь Ленина» колхоз ĕçченĕсем маларах йышăннă обязательствăсенчен ирттерме 1 пин центнер ытла сĕт, 100 центнер

аш-какай тата 500 центнер çĕр улми сутаççĕ...»

**Çакăнтах КПСС Чăваш обкомĕ, Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ, Чăваш АССР Министрсен Совечĕ, облпрофсовет, ВЛКСМ Чăваш обкомĕ саламлани çапăннă:** «Сире тата колхозри мĕнпур ĕçченсене уй-хир ĕçĕсене ăнăçлă вĕçленĕ тата государствăна çĕр ĕç продукчĕ семпе выльăх- чĕрлĕх продукчĕсем сутмалли социализмла обязательствăсене пурнăçланă ятпа чĕререн саламлаççĕ...

...Эсир вуннăмĕш пилĕкçуллăхăн пĕрремĕш çулĕнчи плансене тултарас енĕпе тăрăшса ĕçлени вăл мĕнпур колхозниксем КПСС XXV съезчĕн решенийĕсене пурнăçлассишĕн иксĕлми хастарлăхпа кĕрешни çинчен калать.

Сире, хаклă юлташсем, ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума çирĕп сывлăхлă, пурнăçра телейлĕ пулма ырă сунатпăр...»

**В. Исаев журналистăн «Паттăрлăх» корреспонденцийĕнчен («Коммунизм ялавĕ» хаçат, 1976 çул, декабрĕн 8-мĕшĕ):**

- Кĕрхи тулă пĕр хире 60 гектар акнăччĕ те, 54-шар центнер тухрĕ. Тепĕр хирĕнче çав культурăна 24 гектар акнăччĕ. Кунта вара кашни гектартан 60-шар центнер пухса илтĕмĕр. Ыраш та тухăçлă пулчĕ, 74 гектар акса, кашнинчен 39-шар центнер пӳлмене кĕчĕ. Çапла, гектарсене тав тумалăх пур кăçал, ĕçчен çынна савăнтарма шутланă вĕсем, тейĕн. Бригадăна çирĕплетсе панă кашни гектартан вăтамран 36,6 центнер тĕш тырă алла илтĕмĕр. Гектартан 251-шер центнер çĕр улми, 1031-шер центнер выльăх кăшманĕ тухрĕ. Хамăр ӳстернĕ пĕр килограмм пуянлăха та юр айне хăварман. Тавра ялсенче «Вăрăмпуçсем пурте шурăмпуçпе хире тухаççĕ!» тени чăннипех те тĕрĕс. Бригадăри ĕçченсем кашни пучах çине, пĕр ывăç улăм çине, ăнсăртран тăпрана варăнса юлнă çĕр улми çине чăн-чăн тирпейлĕ хуçасен куçĕпе пăхаççĕ. Хăйсен пурлăхĕ вĕт. Тата камăн-ха пултăр?..

Итлесе ларатăн та çак сăмахсене, çакăн çинчен каласа паракан хĕрарăма чĕререн хисеплесе, пуç тайса тав тăвас килет. Чи малтанах - кашни çын чĕрине уçма, хавхалантарма, кирлĕ чухне пулăшма тимлĕхпе вăй-хал çитĕнтернĕшĕн.

ывăннине нихçан та кăтартманшăн та.

Мария Зиновьевна Зиновьева Канаш районĕнчи «Путь Ленина» колхозри пĕрремĕш комплекслă бригадăна ертсе пырать. Ытти хĕрарăмсенни пекех, унăн та çемье, упăшка, ача-пăча, килти «вучах» пур ĕнтĕ. Ăна тата хĕрарăмсен советне ертсе пыма суйланă. Стена хаçатне те манса хăвармасть вăл. «Йышăннă пулсан, кăлармаллах!» - тет.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Мария Зиновьевна патне канашласа пăхма е пулăшу ыйтма пыракансем ăна «çур сăмахран ăнланма пултарнишĕн» ăшшăн тав тăваççĕ.

Нумай вулать Вăрăмпуçсен бригадирĕ, хăй çапах та пурнăç уттинчен юласран шикленет. Вăл уй-хир бригадирĕ çеç мар, ял çыннисемшĕн ăслă пропагандист та.

Пысăка хурса хакланă Мария Зиновьева ĕçне тăван партипе правительство, икĕ хутчен ăна Ленин орденĕпе наградăланă...»

«Сельская жизнь» хаçатăн 1976 çулхи декабрĕн 25-мĕшĕнче РСФСРти ял хуçалăхĕнче малта пыракансене Социализмла Ĕç Геройĕн ятне парасси çинчен СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ пичетленсе тухать: «Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртура чаплă çитĕнӳсем тунăшăн, 1976 çулта тĕш тырă тата ытти ял хуçалăх продукчĕсем туса илессине тата вĕсене государствăна сутассине ӳстерес тĕлĕшпе плансемпе социализмла обязательствăсене пурнăçлас ĕçре паттăрлăх кăтартнăшăн **Социализмла Ĕç Геройĕн** ятне парас, Ленин орденĕ тата «Çурлапа мăлатук» ылтăн медаль памалла тăвас:

Мария Зиновьевна **Зиновьевăна** - Чăваш АССРĕнчи Канаш районĕнчи «Путь Ленина» колхоз бригадирне.

Сергей Лукич **Лукина** - Чăваш АССРĕнчи Вăрмар районĕнчи Мичурин ячĕпе хисепленекен колхоз председательне...»

Çак Указпах колхоз председательне В.Н.Платонова Октябрьти революци орденĕпе наградăланă. С.Е.Васильев тракторист Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ, В.В.Зайков зоотехник

«Ĕçри хастарлăхшăн» медаль, М.П.Матвеева «Ĕçре палăрнăшăн» медаль илме тивĕç пулнă.

**Л. Решетников журналистăн «Щедрость» статйинчен («Советская Чувашия» хаçат, 1976 çул, декабрĕн 25-мĕшĕ):**

«Можно без преувеличения сказать, что Марию Зиновьевну Зиновьеву, бригадира колхоза «Путь Ленина», знает весь Канашский район. Но, конечно же, никто не знает ее лучше, чем односельчане – новоурюмовцы. А особенно – женщины. Я разговаривал со многими их них во время частых поездок в колхоз. Из тех бесед, а порой и мимолетных разговоров, и родился рассказ о строгом бригадире, думающем агрономе и настойчивом депутате. Под этим рассказом могли бы подписаться десятки новоурюмовцев. Но пусть это будет рассказ двух сестер – Таисии и Анастасии Захаровых, с которыми был у меня разговор в недавний декабрьский приезд в Новое Урюмово.

Какой, по-моему, человек Мария Зиновьевна? Одним словом не ответишь, потому что разная она бывает. Мне так больше всего по душе ее смелость. Слыхали, как она говорит на собрании о каких-нибудь непорядках? Горячо говорит, от сердца, с чинами не считается. Ох, жарко бывает тем, кого она критикует!.. И ведь что важно: не отступится, пока дело не поправится.

А как она бригадиром стала, знаете? Все началось опять же – с критики. Приехала она к нам в Новое Урюмово годов эдак двадцать назад – вместе с нашим Василием Платоновым. Вместе они на агрономов учились – там и полюбили друг друга. Василия Николаевича мы скоро председателем избрали, а ей по ученому званию работы нет. Понятно, приглядываемся: что-то будет делать председателева жена. Смотрим, на работу в бригаду выходит. И все-то у нее ловко получается. Видим: не балованная, к труду привычная. А в деревне, известно, человек со старанием да сноровкой всегда в уважении.

Вот этим-то она сразу нам по душе пришлась. Рас-

сказывала, какие у них в родном колхозе строгие порядки, дивилась нашим. И в самом деле порядка у нас в ту пору не было. Уж куда хуже: телегу да сбрую возчики по домам держали. Мужики в сенокос да в копку картошки на работу только и выходили – за проценты. Да еще бригадир пьянствовал, оттого и дело криво-косо шло. - Верно, ты говоришь, Маруся, - соглашались мы с ней. – Вот муженька-то своего, председателя, значит, и пожурила за это…

- Да уж был разговор, - отвечает досадливо. После-то мы узнали, что по-крупному разговаривали Василий Николаевич с Марусей. В деревне разве что утаишь? Председатель-то, конечно, сам видел, что бригадира нашего, к примеру, заменять надо, а кого поставишь? Маруся будто бы на те слова ему ответила: «А хоть бы и меня. Вот завтра же подам правленцам заявление…»

А что подавать, когда она у нас и без того уже в бригаде верховодила. Бригадир пьянствует, а Маруся с нами посоветуется и распорядится, кому что делать. Не думайте, что ей в начальники хотелось. Такая уж она – непорядка не терпит. И нам непорядки эти осточертели. Вот мы и пошли к председателю:

- Ставь Машу свою бригадиром!

- Что вы, неловко ведь – жена…

- А бездельника и пьянчужку хорошо терпеть?

Согласилось с нами правление – назначили Марию Зиновьевну бригадиром.

С тех пор по-другому пошли дела у нас в бригаде. Молоденькая бригадирша первым делом взялась за дисциплину. Многие и сами образумились – Мария Зиновьевна умеет к человеку и по-хорошему подойти. И еще вот что людей подтянуло: у нее даже самое малое дело в записи, начислено за него честь-честью. Человеку приятно: ценят его труд, вот он и старается.

Провели мы с Марией Зиновьевной первую посевную – никогда до того такими добротными семенами не сеяли, на колхозные поля навоз даже со своих дворов вывезли,

зола тоже в дело пошла. Собрали урожай – в районе в передовиках оказались.

Радовались мы с бригадиром первому успеху, на будущее планы строили. Да пришлось отложить их на целых три года. Заметили в районе нашу Марусю – напористую, боевую. Но и сосватали в райком партии инструктором. Первое время, с год наверно, в бригаде все шло заведенным при ней порядком. А потом хуже да хуже, все наперекос. Правду сказать – бывала она у нас, норовила помочь делу, да много ли набегом –то сделаешь. А у бригадира ни хватки, ни старания. Жаловались мы ей:

- Худы у нас дела, Маруся. А тебя не надоело еще по колхозам мотаться? Да прок-то хоть от этого есть ли?

- По правде сказать, мало проку, - отвечает с досадой. – Просилась обратно к вам, да не пускают пока. Говорят, партийная дисциплина.

Ну, потом по-нашему и повернулось, постановление партии такое вышло, чтобы агрономам да зоотехникам, которые в канцеляриях сидели, в колхозах работать. Наша Маруся первая тогда в колхоз вернулась. Радовались мы, а про Марию Зиновьевну и говорить нечего: опять она стала у дела, которое всего дороже, к земле вернулась, на которой сызмальства работала и росла.

Будто сегодня было – помню, хоть четырнадцать лет прошло, как заявилась она к нам на конюшню, где мы навоз на сани накладывали. Щеки на морозе так и пышут, глаза горят и улыбка счастливая. А ведь по правде сказать, нечему было больно-то радоваться в те первые дни ее возвращения, два-три мужика выходило на работу, да и женщины не все. Мария Зиновьевна в те поры сама не раз за вилы бралась и вместе со всеми навоз кидала. Да убеждала нас:

- Нечего носы вешать – действовать надо. Если каждая из нас пристыдит хотя бы одного прогульщика – большая будет польза. Одной мне, конечно, с ними не совладать. На вас надеюсь.

После таких разговоров мы тоже, понятно, за лодырей и нарушителей взялись. И с каждой неделей все больше общественном помышляли. Знаете деревенскую традицию: сойдемся мы, бабы, у колодца и судачим. Так вот прежде все больше о житейском, об уличном плели. А тут замечаем: сам собой выходит разговор о колхозных делах.

Ну, и бригадир наш действовала с умом, хотя и напористо. Одних увещевала наедине, других - срамила принародно, а третьих – наказывала через правление. И общие разговоры тоже вела – на покосе, на молотьбе, у складов и в других местах, где народ работает. Ее убежденность, что нет ничего главнее, чем общественный интерес, - и нам передавалась.

Не скоро, не сразу, а порядок в бригаде наладился. К тому же Маруся пример нам подавала: за всем-то она доглядит, каждого приметит. Всегда бодрая, загорелая, от темна до темна на своих двоих, на двуколке, на велосипеде колесит она по полям да деревенским улицам. Где ласковое, либо озорное слово скажет, где пристыдит, где человека со вниманием выслушает.

Вот уже сколько лет и живем одной семьей. И год от году наша бригадная семья дружнее да крепче. Потому что у бригадира голова, как говорится, не для шапки только. И сердце до людей щедрое. Ну, и мы ей тем же платим…

До Машиного бригадирства мы, колхозницы, в агротехнике мало что понимали. Да и не больно вникали, как там пашут-сеют – на то трактористы есть. На уборке работы для нас, конечно, поболе. Да ведь крестьянское дело с малых лет нам известно: что мудрить-то?

Ан, оказалось, есть чего. Семена, к примеру, высевали – лишь бы чистые были. А Мария Зиновьевна, считай, первой в районе, стала сортировать их по величине – калибровка называется. Да еще сорта всякие новые пробовать. Опять же навоз: теперь не тонким слоем по полю разбрасываем, а густо ложим, хотя и на малой площади. Зато землица не на один год заправляется. Да и не про-

сто навоз, а компост перепревший – сорнякам-то ходу нет. Минеральные удобрения не на глазок рассеиваем, а куда сколько надо. И не по верху, а сеялкой – к самым корням, семенам. Всего-то не расскажешь, что для урожая применяется, но одно знаем: все по науке делается и непременно в комплексе.

И еще – самым наилучшим образом. Вот нынче говорят: дескать, теперь пятилетка качества. А я так скажу: за качество работы у нас в бригаде давным давно спрос первейший. Особенно с механизаторов. Первое время, бывало, страсть как спорили трактористы, если заставляли их переделывать забракованные участки, да еще без оплаты. Но Мария Зиновьевна сумела-таки на своем настоять. И давно уж у нас за хорошее качество плата особая. Сейчас уж и помину нет, чтобы кто где схитрил, совесть хлеборобскую забыл. Всяк помнит: для урожая старается. На собраниях хвалят наших механизаторов: Силидора Васильева – звеньевого по свекле и картошке, Алексея Яковлева, Геннадия Аристархова, Германа Сергеева, Алексея Родионова. По правде сказать, хулить некого и не за что. Каждый старается исполнить дело свое точь-в-точь как по агротехнике требуется. И мы, женщины, на ручных работах так же…

Земля за труды наши да за радение, за Машин научный подход и приверженность к ней щедро одаривает. Про урожай наши, поди, сами слыхали? Намолотили мы нынче без малого по 37 центнеров зерна с гектара. Это на наших-то суглинках да подзолах. Уже на что в семьдесят пятом году засуха была какая, и то по двадцати одному с половиной вышло. Это вдвое больше, чем в самом урожайном году лет пятнадцать назад.

Или взять свеклу. Выкапываем мы ее нынче в поле, выкапываем, машины без остановки возят, а выкопанного места вроде и не прибавляется. И приятно, что корней так много, и досадно, что дело медленно продвигается. Говорим о том нашей Марусе – вроде бы в шутку.

- А вы знаете ли, - отвечает бригадир малость погодя,- какой урожай выходит? Больше тыщи центнеров с гектара! Вот так-то. А картофеля нынче накопали по 252 центнера с гектара. И со всякой полевой работой управились в лучшую пору до ненастья и заморозков. Не зря говорят, ранняя птичка клюв прочищает, а поздняя только глаза протирает. Наш бригадир Марья Зиновьевна так дело вела, что все колесом катилось, на все времени хватило.

Вы думаете, сколько лет нашей Марусе? То-то и оно – к полсотне катится. А видели, какая она по-молодому огневая и неуемная? Мало того, что с бригадирством управляется лучше не надо - она еще и депутат Верховного Совета Чувашии. Два срока подряд ее избираем. Потому что видим: человек для народа старается, сил не жалеет. Скольким людям она помогла – не счесть. И по деревням тоже: в одной по ее настоянию фельдшерский пункт открыли, в другой – детсад, к третьей дорогу асфальтовую тянут.

И завсегда она с народом. Как вернется из Чебоксар с сессии – сейчас по деревням. Рассказывает людям, что там в Верховном Совете решили, какие дела первейшие. Да не одна едет, а со своим драмкружком. Да, есть у нас такой – тоже ее детище. Она сама, да Марья Повернова, да Василий Степанов, да Манефа Осипова, да Владимир Зайков и другие еще любители ставят пьесы. И ведь все такие выбирают, что не для одной потехи, но и для ума польза. Дом культуры у нас человек, пожалуй, на полтысячи, а на тех спектаклях в зале всегда тесно.

Или взять еще стенгазеты. Есть у нас общеколхозная, а Мария Зиновьевна задумала еще бригадную выпускать, а потом и женсоветскую (она ведь у нас председатель женсовета). И такие газеты выходят: боевые да задиристые, что нарушители как огня боятся попасть в них: засмеет народ. А уж кого похвалят – непременно по заслугам. Потому что всяк знает, Марья Зиновьевна человек справедливый.

Видимо, поэтому идут к ней люди – за помощью, за советом, просто душу отвести. И никому от нее нет отка-

зу. За годы, пока она председательствует у нас в женском совете, не счесть, скольким семьям помогли мы жизнь наладить, скольких мужиков от горькой отучили. Женщины наши, глядя на Марусю, куда активнее стали…

…Вы сами посудите: можно ли, глядя на нее, в сторонке стоять? Сколько у нее общественных дел, кроме бригадирства, и в каждое она щедро душу вкладывает, на все у нее времени и сил хватает.

И на семью и детей –тоже. Хотя всяким делом загружена она дальше некуда, а растет у нее четверо трудолюбивых детей. И об этом женщинам поучительно потолковать с ней. А может ребята у нее потому такие примерные, что видят перед собой пример матери и отца? В семье-то у них лад, хорошая, завидная дружба. Знаем мы, что иной раз спорит Маруся с мужем-председателем из-за несогласия по какому-нибудь колхозному делу. Но ведь это не в счет, наоборот, семейное согласие укрепляет. Потому что роднит их главное – забота об общественном хозяйстве.

Да и с нами тоже – это роднит Марию Зиновьевну. Одни у нас с ней горести и радости, удачи и неудачи. Но мы-то верим: с таким вожаком-коммунистом, с человеком такой душевной щедрости и жадности к работе куда больше будет у нас радостей и удач.

***

Щедрость к людям, жадность к труду. Сколько раз был я свидетелем проявления этих качеств. Это и тогда, когда спорила она с экономистом о доле удобрений для ее бригады, и когда убеждала председателя одного из колхозов в своем избирательном округе в преимуществах постоянных механизированных звеньев, и когда горячо критиковала с трибуны районного совещания нерадивых кооператоров. А посмотрели бы вы, как задушевно беседовала Мария Зиновьевна с соперницей по соревнованию –бригадиром янтиковского колхоза Татьяной Смельцовой, как без утайки делилась опытом. Недавно же я услышал восторжен-

ный отзыв одного из канашских бригадиров о выступлении М.З.Зиновьевой на республиканском семинаре: «Вот человек так человек! А в деле своем - академик!..»

Преувеличение? Возможно. Но не зря говорят, что не скудеют силы щедрого душой человека: ответная щедрость людей, с которыми живет он, умножает их. И еще говорят: любимая работа не в тягость, а в радость. Не в этом ли секрет неутомимости и успехов Героя Социалистического Труда М.З.Зиновьевой – бригадира и агронома, депутата и коммуниста.»

**М.З.Зиновьева çырса пынă кун кĕнекинчен:**

**«...1976 çулхи** çур акине майăн 19-мĕшĕнче вĕçлерĕмĕр. Утă хатĕрленĕ чух çумăр тăкрĕ, июнĕн 8-мĕшĕнче курăк çулма пуçларăмăр...

Августăн 8-мĕшĕнче пăрçа çулма тухрăмăр...

...1976 çулта автомашина туяннă... Ĕне витине туса пĕтернĕ. Пĕршенер ялĕнчи клуба туса пĕтерсе хута ярайман-ха...

Кăçалхи апрелĕн 12-мĕшĕнче Мускавра Раççей Федерацийĕн канашлăвĕнче пулни асран тухмасть.

Декабрĕн 25-мĕшĕнче радиопа мана герой ятне панине илтсен пĕр хушă нимĕн те тума пултараймарăм, макăрсах яраттăм...

Çулталăкри итогсем пире савăнтараççĕ... Эпĕ Социализмла Ĕç Геройĕ пулса тăтăм. Çакă ман ĕçе çеç мар, пĕтĕм колхозăн ĕçĕ-хĕлне хаклани те...»

**Л.Алексеев журналистăн «Çăлтăрлă çул» очеркĕнчен («Коммунизм ялавĕ» хаçат, 1977 çул, январĕн 1-мĕшĕ):**

«Каç пулттипе çил-тăман ахăрчĕ. Ир енне кăштах сивĕ трĕ. Уçă. Аслă урампа кăпăшка юр çийĕпе йĕр хăварса пĕр хĕрарăм утать.

Часах вырăнти радиоузел тăрăх пурте тахçантанпа илтме хăнăхнă сасă янăраса каять, ĕçе тухма йыхăрать.

- Маруç ыйхăран вăрататать, авă, тăрăр, – шăкăлтатаççĕ килĕрен.

Правлени çуртĕнче нумай тытăнса тăмасть, каллех çула тухать Мария Зиновьевна. Фермăра выльăхсем валли утă-улăм кӳрсе хумалла, комбикорм илсе килмелле, хире юр тытма тухмалла унăн паян.

- Плаки аппа, сенĕк-кĕреçе ил, улăм кӳме...
- Улькка, санăн халех фермăна çитмелле.
- Ирина, çамрăксене пух, щитсем лартатпăр...

Килĕрен киле çӳрет бригадир, пурне те ятран каласа ĕçе чĕнет.

Вун сакăр çул ĕнтĕ çапла - çулла та, хĕлле те. Шухăшлă сыннăн ыйхи кĕске тенĕ пек, канăçа пĕлмест Мария Зиновьевна. Акă иртнĕ кунсем асрах-ха. Вăрăмпуç каччи Василий Николаевич Платонов çĕнĕ мăшăр илсе килнĕ. Агроном. Шăпах ялта кирлĕ çын. Ĕçе кĕрес тесе пырать правление.

- Кирлĕ мар пире агроном, унсăрах пурăннă ку таранччен, - хăй илтнине хăй ĕненмест çамрăк специалист.
- Апла пулсан, бригадир пулма та килĕшетĕп эпĕ...
- Э-э, санпа-и, кунти халăха ар çынсем те итлеттерейменçĕ, виç-тăватă çултан улăштарсах тăратпăр. Бригадир тени хĕрарăм ĕçĕ мар вăл...

Ытти колхозниксемпе пĕрле ĕçе тухать çĕнĕ çын. Суха тăвать, тырă акать, тислĕк хатĕрлет... Пĕр ĕçрен те юлмасть, алли вараланса-çуркаланса пĕтесрен шикленмест. Пачах урăхла. Утă вăхăтĕнче-и, алăпа тырă вырнă çĕрте-и - йышран иртерех çитет те, ĕçе хăвăртлатас шутпа, çынсене уйрăм лаптăксем виçсе парать, каçхине, киле каяс умĕн, кун каçа мĕн чухлĕ ĕç тунине шутласа кăтартать. Шанчăклă тус - пурнăç тĕрекĕ тенĕ пек, хĕрарăмсем шăкăрах пуçтарăнаççĕ ун тавра, кăмăл турамне çурмалла валеçеççĕ. Çав вăхăтра виçĕ бригадир улшăнать ялта. Тăваттăмăшне тупса лартма çын шыраççĕ.

- Çитет кун пек камит кăтартакансемпе пурăнса, – теççĕ тăвăнса çитнĕ хĕрарăмсем пĕр харăссăн. - Пӳрт-çурт тытма тăн-пуç кирлĕ. Пирĕн хамăрăн йышрах пур ун пек çын. Бригадир пулма Мария Зиновьевăна суйлатпăр...

Кашни гектартан ултă центнер тырă туса илнĕ çавăн

чухне Вăрăмпуçĕнчи бригада. Чухăнланса юлнă тăпраран унран пысăкрах тухăç кĕтме те çук ĕнтĕ. Çĕрĕн хăватне ӳстермелле. Анчах мĕнле майпа? «Тислĕк тăксан, тикĕс шăтать, тăванăмсем», – килĕрен киле çитет бригадир.

- Фермăра выльăхсем айсарăмне хулăнлатăпăр. Пĕлетĕр-и эсир, тислĕке фосфорит çăнăхĕпе хутăштарсан, питĕ лайăх компост пулать.

Колхозниксем хĕл каçипе фермăра пухăнса пынă тислĕке пĕр çĕре купалаççĕ, çиелтен пăс тухса тăрасран тăпрапа витеççĕ. Çуркунне лавсемпе хире турттараççĕ, çĕр улми лартмалли вырăна хураççĕ, хăш-пĕрисен иккĕленес шухăш та пур. Çĕрнĕ-çĕрмен тислĕке хире кăларсан - усси пур-ши? Парăнмасть бригадир. «Епле çĕрмен, курăр, акă, хăмăр тĕслĕ пулса кайнă. Паян кăларатпăр та паянах сухаласа тăпра айне тăватпăр», - çирĕплетет хăйĕн шухăшне. Кĕркунне çав уйра кашни гектартан 158 центнер çĕр улми пухса кĕртеççĕ вăрăмпуçсем.

Çуркунне, уй-хир хуралса çитнĕ-çитмесĕрех, колхозниксене ура çине çĕклет бригадир. Вăрлăх им-çамламалла, çĕр улмине папки симĕсленме уçă вырăна кăлармалла, сӳресене хатĕрлесе хумалла. Сахал-и ĕç? Пушшех канăçсăрланса каять вара. «Васкарах ĕçлер, ир акакан тырăсăр юлман. Ака уйăхĕнчи ыйхă - авăн уйăхĕнчи хуйхă. Вăхăтра ĕлкĕресчĕ». Хăй, çĕр пичĕ кушăхсан, хире тухать те кĕме те пĕлмест. Хырлăх çумĕнчи тăпра пирчекрех. Кунта уйрăмах тимлĕ пулмалла. Асăрхать бригадир, механизатор çиелтен çеç шăйăрттарса кайнă. Трактор патне пырать.

- Хам урлă касса кайсан та вырăнтан хускалмастăп. Капла тирпейсĕр ĕçлеме юрамасть. Ял-йыша хисеплемесен, ят хуралать. Асра тыт çакна. Лаптăка тепĕр хут культиваци тума тивет.

Килĕшсех каймасть хăшĕ-пĕрисене бригадăри йĕрке çирĕпленсе пыни. Ĕçрен пăрăнма юратакансен пурнăçĕ уйрăмах йывăрланать. Мария Зиновьевна уйăхран уйăха стена хаçачĕ кăларса тăма тытăнчĕ. Кам лайăх ĕçлет - унăн ячĕ хисепре. Ыттисене унпа танлашма чĕнет. Юлхавсене

хытах çунтарса илет.

- Ну, тупрăр та вара пуçлăх, бригадир мар, вут-çулăм ку, - текеленĕ хăш-пĕрисем. Хăйсем вара ун аллине тек япăхпа лекес мар тесе, ыттисемпе танах ĕçе тухма тытăннă.

Бригадир пултарулăхне районта асăрханă. Ăна ял Совет ĕçтăвкомĕн секретарĕ пулма суйлаççĕ. Каярахпа КПСС Канаш райкомĕн инструкторĕ пулса ĕçлеме илеççĕ. Килĕ шет пек çĕнĕ ĕç, анчах тăван ял асран тухмасть. Бригадăра ĕçсем япăхланма пуçлани татах пăшăрхантарать. Партин Центральнăй Комитечĕ коммунистсене, парти работникĕсене яла ĕçлеме ярасси çинчен пĕлтерсен, чĕри тата хыттăнрах тапма тытăнать унăн.

- Çип ăçтан çинçе, çавăнтан татăлать. Хамăрăн колхозах яма ыйтатăп. Бригадăри ĕçсем канăç памаççĕ. Çĕртен уйрăлма пултараймастăп, - тет вăл.

Çакăн хыççăн каллех бригадир пулса тăрать Мария Зиновьевна. Юратнă ĕçе тата пысăкрах хастарлăхпа кӳленет.

Пĕррехинче хаçатра Ленинград облаçĕнче пысăк тухăçлă çĕр улми туса илни çинчен вуласа пĕлнĕ вăл. Çийĕнчех правленире ыйту хускатнă. Лартса çитĕнтермелле пирĕн те çав сорта. Ăçтан тупăпăр тетĕр-и? Ыранах автомашина кăларма ямалла. Унсăрăн пире никам та киле килсе парас çук. Çавăнтанпах çĕнĕ сорт «гатчинский» çĕр улми çитĕнтерет «Путь Ленина» колхоз, ăна ытти хуçалăхсене те пиншер центнер сутать. Çĕнĕрен тĕш тырă сорчĕсене те çавăн пек майпах кӳрсе килнĕ колхоза, вĕсен лаптăкне çултан-çул ӳстерсе пыраççĕ.

- Паллах, вĕлле хурчĕ пĕччен нумаях пыл тăваймĕ, - тет Мария Зиновьевна. - Ĕçчен йышпа пуян пирĕн бригада.

Çав йыша туслă çемьене пĕрлештерес тесе ывăнма пĕлмесĕр вăй хурать те ĕнтĕ вăл. Вăрăмпуçĕнче малтанхи вăхăтра куç чирĕпе аптăракансем те сахалах мар пулнă-ха. Ăна, хĕрарăмсен совечĕн председательне, пайтах ĕçлеме тивнĕ вĕсен хушшинче. Кашнин историне кĕрсе тухнă, вăтанмасăр-именмесĕр. Тасалăх мĕнлерех? Ал шăлли, супăнь, шăл тасатмалли хатĕрсем пур-и? Çук пулсан, мĕншĕн

туянман? Пĕринпе юлташла калаҫать, теприне вĕрентсе-ятласа калама та тивет. Хĕрарăмсен совечĕ хаҫат кăларса тăрать. Унта тĕрлĕ канашсемпе сĕнӳсем. Учительсем, ялти медицина работникĕсем тата ыттисем пулăшаҫҫĕ Зиновьевăна ҫак ĕҫре. Ҫамрăк ăрăва пăхса ҫитĕнтерес ĕҫпе те интересленет вăл. Учительсемпе курнăҫса калаҫать - камăн ачи япăхрах вĕренет е час-часах шкула ҫӳремест - ашшĕ-амăшне совет ларăвне чĕнтерет. Пĕр-пĕрин хушшинче юлташла, усăллă калаҫу пулса иртет унта.

Каҫсерен уявсенче ялти Культура ҫурчĕ яш-кĕрĕмсемпе, халăхпа тулать. Паян спектакль пулать унта. Сцена ҫинче Мария Зиновьева та пур. Вăл спектакльти пĕр-пĕр роле вылять. Ытти артистсем - ял Совет ĕҫтăвкомĕн председателĕ Николай Никонов, парторганизаци секретарĕ Манефа Осипова, Мария Повернова колхозница, Владимир Зайков зоотехник... Вăрăмпусĕнче кăна мар, кӳршĕри «Восток» колхозра, «За коммунизм» совхозра тата ытти хуҫалăхсенче хăйсен пултарулăхне кăтартаҫҫĕ вĕсем. Мария Зиновьева - депутат. Иккĕмĕш хут ĕнтĕ ăна Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ пулма суйланă.

Депутат ĕҫĕ нумай енлĕ. Ялти хĕрарăмсем чылайăшĕ ачасем пĕчĕккине пула ĕҫе йĕркеллĕ хутшăнайман. Ача сачĕ туса лартас пирки пĕр вырăна кăна мар ҫитнĕ. Ҫурт кĕҫех пулать, проектне хатĕрлесе ҫитернĕ. Депутат тăрăшнипех учительсем валли колхоз вăйĕпе тăватă хваттерлĕ ҫурт лартнă, шкула вĕри шывпа ăшăтмалла тунă. Ҫын татăлмасть депутат патĕнчен. Александра Матвеева пирки райпланра пулнă вăл. Ҫурт-йĕр ҫавăрма йывăҫ тупса илме пулăшнă, Василий Сергеева, колхозри пултаруллă ĕҫчене, хĕл каҫмалăх вутă кӳрсе панă.

- Ял-йышпа пĕрле ҫапла пысăк ĕҫ тăватпăр,- пĕтĕмлетсе калать бригадир. «Тумлам ҫине тумлам - кӳлĕ пулать, пĕрчĕ ҫине пĕрчĕ - кăшăл тулать».

Вуннăмĕш пилĕкҫуллăхăн пĕрремĕш ҫулĕнче Вăрăмпусĕнчи тыр-пулшăн кĕрешӳ нихҫанхинчен вăйлăрах пулчĕ. Ҫĕртме сухине малтанхи кĕркуннех - августпа сентябрьте

*Патшалăх Думин депутачĕ В.С.Шурчанов М.З.Зиновьевăна çуралнăранпа 70 çул çитнĕ ятпа ăшшăн саламлать. 1999 çул, март*





*Малти ретре лараççĕ: М.З.Зиновьева, В.Н.Платонов, тăраççĕ: Е.В.Роштов, Н.И.Никонов, М.В.Платонов, М.Е.Ефимов.*



*М.З. Зиновьева Руслан ывăлĕпе, 1980 çул*

*1974 çул*





*М.З.Зиновьева Гурий Зиновьевич Крылов шăллĕпе*

*Октябрьти революци 70 çул тултарнине уявлама килнĕ «Путь Ленина» колхоз делегацийĕ, М.З.Зиновьева малти ретре ларать*






*Патшалăх наградине илнисем: Пелагея, М.З.Зиновьева, Раиса, 1974 çул*





Волгоград, 1963 çул



- тарăн сухаласа хăварнăччĕ. Хĕл кунĕсенче колхозниксем мĕнпур лаптăк çине юр тытрĕç. Çур акине тухас умĕн бригадир çынсене камăн ăçта ĕçлемеллине кăтартса пачĕ. Иван Павлов, Валентин Белов механизаторсем нӳрĕке тытса хăварнă чух та, çĕре кăпкалатса тырă акнă çĕрте те кунне-çĕрне пĕлмерĕç. Вĕсемпе юнашар вăрлăх турттаракансемпе сеяльщиксем пикенсе ĕçлерĕç. Силидор Васильев вара çу каçипех çĕр улми пуссинче пулчĕ. Çумăр çуса иртет те, çĕр пирчĕнсе ларать. Бригадир каллех механизатора ретсене кăпкалатма хушать. Виçĕ-тăватă хут кăпкалатса тухрĕç, тымар патне сывлăш кĕрсе тăма чарăнмарĕ. Кăшман пуссинче те çу каçипех халăх йышлă пулчĕ. Ватти-вĕтти те тухрĕ. Бригадир кашнин ĕçне сăнаса-тĕрĕслесе тăчĕ.

Тырă вырнă çĕрте вара Алексей Родионов, Валерий Васильев, Василий Николаев комбайнерсем пысăк ăсталăхпа палăрчĕç. Бригадир уйрăлма пĕлмерĕ вĕсем патĕнчен. Пĕри агрегатне хускатса ярать те, теприн патне хыпкаланса çитет. «Ну, мĕнлерех? Вырса пĕтерĕпĕр-и çак лаптăка? Юлнă ĕç çине юр çăвать, ачасем, паянхине ырана хăварар мар». Йышпа тухса выртса пĕтнĕ вырăнти тырра çавапа çулаççĕ. Комбайнсем кăнтăрла хăмăлтине, сывлăм ӳксен, çулнă тырра пухса çапаççĕ. Бригадир çак тапхăрта пĕтĕм йыша хире кăларать. Колхозниксем пĕр хушăрах тырă тасатаççĕ, улăм пухаççĕ, теприсем çĕр улми пуссинче тăрăшаççĕ. Çĕр шăнтиччен пĕтĕм пурлăха пухса илме ĕлкĕреççĕ. Кун хыççăн «Правда» колхоза çĕр улмипе кăшман пуçтарма пулăшаççĕ.

Районти малта пыракансен слетне тулли кăмăлпа пычĕ Мария Зиновьевна. Унăн бригадине лайăх енĕпе асăнчĕç докладра. Кашни гектартан вăтăр çичĕ центнер тĕш тырă пухса кĕртнĕ. Ку вăл хăй бригадир пулса ĕçлеме пуçланă çулхипе танлаштарсан ултă хут нумайрах. Çĕр улми тухăçĕ 252 центнера çитнĕ, выльăх кăшманĕ 1032 центнер тухнă. Çак пурлăха кĕллĕ, шурă тăмлă тăпра çинче туса илнĕ. Вăй-хала хĕрхенмесĕр ĕçленипе, халăх хастарлăхĕпе пулнă пуянлăх. Хуçалăхĕ пĕчĕкех мар. Ял хуçалăхĕнче усă куракан çĕр пин гектара яхăн. Докладчик çакна та палăртрĕ. Районти

хăшпĕр хуçалăхсенчи бригадăсем тыррине те, çĕр улмине те тутанса пăхмалăх кăна пухса илнĕ. Çакă чылаях хумхантарчĕ бригадира. Сăмах тухса каларĕ.

Пичĕ, çуллахи хĕрӳ хĕвел хĕлхемĕпе хĕрелсе пиçнĕ скер, татах илемлĕн курăнать. Хура куçĕсемпе малалла çирĕп пăхса, хăюллăн, кашни сăмахне виççе-хакласа калаçать.

- Шанчăксăр пурăнакан çын тымарсăр йывăç пекех, малашнехи ĕмĕте çирĕп шанса ĕçлемелле пирĕн. Бригада мĕншĕн çуллен пысăк тухăç илет тетĕр эсир. Çĕр-шыв пулăшнине туйса, ыранхи куна витĕр курса, хастарлăха ӳстерсе пыраççĕ пирĕн колхозниксем. Çавăнпа ĕçĕмĕрсем ăнса пыраççĕ. Ман шутпа, çĕр калăпăшне пысăклатса пыма çук. Гектар тухăçне ӳстерме вара пурин те майсем çителĕклех. Вуннăмĕш пилĕкçуллăхăн иккĕмĕш çулĕ те пирĕншĕн пысăк тухăç илнипе палăрса тăмалла.

Тимлĕ итлеççĕ ăна залра ларакансем, кашни сăмахне сиктермесĕр итлеççĕ...

КПСС Канаш райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Мария Зиновьевăна хулпуççи урлă хĕрлĕ хăмач хăю çакса ярать. 1976 çулхи çитĕнӳсемшĕн ăна «Районти чи пысăк тухăçлă ял хуçалăх культурисен ăсти» ятне панă. Çапла, ĕçчен çынна ял сават. Саккăрмĕш пилĕкçуллăхри ӳсĕмсемшĕн Совет правительстви ăна Ленин орденĕ парса наградăланă. Тăххăрмĕш пилĕкçуллăхра ăна иккĕмĕш хут Ленин орденĕ парса чысланă. Вĕсемпе юнашар «Ĕçри хастарлăхшăн» медаль çиçет. Пĕтĕм Союзри Халăх хуçалăх çитĕнĕвĕсене кăтартакан выставка медалĕсем пур.

Райком секретарĕ КПСС райкомĕпе райсовет ĕçтăвкомĕн саламлă çырăвне вуласа парать. Ăна, Мария Зиновьевна Зиновьевăна, Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртура чаплă çитĕнӳсем тунăшăн, 1976 çулта тĕш тырă тата ытти ял хуçалăх культурисем туса илессине, вĕсене государствăна сутассине ӳстерес тĕлĕшпе плансемпе обязательствăсене пурнăçлас ĕçре паттăрлăх кăтартнăшăн çĕнĕ çул умĕн Совет правительстви виççĕмĕш хут Ленин орденĕпе наградăланă,

Социализмла Ĕç Геройĕн ятне пама йышăннă.

- Пирĕншĕн, çĕр ĕçченĕсемшĕн, ырми-канми тăрăшнăшăн, ĕçĕмĕре çакăн пек пысăка хурса хакланăшăн партипе правительствăна чĕререн тав тăватăп, малашне татах тăрăшса ĕçлеме сăмах паратăп, - çак сăмахсене хумханса калать Мария Зиновьевна.

Районти слетран килне кая юлса таврăнать вăл. Вуннăмĕш пилĕкçуллăхра паттăрлăх кăтартнă колхозниксен ячĕсене, вĕсен çитĕнĕвĕсем çинчен хăй пуçарнипе çырма тытăннă колхоз историйĕн кĕнекине çырса хурĕ вăл. Колхозниксене Аслă Отечественнăй вăрçăран таврăнайман Вăрăмпуçĕнчи 159 çын ятне ĕмĕр-ĕмĕр упрама, мирлĕ ĕçре малашне те кĕрешĕве вăйлатма кирли çинчен каласа ăнлантарĕ.

Килĕнче икĕ ывăлĕ - Володьăпа Руслан кĕтсе илĕç. Асли, Мишша ял хуçалăх институтĕнче агрономи факультетĕнче вĕренет. Ира - бухгалтер пулма хатĕрленет. Лайăх смена çитĕнет.

Вăрмантан тухсан тăван ял курăнса кайрĕ. Тӳпере çăлтăрсем ялкăшаççĕ. Умра çăлтăрлă çул выртать».

**М.З. Зиновьева çуллен çырса пынă дневникран:**

«1977 çулхи январьте штатлă работниксем хушшинче улшăнусем çук. Июньтенпе инженерта Н.И.Никонов ĕçлеме пуçларĕ.

Октябрĕн 15-мĕшĕччен агрономра А.А.Евлампьев шутланса тăчĕ. Хăй ирĕкĕпе ĕçлеме пăрахрĕ, начар ĕçлерĕ, тырă акнă чухне нормине те лартса памарĕ, кăшман акнă çĕре те тухса курмарĕ.

Колхоз 1977 çулта кашни гектартан 30 центнер тĕш тырă, 204 центнер çĕр улми, 744 центнер выльăх кăшманĕ туса илчĕ, 1-мĕш бригадăра тырă тухăçĕ 32,3 центнер пулчĕ, ампар виçипе - 29,3 центнер; çĕр улми гектар пуçне 215 центнер илтĕмĕр, выльăх кăшманĕн тухăçĕ 814 центнер пулчĕ. Пирĕн бригадăра «луч» урпа 66 гектартан 42-шер центнер тухрĕ, «московская» çухи тулă (35 гектар çинчен) 50,3 центнер тухрĕ...

100 гектар ҫӗр пуҫне 139,1 центнер аш-какай туса илнӗ, сӗт - 389 центнер, ҫӑм - 83 килограмм...

Пӗршенерти клуба ноябрӗн 7-мӗшӗнче хута янӑ. Минераллӑ удобренисем хума складӑн кӑшкарне тунӑ. Чӑх вити пуҫне тӑсса сысна вити тума пуҫланӑ. Йӗтемре тырӑ типӗтмелли сушилка ӗҫе кӗртнӗ.

Колхоз «Молоковоз», «ДТ-75» бульдозер, «Нива» комбайн туяннӑ.

1976 ҫулхи кӑтартусемшӗн ВДНХ парнисене Анна Сынукова, Пелагея Владимирова, Мария Матвеева, Мария Зиновьева илме тивӗҫ пулчӗҫ.

1977 ҫулхи ҫитӗнӳсемшӗн Мария Зиновьевӑна, Иван Павлова, Мария Александровӑна «Победитель социалистического соревнования» знак пачӗҫ...

1978 ҫулта Чӑваш кӗнеке издательстви «Ҫӗре юратсан» кӗнеке пичетлесе кӑларать. Унта М.З.Зиновьева колхозниксем хушшинче воспитани ӗҫне лайӑхлатнине тата вӗсен ӗҫри активлӑхне ӳстернине пула вӑл ертсе пыракан бригада ҫулсеренех пысӑк тухӑҫлӑ тырпул, ҫӗр улми, выльӑх кӑшманӗ туса илни ҫинчен каласа панӑ. Кӗнекене ҫырма автора Леонтий Алексеев журналист пулӑшнӑ.

**КПСС Канаш райкомӗн пӗрремӗш секретарӗ Е.В. Роштов ҫырнӑ ум сӑмахран:**

«...Аслӑ Октябрь 60 ҫул тултарнӑ ҫулталӑкра районти хуҫалӑхсем вӑйлӑ тыр-пулшӑн уйрӑмах хастар кӗрешрӗҫ. Район кашни гектартан 24,7 центнер тӗш тырӑ, 130 центнер ҫӗр улми, 422 центнер тымар ҫимӗҫ туса илчӗ. «Цивиль» колхоз гектар тухӑҫне 36,6 центнера, «Канаш» колхоз - 34,3 центнера ҫитерчӗҫ. Пысӑк тухӑҫлӑ тыр-пул туса илнӗ бригадӑсемпе звеносен хисепӗ ҫуллен нумайланса пырать. Ҫакӑ ҫитӗнӳ вӑл ӑста та пултаруллӑ кадрсем ҫӗршеррӗн ӳссе ҫитӗннипе пулчӗ. «Путь Ленина» колхозри бригадир, Социализмла Ӗҫ Геройӗ, Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн депутачӗ Мария Зиновьевна Зиновьева коммунист шӑпах ӗнтӗ ҫавӑн пек пуҫарулла ҫынсенчен пӗри шутланать. Вӑл районти чи кая юлса пыракан бригадӑна чун-чӗре хӗлхемӗпе, кӑмӑл

туртăмĕпе ертсе пыма тытăннă. Ун чухне ку тăрăхри çĕрсем гектартан çичĕ-сакăр центнертан ытла тухăç парайман. Ял хуçалăх специалисчĕ пулнă май, Мария Зиновьевна, хăйĕн пĕтĕм ăсталăхне парса, тăпра пулăхне лайăхлатма тăрăшрĕ, колхозниксен вăй-халне çирĕп шанса тăчĕ, вĕсене çĕнĕ ӳсĕмсем тума куллен хавхалантарса пычĕ.

Бригада ĕçченĕсем халĕ, кирек епле çанталăк пулсан та, нихăш çул та гектартан вăтăр центнертан кая мар тырă туса илеççĕ. 1977 çулта кунта кашни гектар вăтăр çичĕ центнер тухăç панă, çĕр улми те, тымар çимĕç те çуллен ăнса пулаççĕ. Çак бригадăн паха тĕслĕхĕпе усă курса, ытти бригадăсем те тыр-пул тухăçне ӳстерсех пыраççĕ. «Путь Ленина» колхоз 1977 çулта кашни гектартан 30,1 центнер тĕш тырă пухса илчĕ, унчченхи çулсенче те тухăç унран кая пулман. Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртура çĕнтернĕшĕн хуçалăха КПСС Центральнăй Комитечĕпе СССР Министрсен Совечĕн, ВЦПСăн тата ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕпе наградăланă.

М.З.Зиновьева бригади районти ытти бригадăсемшĕн малта пыракан опыта вĕренмелли шкулĕ пулса тăчĕ. Кунта çĕнĕ сортсем акса çитĕнтереççĕ, ытти хуçалăхсене паха вăрлăх параççĕ. Çапла майпа Московская-35 çурхи тулă, Луч урпа, Гатчинский çĕрулми вăрлăхĕсем мĕнпур колхозсемпе совхозсене саланчĕç. Мария Зиновьевна малта пыракансен опычĕпе тата наука çитĕнĕвĕсемпе усă курать, çĕннине пурнăçа кĕртме тăрăшать.

«Путь Ленина» колхозра ял хуçалăх специалисчĕсем, уй-хир бригадисен бригадирĕсем час-часах пулаççĕ, кунти паха опытпа паллашаççĕ. Хастар бригадир хăй те ытти хуçалăхсене час-часах тухса çӳрет, хăйĕн ĕçри ӳсĕмĕсем, вĕсене епле майпа туни çинчен пĕр пытармасăр каласа парать. Ростов облаçĕнчи парторганизаци пуçарăвĕпе хавхаланса, вăл кӳршĕри «Восток» колхозри А.М.Максимов бригадине шефа илчĕ, хăйсен хуçалăхĕнчи унччен юлса пынă Пĕршенер бригадине пĕрлештерчĕ. «Юнашар юлса пыракан ан пултăр» девизпа иртекен кĕрешĕве куллен

вăйлатассишĕн тăрăшать. Ставрополь крайĕнчи Ипатово районĕнчи комплексла паха меслетпе пирĕн районта М.З.Зиновьева ертсе пыракан бригада чи малтан усă курма пуçларĕ.

Кунсăр пуçне Мария Зиновьевна обществăлла ĕçе те активлă хутшăнать. Вăл ялти хĕрарăмсен совечĕн председателĕ. Суйлавçăсем ăна икĕ хутчен Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ пулма суйларĕç. Ĕçри паттăрлăхшăн ăна Совет правительстви виçĕ хутчен Ленин орденĕпе наградăланă, Социализмла Ĕç Геройĕ ятне панă».

**М.З.Зиновьева çырнă «Çĕре юратсан» кĕнекери (Чăваш кĕнеке издательстви, Шупашкар, 1978) «Хаклă пуянлăх» сыпăкран (6-8 стр):**

«...Эпĕ çирĕм çичĕ çул бригадирта ĕçлетĕп. Тăвата ача амăшĕ. Каламасăрах паллă, ача амăшĕн, бригадирăн вăхăт сахал. Пурнăç лайăхланса пыни, малашлăх тата чаплăрах пуласси вăй парса тăрать мана. Ялти халăх тата пысăк ĕç шанса пачĕ: иккĕмĕш хут ĕнтĕ Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ пулма суйларĕç. Пысăк чыс ку. Пысăк шанăç. Ĕмĕтленме пултарнă-и-ха ĕлĕкхи чăваш хĕрарăмĕ кун пеккине? Çынсен шанăçне тивĕçтерес тесе, обществăлла ĕçе те хутшăнма тăрăшатăп. Ялти хĕрарăмсен совечĕн председателĕ, «Пĕлӳ» обществин пуçламăш организацийĕн членĕ.

Партипе правительство бригадирсен пуçарулăхне ӳстерсе пырасси çине çав тери тимлĕ пăхаççĕ. Çакă тĕрĕссине КПСС Центральнăй Комитечĕпе СССР Министрсен Совечĕ «Ял хуçалăх специалисчĕсене колхозсемпе совхозсенче уйрăмсен, бригадăсен, фермăсен тата производствăн вăтам сыпăкри ытти подразделенийĕсен руководителĕсем пулса ĕçлеме куçма хавхалантармалли çĕнĕ мерăсем çинчен» 1977 çулта йышăннă постановлени те яр уççăн çирĕплетсе парать. Ку чухнехи ял хуçалăхĕ индустри никĕсĕ çинче аталанса пынă май, бригадăра шăпах ĕнтĕ пысăк пĕлӳ илнĕ специалистăн руководитель пулмалла. Унăн малта пыракансен опытне, наука çитĕнĕвĕсене лайăх

пĕлмелле, вĕсене колхозниксем хушшине анлăн сармалла. Çавăнпа агроном специальноçне илни хамăн ĕçре питех те кирлĕ пулчĕ тесе шутлатăп.

Эпĕ çапла ăнланатăп: бригадир вăл халăха чи çывăх çын. Вăйлă тыр-пул çитĕнтерессипе, чи малтан, унăн пуçарулăхĕпе пултарулăхĕнчен килет. Вăл тырăшăн пыракан кĕрешӳре малти ретре тăма тивĕç. Шутлăр-ха, никам та мар, шăпах бригадир уй-хир ăстисемпе ялан юнашар.

Ас тăватăп-ха, 1973 çулта республикăри малта пыракан бригадирсен ушкăнĕ КПСС обкомне пухăннăччĕ. Вĕсем унта хăйсен опычĕ, шухăш-кăмăлĕпе ĕмĕчĕсем çинчен питех те витĕмлĕ каласа пачĕç. Кашнин канашĕ, çитĕнĕвĕ тата асăрхаттарса калани пирĕншĕн питех те усăллă пулчĕ. Малта пыракан бригадирсем колхозниксемпе совхозсенчи рабочисем хушшинче, бригадăсемпе звеносенче кашни гектартан 150-200 пăт тĕш тырă, 200 центнер çĕр улмипе пахча çимĕç, 500 центнер выльăх апачлĕх культурăсем туса илессишĕн социализмла ăмăртăва анлăрах сарса яма чĕнсе каларĕç. Унтанпа вăхăт нумаях иртмерĕ темелле. «Икçĕрсен» тата «пилĕкçĕрсен» юхăмĕ республикăра чăннипех массăллă юхăм пулса тăчĕ. Тыр-пул тухăçĕ тĕлĕшпе палăртса хунă шайсене çитесси пирĕн кулленхи ĕçре тĕп вырăн йышăнчĕ. Тухăçа ик çĕр пăтран иртнерĕ бригадăсен йышĕ çултан-çул хушăнса пырать.

Пирĕн коллектив тăрăшулăхĕ те тăван çĕр вăй-хăватне темиçе хут ӳстерме май пачĕ. Халĕ ĕнтĕ пирĕншĕн гектартан вăтăр-вăтăр ултă центнер тĕш тырă туса илни те çителĕксĕр. Пысăкрах тухăçшăн кĕрешмелле тетпĕр. Вуннăмĕш пилĕк çуллăхра тата кăткăс та ответлă задачăсем тăнине ялан асра тытатпăр. КПСС Центральнăй Комитечĕн 1977 çулхи декабрьти Пленумĕ çакна палăртрĕ: паян - ĕнерхинчен, ыран паянхинчен лайăхрах ĕçлемелле. Хальхи лозунг çакăн пек. Лайăхрах тени вăл - пахалăхшăн, эффективлăхшăн, ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн пуринчен те ытларах тăрăшмаллине пĕлтерет. Шăпах çакăнта социализмла обязательствăсен, çавăн пекех пирĕн пĕтĕм хуçалăх ĕçĕн никĕсĕ.

Пирĕн колхозниксем çапла шантарса калаççĕ: малашне тата тухăçлăрах ĕçлĕпĕр, вуннăмĕш пилĕкçуллăх планĕсене чыслă пурнăçлăпăр».

**М.З.Зиновьева çырса пынисем патне тавăнар-ха:**

**1978 çул.** Кăçалхи хĕл сивĕ 45 градуса çитрĕ, кун пек сивĕ пулнине ватă çынсем те ас тумаççĕ. Февралĕн 10-мĕшĕнче кӳршĕри «Гвардеец» колхозпа пĕрлештерчĕç. Пухура КПСС Канаш райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Е.В.Роштов, райсовет ĕç тăвкомĕн председателĕ А.С.Василевский, районти ветеринари станцийĕн тĕп врачĕ Р.А.Огурцов юлташсем пулчĕç.

Колхоз правленийĕн председателĕ пулма В.Н.Платонова суйланă. Главнăй бухгалтер В.Ф.Захаров, главнăй инженер Н.И.Никонов, главнăй экономист В.А.Афанасьев, главнăй агроном А.С.Шемякин, главнăй зоотехник В.В.Зайков, колхоз председателĕн культура енĕпе ĕçлекен заместителĕ А.И.Гуркин, хуçалăх енĕпе ĕçлекен заместителĕ Г.Васильев, Вăрăмпуç участокĕн начальникне М.З.Зиновьевăна лартнă, помощниксем М.В.Платоновпа А.Д.Демьянов. Вăтапуç участокĕн начальникĕ П.С.Михайлов, помощникĕсем Е.А.Сергеев, В.П.Степанов, И.Г.Григорьев.

1978 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕччен профком председателĕнче А.Н.Трофимова ĕçлерĕ. Трактор бригадин бригадирĕсем В.Е.Степанов тата П.М.Цапин...

1978 çулта колхозĕпе тырă 18,8 центнер, çĕр улми 105,4, выльăх кăшманĕ 532,7 центнер туса илнĕ. 1-мĕш участокра (Вăрăмпуçпе Пĕршенер) гектар пуçне тĕш тырă тухăçĕ 23,8, çĕр улми - 113, кăшман - 909 (Вăрăмпуçĕнче 1087 центнер) тухнă.

«Победитель социалистического соревнования» знаксене çаксем тивĕçнĕ: Ксения Лукина, Галина Краснова дояркăсем, Анна Шемякина, Елена Куликова, Валентина Гурьева сысна пăхакансем, Таисия Дмитриева, Мария Тихонова сурăх пăхакансем, Иван Павлов тракторист, Василий Чернов, Георгий Фомин комбайнерсем, Василий Нямуков, Владимир Михайлов шоферсем, Агния Краснова, Александра Матвеева колхозницăсем, Владимир Зайков, Николай

Афанасьев, Мария Зиновьева.

1978 çулта çак техникăна туяннă: «самосвал», ДТ-75 трактор, МТЗ-80 трактор, экскаватор, «УАЗ» автомашина, Канашри электропогрузчик заводран 5 автомашина.

1978 çулхи мартăн 5-мĕшĕнче 50 çул тултартăм, çав ятпа мана Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн Хисеп грамотипе наградăларĕç.

**1979 çул.** Мартăн 1-мĕшĕнчен главнăй инженерта Ю.И.Мардарьев ĕçлет. 1-мĕш комплекслă бригадăна февральтен М.З.Зиновьева, 2-мĕшне - А.Д.Демьянов, 3-мĕшне - П.С.Михайлов, 4-мĕшне И.Григорьев ертсе пыма пуçланă.

1979 çулта туяннă: «Бензовоз», икĕ комбайн, МТЗ-50 трактор, груз турттармалли автомашина.

Çĕнĕ çул умĕн çанталăк сивĕтсе пăрахрĕ. 1978 çулхи декабрĕн юлашки кунĕсенче сивĕ 45 градуса çитрĕ. Çуркунне вара час килмерĕ. Мартăн 25-мĕшĕнче кăна юр шывланса юхма пуçларĕ, ăшă кунсем апрелĕн 18-мĕшĕчченех пулмарĕç. Апрелĕн 18,19,20-мĕшĕсенче каллех ир-каç сивĕ 10-11 градус таран анса ларчĕ. 20-мĕшĕнче çил-тăман ним курăнми туллашрĕ. Юр уйра нумай.

1978 çулта Вăрăмпуç участокĕнче пĕрмай çумăр çунă пирки кĕрхи çĕртмене мĕнпурĕ те 40 гектар çеç тунă. Тырă кĕске ӳснипе, çумăра кайнипе çавасемпе çеç çулнă та декабрьте авăн çапма тиврĕ. 5-6 гектар çинче урпа çаплипех çапмасăр купара юлнă. Мĕнле пулĕ-ши çур аки? Вăл вара паллă мар...

...Майăн 8-мĕшĕнче ыраш калчисене сӳреленĕ, удобренисем сапнă. Çавăн пекех люцернăна та удобренисем панă. Кăшман анине сухаланă, сӳреленĕ, 11-мĕшĕнче акнă, 14-мĕшĕнче сĕлĕ акнă. Майăн 21-мĕшĕнче çеç акса пĕтернĕ. Çумăр çуман пирки тырпул япăх шăтса тухрĕ. Çумăрсăр тăнипе çĕр улми сахал тĕвĕленчĕ, шучĕ сахалшăн тухăç та япăх. Кăшман та сайра шăтрĕ, кайран шăтнисем вара вĕтĕ, чи малтан шăтнисем кăна шултра. ...1-мĕш бригадăри тухăç çакăн пек: тĕш тырă гектар пуçне 15,7 центнер, çĕр улми - 147, выльăх кăшманĕ - 453 центнер...

1979 çулта И.П.Павлов тракториста «Хура мар тăпраллă зонăра хастар ĕçленĕшĕн» медальпе наградăланă...

**«1980 çул.** Штатри работниксем çавсемех. 1-мĕш бригада бригадирĕн помощникĕ М.В.Платонов мартăн 26-мĕшĕнчен участокри агронома куçрĕ...

Анатолий Иванов механик апрелĕн 1-мĕшĕчченех ĕçре шутланнă, 10 кун командировкăра çӳренĕ хыççăн вăрттăн тухса кайнă. Главнăй экономист В.А.Афанасьев ĕç кĕнеки çине штамп çапса парса янă...

Апрелĕн 2-мĕшĕнчи пухура «Тава тивĕçлĕ колхозница» ята Пелагея Владимировăна, Мария Матвеевăна, Агния Красновăна панă.

Апрелĕн 21-мĕшĕнчен бригадир помощникĕнче Елена Максимовна Степанова ĕçлеме пуçларĕ.

Октябрĕн 17-мĕшĕнче клубра колхозри коммунистсен уçă пухăвĕ пулса иртрĕ. А.Шемякин, Н.Иванов, И.Леонтьев, В.Павлова, М.Степанова колхоз председателĕн В.Н.Платоновăн ятне суя фактсемпе вараласшăн хытă кăшкăраççĕ...

Декабрĕн 12-мĕшĕнче колхозри уполномоченнăйсен отчетпа суйлав пухăвĕ пулса иртрĕ. В.Н.Платонов колхоз председателĕнчен тухма заявлени парать, уполномоченнăйсем килĕшеççĕ. Ун вырăнне КПСС Канаш райкомĕн инструкторĕнче ĕçленĕ Владимир Иванович Иванова суйланă.

1980 çулхи март уйăхĕнче «Ĕç ветеранĕ» медаль илнисем: Ольга Иванова, Екатерина Яскова, Пелагея Моисеева, Валентина Васильева, Иван Никифоров, Петр Степанов, Ольга Русакова, Пелагея Тымарова, Мария Иванова, Анастасия Захарова, Анна Иванова, Анастасия Руссакова,Наталия Степанова, Евдокия Никифирова, Анна Порфирьева, Татьяна Демьянова.

1980 çулта 1-мĕш бригадăра кашни гектартан тĕш тырăсен тухăçĕ 21,5 центнер пулнă, çĕр улми - 181, выльăх кăшманĕ 556 центнер илнĕ, кукурузăн симĕс масси гектар пуçне 360 центнер тухнă...»

**«1981 çул.** Январĕн 6-мĕшĕнче бригадăра колхозниксен

пухăвĕ пулса иртрĕ. Урасем питĕ ыратнипе ĕçрен кăларма заявлени патăм. Пухура 30 çын хирĕç пулчĕç. 56 кăларма килĕшеççĕ. Бригадира Манефа Степановна Осиповăна лартаççĕ, кайран унăн помощникĕ пулма Римма Ивановна Арсентьевăна илеççĕ.

Февралĕн 19-мĕшĕнче отчетпа суйлав пухăвĕ пулать. Главнăй экономист пулма Иван Антонова суйлаççĕ, правлени членĕсем те улшăнаççĕ. Ревизи комиссийĕн председателĕ пулма В.А.Афанасьева суйлаççĕ.

Октябрĕн 5-мĕшĕнче 140 вырăнлă ача садне туса пĕтерсе хута янă. 55 ачана йышăннă... ЗИЛ-157 автомашина туяннă.

Декабрĕн 25-мĕшĕ. Уполномоченнăйсен пухăвĕнче Н.Иванов, В.Е.Степанов, И.Леонтьев Александр Демьянова, Мария Зиновьевăна «Тава тивĕçлĕ колхозникран» кăларас тесе ыйту лартрĕç. Уполномоченнăйсем сахал пуçтараннă, вĕсем те пурте алă тăратмарĕç. Правлени членĕнчен З.Лозинана тата А.Демьянова кăларса Анна Сынуковăна, Анатолий Гуркина суйланă.

**...1982 çулхи** февралĕн 12-мĕшĕ. Уполномоченнăйсен пухăвĕ пулаймарĕ. Кун йĕркине вăтапуçсем уйрăлас ыйтăва кĕртесшĕн пулчĕç. Анчах та Е.В.Роштов килĕшмерĕ, вара вăтапуçсем тухса кайрĕç.

Мартăн 10-мĕшĕнче сессире депутатсем Вăтапуçĕнчи ял Совет ĕçтăвкомĕн председательне Нина Шемякинăна ĕçрен хăтарнă...

1-мĕш бригада бригадирĕ В.Ваков, помощникĕ Р.Арсентьева, 2-мĕш бригада бригадирĕ А.Трофимова, помощникĕ А.Егоров, 3-мĕш бригадăна П.Михайлов ертсе пырать...

**1983 çул.** Колхозĕпе кашни гектартан 24,6 центнер тĕш тырă илнĕ, çĕр улми 124 центнер, выльăх кăшманĕ - 503 центнер. Вăрăмпуçĕнче сысна витине туса пĕтерсе хута янă. Профком председателĕнче Василий Егорович Степанов ĕçлет... Колхоз ĕçне 182 кун тухрăм.

**1984 çул.** Мартăн 20-мĕшĕ. Колхозри отчетпа суйлав

пухăвĕ. Унта КПСС Канаш райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ В.М.Соловьев тата райсовет ĕçтăвкомĕн председателĕ А.С.Василевский хутшăнчĕç. Владимир Гаврилович Иванов колхоза вăтапуçсенчен уйрăлас ыйтăва кун йĕркине кĕртме ыйтрĕ. Ку ыйтăва лартма килĕшмерĕç те вăтапуçсем пухуран тухса кайрĕç. Президиумран Василий Ваковпа Аркадий Андреев та анса кайрĕç. Çак кун вара 1-мĕш тата 2-мĕш бригадăсен пухăвĕсене ирттерчĕç.

Мартăн 21-мĕшĕ. Пуху иккĕмĕш хут пуçтаранчĕ. Соловьевпа Василевский уйрăличчен тĕплĕн шухăшлама ыйтрĕç, нумайччен калаçрĕç. Профком председателĕ В.Е.Степанов сăмах тухса калама хушсан та пĕр сăмах та чĕнмерĕ. Икĕ пая уйрăлчĕ колхоз. Вăрăмпуç участокĕнчи активистсемпе коммунистсене иккĕмĕш хутри ларусем ирттермелли зала чĕнсе хăпартрĕç. Правлени председательне Н.И.Никонова суйлас тесе палăртрĕç. Çав каçах икĕ ялпа пуху пуçтаранчĕ. Колхоза пăлхатакансем Василий Егоровича правлени председательне суйлас тесе шутланă, аслисем Степановăн аслă пĕлӳ çук, парти обкомĕ ку кандидатурăна çирĕплетмест терĕç. Ун хыççăн Виталий Егорович Степанов кандидатурине тăратсан, парти стажĕ пĕчĕк терĕç те суйлама юраманнине палăртрĕç. Çапла вара колхоз правленийĕн председателĕ пулма Н.И.Никонова суйларĕç...

...Çур аки пĕтсен çумăрсем вăхăтра пулчĕç. Колхозĕ пе тĕш тырă кашни гектартан 28 центнер пухса кĕртнĕ, çĕр улми - 256 центнер, выльăх кăшманĕ - 550 центнер...

Пенсие тухрăм, малтан ăна ĕç стажĕпе тӳлерĕç. Декабрĕн 1-мĕшĕнчен эпĕ Союз пĕлтерĕшлĕ пенсионер, куншăн савăнтăм.

**1985 çул.** Штатри работниксем çавсемех темелле. Главнăй агроном А.И.Гуркин, зоотехник В.В.Зайков, инженер Г.Н.Афанасьев. Январĕн 10-мĕшĕнчен 1-мĕш бригада бригадирĕ Р.И.Арсентьева, 2-мĕш бригада бригадирĕ А.И.Трофимова, профком председателĕ В.Е.Степанов, трактор бригадин бригадирĕ А.Г.Иванов...

Тĕш тырă колхозĕпе кашни гектар пуçне 25,6 центнер

пуçтарса кĕртнĕ, çĕр улми - 133,8 центнер, выльăх кăшманĕ - 716 центнер.

Патшалăха аш-какай сутмалли çулталăкри плана 120 процент, сĕт - 101 процент, çăм - 140 процент, тырă - 102 процент, çĕр улми - 78, пыл - 109 процент пурнăçланă.

**1986 çул.** Штатри работниксем çавсемех. Главнăй агронома А.И.Гуркина çур аки ĕçĕсене япăх irттернĕшĕн июнĕн 17-мĕшĕнче районтан килсе кăларчĕç. 1-мĕш бригада бригадирĕ Р.И.Арсентьева декрета тухсан, Н.А.Арсентьев ĕçлерĕ...

Колхозĕпе тĕш тырă тухăçĕ кашни гектартан 28,3 центнер пулчĕ, çĕр улми - 231, выльăх кăшманĕ - 634 центнер.

100 гектар çĕр пуçне колхозĕпе 126 центнер аш-какай туса илнĕ (районĕпе - 106), сĕт 330 центнер (районĕпе 269), çăм - 58,1 килограмм (районти вăтам кăтарту - 43,3 килограмм).

**1987 çул.** Февралĕн 10-мĕшĕнче колхозри уполномоченнăйсен пухăвĕнче колхоз правленийĕн председателĕ Н.И.Никонов заявлени парса ĕçрен тухать, ун вырăнне районти агропромышленность пĕрлешĕвĕнче ĕçлекен Ананий Иванович Иванова суйласа лартаççĕ. Февралĕн 19-мĕшĕнче колхозра каллех пуху пулчĕ. А.И.Иванов ĕçлеме килĕшменрен колхоз правленийĕн председательне А.И.Гуркина суйларĕç. Майăн 30-мĕшĕччен главнăй бухгалтерта А.Д.Осипова ĕçлерĕ, унтан - В.Ф.Захаров. Главнăй агроном И.С.Добров, зоотехник В.В.Зайков, инженер Г.Н.Афанасьев, выльăх-чĕрлĕх енĕпе ĕçлекен инженер Н.И.Никонов, ăна ял Совет ĕçтăвкомĕн председательне суйласан - В.Е.Степанов...

Колхозĕпе кашни гектартан 31,3 центнер тĕш тырă илнĕ, çĕр улми - 235 центнер, выльăх кăшманĕ - 720 центнер, кукурузăн симĕс масси - 252 центнер. Кашни ĕнерен 2125 килограмм сĕт суса илнĕ... 100 кун колхоза ĕçлеме тухрăм.

**1988 çул.** Штатри работниксем çавсемех. 1-мĕш бригадăн бригадирĕ Р.И.Арсентьева, помощникĕ М.В.Александрова, 2-мĕш бригадăн бригадирĕ А.П.Иванов,

июнĕн 20-мĕшĕнчен строительсен бригадин бригадирĕ В.Н.Платонов, февралĕн 2-мĕшĕнчен профсоюз комитечĕн председателĕ - Н.А.Арсентьев.

Хуçалăх кашни гектартан 24,6 центнер тĕш тырă туса илнĕ, çĕр улми - 169,6 центнер, вырлăх кăшманĕ - 904, кукурузăн симĕс масси - 284 центнер.

100 гектар çĕр пуçне аш-какай 135 центнер, сĕт 441 центнер, çăм 80 килограмм туса илнĕ. Патшалăха сутмалли çулталăкри плана аш-какайпа 101 процент, сĕтпе 105 процент пурнăçланă, çăм сутмалли плана 119 процент тултарнă...

1988 çулхи февралĕн 8-мĕшĕнче Шупашкарти телестудире пултăм, çăкăр çинчен передачăна хутшăнтăм, каласрăм.

**...1989 çул.** Штатри çынсем çавсемех. Ферма заведующийĕнче март уйăхĕччен В.Н.Мардарьев ĕçлерĕ, унтан Н.А.Арсентьев ĕçлеме пуçларĕ. Январĕн 26-мĕшĕнче мана ветерансен совечĕн председательне суйласа лартрĕç.

Кăçал тĕш тырă колхозĕпе кашни гектартан 25,3 центнер, çĕр улми 206, вырлăх кăшманĕ 706, кукурузăн симĕс масси 287 центнер тухрĕ.

..Колхозниксен пысăк ушкăнне «Ĕç ветеранĕ» медаль парса чысларĕç...» Çакăнпа дневник вĕçленет.

**М.З.Зиновьева çырнă «Эпĕ - çĕр çынни» статьяран («Коммунизм ялавĕ» хаçат, 1989 çул, апрелĕн 14-мĕшĕ):**

«Эх, вăхăт. Ытла та хăвăрт иртетĕн. Халь кăна çапçамрăк хĕрччĕ, сисмерĕм те - утмăла çитрĕм. Пурнăç сакки сарлака, тенĕ ваттисем. Чăн та, мĕн кăна курмарăм пулĕ хам ĕмĕрте. Савăнмалли те, хурланмалли те пайтах пулнă.

Çамрăк чухне (вăл вăрçă вăхăтнелле килнĕ) фермăра ĕçленĕ, вăрман каснă... Выçăллă-тутăллă-и, сивĕ-и - пурпĕр аптраман, çутă малашлăха ĕненнĕ. Халĕ те çавах. Хам пурнăçа пĕрре те ÿпкелеместĕп. Чун-чĕрепе çапах çамрăк.

Эпĕ Çĕрпÿ районĕнчи Тĕнсĕр ялĕнче çуралса ÿснĕ. Вăрçă хыççăн Шупашкара ял хуçалăх специалисчĕсене хатĕрлекен шкула вĕренме ячĕç. Виçĕ çул хыççăн кĕçĕн

агроном дипломне пачӗҫ. Вӗреннӗ вӑхӑтра хамӑн пулас мӑшӑрӑмпа тӗл пултӑм. Пӗрлешрӗмӗр, ача ҫуралчӗ. Пӗр ҫулталӑк хамӑр ялта ӗҫленӗ хыҫҫӑн Канаш районӗнчи «Путь Ленина» колхоза килтӗмӗр. Мӑшӑр агронома вырнаҫрӗ, эпӗ малтанлӑха ытти колхозниксемпе пӗрле ӗҫлерӗм, каярахпа уй-хир бригадирне суйларӗҫ.

Малтанхи вӑхӑтра тыр-пул тухӑҫӗ пӗчӗкчӗ, гектартанултшар центнер кӑна тухатчӗ. Ҫине тӑрса ӗҫленине пула 13, унтан 15 центнер илтӗмӗр. Ҫакӑншӑн мана «Ӗҫри хастарлӑхшӑн» медаль пачӗҫ. Малалла тухӑҫа 25,30,36 центнера ҫитертӗмӗр. Ҫӗр улми малтан гектартан 100 центнер кӑна тухатчӗ, халӗ - 300 центнер. Выльӑх кӑшманӗн тухӑҫӗ ӳсрӗ, 600 центнертан кая мар туса илме пуҫларӑмӑр. Каярахпа пин центнер ытла илекен пулчӗ бригада. Питӗ тӑрӑшатчӗҫ хӗрарӑмсем: лайӑх сайралатаҫҫӗ, кӑпкалатаҫҫӗ, вӑрлӑхне хамӑр тӑваттӑмӑр.

Ӳсӗмсем чӑннипех савӑнтаратчӗҫ. Икӗ хутчен Ленин орденне илме тивӗҫ пултӑм, виҫҫӗмӗш хутӗнче Социализмла Ӗҫ Геройӗн ятне пачӗҫ. Ку, паллах, пӗччен тунӑ ӗҫ мар, пӗтӗм бригада тӑрӑшнипе илнӗскер. Трактористсем, ытти бригада членӗсем ун чухне орден-медальсем илчӗҫ. СССР халӑх хуҫалӑх ҫитӗнӗвӗсен выставкинче пӗрре кӑна мар хаклӑ парнесем пачӗҫ.

Халӗ эпӗ - тивӗҫлӗ канура. Апла пулин те, килте ларас килмест, чун-чӗре уй-хире туртӑнать, пултарнӑ таран ӗҫлеме тӑрӑшатӑп. Ҫуллахи вӑхӑтра утӑ ҫулса пуҫтарнӑ ҫӗре тухатӑп та, килте ларма кичем пек туйӑнать. Каннӑ хушӑра пӗрле ӗҫлекенсене ҫӗнӗ хыпарсемпе, интереслӗ статьясемпе паллаштаратӑп.

Обществӑлла ӗҫсем нумай. Вӑрҫӑ тата ӗҫ ветеранӗсен совечӗн председательне суйларӗҫ. Ял Совечӗн депутачӗ пулнӑ май фермӑсенче, уй-хирте, ытти организацисенче тӗрлӗ ыйтусемпе ҫӳреме тивет.

Хӗрарӑмсен советне чылай хушӑ ертсе пытӑм, халӗ те ун ӗҫне активлӑн хутшӑнатӑп. Ашшӗ-амӑшӗсен комитечӗн председателӗ, час-часах шкулта пулатӑп. Тимур командин

ĕçне йĕркелес, ваттисене пулăшассине вăйлатас тĕлĕшпе хĕрарăмсен совечĕпе çыхăнса ĕçлетпĕр.

Çамрăк чухне хор, драма кружокне çӳренĕ, ертсе пынă. Халĕ те юрă-ташăпа туслă-ха.

Хĕрарăмăн чи пирвайхи тивĕçĕ - ачасене йĕркеллĕ пăхса çитĕнтересси, çĕршыва юрăхлă çынсем тăвасси. Мăшăрпа тăвată ача çуратса ӳстертĕмĕр. Виççĕшĕ пирĕн çулпах кайрĕç, çĕр ĕçне кăмăлларĕç, çемьеллĕ. Кĕçĕнни вăтам шкулта вĕренет. Вĕсене мĕн пĕчĕкрен ĕçе хăнăхтарма тăрăшрăмăр. Çулсерен тырпул пухса кĕртнĕ чухне йĕтем çине тырă тасатма каятчĕç. Пĕр сăмахпа, уй-хирте пиçĕхсе çитĕннĕ. Малашне те ята ямĕç тесе шутлатăп.

Кирек мĕнле хĕрарăмăн та чун ыйтнă, килĕштернĕ ĕç пур. Эпĕ вара çыхма юрататăп, кофта-костюм, чăлха-нуски, чĕнтĕр-шăтăкла, юлашки вăхăтра тĕрлĕ çипсемпе эрешлесе килте тăхăнмалли пушмак-тапочки çыхма хăнăхрăм, тăванпĕлĕше сахал мар парнеленĕ, питĕ юратса, килĕштерсе тăхăнса çӳреççĕ.

Эпир çамрăк чух телевизор курма мар, кинона та çӳ реймен. Пĕрре - укçи, тепре - вăхăчĕ пулман. Анне пире: «Январьте çавăн чухлĕ хутăр хутăрламалла, çип арламалла», – тетчĕ. План панă-çке анне. Ĕçлемелле пулнă. Уроксене тунă хыççăн тӳрех ал ĕç тытнă.

Халь мĕн тери савăнăç, алăра йĕпсем выляса кăна тăраççĕ, куç - телевизор çинче. Пурнăç лайăх, пурăнас килет, ĕçлес килет. Мир кăна пултăрччĕ çĕр çинче, тăнăç, канлĕ пурнăç. Ытти пурте пулĕ».

***

Вулакан асăрхарĕ ĕнтĕ, çак пĕчĕк çеç кĕнекен авторĕ тĕрлĕрен документсене, аса илӳсене тĕпе хурса йĕркеленĕ. Нумай тĕрлĕ хаçатсенче çапăнса пынă йышлă заметкăсене, корреспонденцисене, интервьюсене, отчетсене, информацисене, тĕрленчĕксемпе очерксене анлă вырăн панă, вĕсене май килнĕ таран ăнлантарса, комментарилесе пыма тăрăшнă, хронологи йĕркипе калăпланă. Уйрăмах Мария

Зиновьевна ҫуллен ҫырса пынӑ альбомри йӗркесем вырӑнлӑ, кӑсӑклӑ, ҫав тапхӑрти лару-тӑрӑва хӑйне евӗр чӗлхепе тӗплӗн, типтерлӗн, уҫҫӑн, чӗррӗн ҫырса кӑтартнӑ. Ахальтен мар-тӑр халӑхра «талантлӑ ҫын пур ҫӗрте те талантлӑ» теҫҫӗ.

**В. Лапин журналист ҫырнӑ «Ӗҫпе пиҫӗхнӗ ҫын хӑйне шанать» интервью патне таврӑнар-ха («Канаш ен» хаҫат, 2009 ҫул, ноябрӗн 20-мӗшӗ):**

**– Василий Николаевич, сирӗн шутпа хальхи колхоз ӗлӗкхипе танлаштарсан мӗнле пурӑнать?**

- «Путь Ленина» хуҫалӑх юнашарсемпе танлаштарсан йӗркеллӗ тытӑнса тӑрать-ха. Сухаламан ҫӗрсем ҫукпа пӗрех.

Ӗлӗк ферма территорийӗнчи ӗҫсене пӗтӗмпех лашапа тунӑ: шыв, апат турттарнӑ, тислӗк тӑкнӑ. Халӗ лаша та, ӗне те сахал. Александр Николаевич Романов хуҫалӑха аван тытса тӑни савӑнтарать. Ҫӗр улми чылай лартать колхоз - 50 гектар (ӗлӗк 80 га лартаттӑмӑр). Ӑна упрама тӑвата путвал пур. Ӗлӗкхипе танлаштарсан халӗ хуҫалӑхсене тытса тӑма палӑрмаллах йывӑр. Патшалӑхӗ ҫителӗклӗ чухлӗ ҫаврӑнса пӑхманни те ял хуҫалӑхне ура хурать.

**– Мӗнре курӑнать-ха ҫакӑ?**

- Ӗлӗк ҫунтармалли, сӗрмелли хатӗрсем йӳнӗ пулнӑ: пӗр литр сӗтпе 3 литр топливо туянма пулатчӗ. Халӗ тепӗр майлӑ, сӗтӗн хакӗ мӗн таран чакса ларчӗ. Ҫакӑ чӑрмав кӳрет те ӗнтӗ.

Халӗ ҫӗнӗ технологипе усӑ куратпӑр теҫҫӗ те, ман шутпа, ҫӗрсене сухаламаллах. Культиваторпа кӑна сухаласа акни мана пит килӗшсех каймасть. Тӑватӑ ҫулта пӗрре тӑпра пулӑхлӑхне ӳстерме ҫӗре плугпа 35 сантиметр тарӑнӑш сухаласа хӑварнӑ. Ҫак ӗҫе халь туса пӑхсан аван пулмалла пек те. Ҫапла туни ҫум курӑксене пӗтерме кӑна мар, ҫӗр структурине лайӑхлатма кирлӗ тесе ӑнлантаратчӗҫ пире. Тӑм тухмастчӗ, ҫӗр тытӑмӗ лайӑхланса пынӑ. Ҫӗр - тӑрантаракан япала. Хӑй ҫине ҫаврӑнса пӑхмасан вӑл кӳренет, тухӑҫа ҫителӗклӗ таран памасть.

**– Василий Николаевич, машинӑпа трактор паркне**

**ирхине ансассӑн унта мӗн чухлӗ халӑх хӗвӗшетчӗ...**

- Ун чухне механизатор нумай пулнӑ, ӗҫе каясшӑн ҫунса тӑратчӗҫ. Трактористсем аммиак шывне турттарма ҫур ҫӗр иртсен тухса каятчӗҫ. Халь ӗнтӗ ял хуҫалӑхӗнче ӗҫ укҫи пӗчӗккипе лайӑх механизаторсем те ытти облаҫсене, регионсене тухса каяҫҫӗ.

**– Манӑн Мария Зиновьевна Зиновьева ҫинчен те каласа хӑварас килет. Вӑл 1-мӗш бригада бригадирӗнче 20 ҫул ытла ӗҫлерӗ. 1976 ҫулхи декабрь уйӑхӗнче ӑна Социализмла Ӗҫ Геройӗн ятне пачӗҫ. Мария Зиновьевна кунне-ҫӗрне пӑхмасӑр ырми-канми ӗҫлетчӗ. Лаша кӳлсе тӑрантаспа уйсем тӑрӑх ҫӳретчӗ.**



*В.Е. Степанов*



*И.П. Павлов*

- Тӗрӗсех. Ҫын ӗҫлемесӗр нимӗн те пулмасть. Ун чухне икӗ бригада пулнӑ: пӗри - Пӗршенерте, тепри - Вӑрӑмпуҫӗнче. Уйсене пурне те пӑхса ҫӳренӗ, тырпул мӗнле ҫитӗннине сӑнанӑ. Пӗршенерте Александр Демьянович Демьянов нумай ҫул ӗҫлерӗ. Зиновьева ирхине 5 сехетрех колхоз правленине каятчӗ. Колхозниксене кашни кун наряд панӑ, кашни кун пурнӑҫланӑ ӗҫе пӗтӗмлетнӗ. Бригадирсем ҫынсене ӗҫе тухма килтен киле каласа ҫӳренӗ, кайран вырӑнти радиопа пӗлтерме пуҫларӑмӑр. Дисциплинӑна пӑсакан ҫынсен ячӗсене радиопа каласан вӗсем намӑсланатчӗҫ, йӗркене пӑсмастчӗҫ. Колхозниксен хушшинче воспитани ӗҫне те туса пынӑ.

**– Василий Николаевич, эсир**

тăрăшнипе Вăрăмпуç ялне çити автобус çӳреме пуçларĕ.
- Ĕлĕк магазин, клуб, шкул, ача сачĕн çурчĕсене, учительсем валли икĕ хутлă тăватă хваттерлĕ çурта тата ыттисене те колхоз вăйĕпе тунă. Хам председательте ĕçленĕ чухне 2-3 çул хушшинче Йĕпреç сулĕ çинчен Вăтапуç, Вăрăмпуç ялĕсене çити асфальт çул тутарма пултартăм. Ваттисем халĕ те ӳпкелешеççĕ: «Председательте ĕçленĕ чухне хăвăн умна çити асфальт сартараймарăн».

Колхозра ĕçлеме пăрахсан 3-мĕш ДРСУра инженер пулса ĕçленĕ чухне ял варрине çити çул турăмăр, машина-трактор паркĕн территорине асфальт сартăмăр. Ферма патне çити тепĕр 500 метр çула такки туса çитереймерĕм. Ултă çул ĕçлерĕм çак организацире...» Унтан тата тăватă çул В.Н.Платонов тăван колхозра строительсен бригадин бригадирĕнче вăй хунă.

***

**В.Н. Платонов аса илнинчен:**

«Эпĕ председательте ĕçленĕ çулсенче хуçалăхра ырми-канми ĕçлекен çынсем йышлă пулнăран çулран-çул ял хуçалăх продукцийĕсене туса илессине ӳстерсе пыраттămăр. Иван Павлович Павлов тракторист, сăмахран, 40 çул ытла механизаторта вăй хурса хайĕн хыççăн ырă ят хăварчĕ. Ачисем те ашшĕ ĕçне малалла тăсаççĕ.

Пĕршенерти Александр Демьянович Демьянов та ырă ята тивĕçнĕ. 30 çул уй-хир бригадирĕнче тăрăшрĕ «Хисеп Палли» орден кавалерĕ.

Василий Егорович Степанов трактор бригадин бригадирĕ те, ферма заведующийĕ те, ял Совет ĕçтавкĕлмĕн председателĕ те пулчĕ, Ĕç Мухтавĕн III-мĕш степеньлĕ орден илемлетет ун кăкрине.

Анатолий Иванович Гуркина та асăнмасăр иртейместĕп. Бригадирта ĕçлерĕ, унтан ăна «За коммунизм» колхоз председательне суйларĕç, 1965-1972 çулсенче вăл унта тăрăшрĕ, кайран – хуçалăхра колхоз председателĕн культура енĕпе ĕçлекен заместителĕнче. Хыççăн 3 çул хушши колхоза ерт-

се пычĕ. Çав тапхăрта Вăрăм шывĕ урлă кĕпер те, плотина та тутарчĕ, Пĕршенерте 150 ĕне усрамалăх вите хута янă...».

...Урамра шап-шурă юр. «Шурă юрĕ çурĕ, çурĕ, таврана шап-шурă турĕ» йĕркесем тӳрех аса килеççĕ. Йывăçран тунă ултă кĕтеслĕ пӳртре кил хуçипе - Василий Николаевич Платоновпа калаçса ларатпăр. Васкамасăр, шухăша кайса иртнисене аса илет ялти ватă. Тĕлĕнмелле сăпай çын вăл. Ăна пĕр фактран çеç палăртса хăварас килет: районĕпе кăна мар, республикипе те кĕрлесе тăнă «Путь Ленина» колхозра 20 çул ытла ертсе пынă вăхăтра килне валли нимĕн те туман темелле: çак йывăç пӳрте 1958 çулта лартнă, 1968 çулта ун умне тĕксе тунă («хам Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ чухне пит пĕчĕк пӳртре пурăнни ытла та намăсчĕ»).



Г.С. Сергеев



А.И. Гуркин

Теприсем, авă, колхоз председателĕнче, е совхоз директорĕнче, е кооператив пуçлăхĕнче çулталăк ĕçлеççĕ-и, ĕçлемеççĕ-и – хăтлă керменсем хăпартса лартаççĕ.

Хуласенче хваттерсем илеççĕ, çав вăхăтрах хăйсем ертсе пыракан хуçалăхсене малалла аталантарассине сахалтарах çаврăнса пăхаççĕ. Выльăх-чĕрлĕх витисем, хуралтăсем, складсем ашшĕсемпе аслашшĕсем, амăшĕсем вăй парса, тар юхтарса ĕçлесе пухнă пурлăхсем ишĕлсе саланса пыраççĕ, хуçалăхсене панкрута кăларса салатса яраççĕ, çамрăксене ĕç вырăнĕсем туса парас тесе тăрăшмаççĕ. Ирĕксĕрех вĕсен ялтан аяккалла

тухса кайса ĕçлеме тивет. Çемьесене усрамалăх та пулин укçа-тенкĕ тупмалла. «Пирĕн киле колхозран шăрпăк та илсе килмен», – теме юрататчĕ Мария Зиновьевна.

Пӳртри стенасем çинче йĕри-тавра сăн ӳкерчĕксем рамкăсенче çакăнса тăраççĕ. Тахçан мĕнле пулнă - халĕ те çавăн пекех.

Пĕчченех пурăнать ветеран. Юратнă мăшăрĕ Мария Зиновьевна чылай вăхăт чирлесе выртнă хыççăн 1999 çулхи августăн 29-мĕшĕнче вилсе кайнă. Пĕтĕм ял-йыш ăсатнă ăна юлашки çула.

«Авă, унăн вырăнĕ, пурăннă чухнехи пекех ларать. Ираида хĕрĕм уйăхра пĕрре килсе ăна çуса тасатать...» Васкамасăр пуплет кил хуçи.

Вĕсем 4 ача çуратса, ура çине тăратнă - пурте ашшĕ-амăшĕ пекех çĕр-аннемĕре юратса ĕçчен ӳснĕ, пурте вĕсен ĕçĕ-хĕлне малалла тăсаççĕ. Чи асли - Михаил - Чăваш ял хуçалăх институчĕн агрономи факультетне вĕренсе пĕтернĕ. Ираида «Путь Ленина» колхозра бухгалтерта вăй хурать. Владимирпа Руслан Мускаври çĕр йĕркелекен инженерсен институтĕнче вĕренсе диплом илнĕ. Ывăлĕсем те, хĕрĕ пекех, ашшĕ патне килсех тăраççĕ. Василий Николаевич та вĕсем патне хăнана кайсах çӳрет...

*Вăрăмпуç-Канаш-Атнаш*
*2009-2010 çулсем*

**В.П. Прокопьев**

**НОВОУРЮМОВСКИЕ МАСТЕРА ЗЕМЛЕДЕЛИЯ**

Компьютерный набор Р.В. Попова, верстка В.И. Зырянов
Корректор В.С. Лапин

Фото из семейного архива Зиновьевой и Платонова

Подготовлен к печати ТМ «Римис» ИП П.В. Сымкин
428019, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13, оф. 635
Тел. факс (8352) 55-63-43. E-mail: symkin-rg@mail.ru

Подписано в печать 5.04.2011 г. Формат 60x84 1/16. Гарнитура «Ариал»
Бумага мелованная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 6,98.
Тираж 500 экз. Заказ № К-5565.

Отпечатано в ГУП «ИПК «Чувашия»,
428019, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13

35.90

